1-80

Ç. ЕЛКЕР



# ХĔН-ХУР АЙĔНЧЕ

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ ★ 1931

ЕЛКЕР Ç.

# ХӖН-ХУР АЙӖНҪЕ

ИСТОРИЛЛӖ ПОЕМӐ

СССР-ти ХАЛӐХСЕН ТӖП ИСТАТТӖЛСТВИ
МУСКАВ * 1931

Уполн. Главлита № В-2052 Заказ № 1421 Тираж 6.000 э

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая набережная, 10.

# АВТĂРТАН.

Пурнăç васкавлă утăмсемпе малалла йарăнаť. Сотсиалисăм строиттĕлстви çултан çул çĕнĕ çитĕнӳсем, пысăкран пысăк çĕнтерӳсем тăваť. Совет ĕçхалăхĕ, рапођђи класпа унăн парттийĕ пуçарса пынипе, тĕрлĕрен йăвăрлăхсене çĕнтерсе пырса çĕнĕ тĕнђе никĕсне çирĕплетет. Паллах, çакăн пек хĕрӳллĕ саманара поетсемпе писсаттĕлсен те куç умĕнђе пулакан çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем çинђен çутатса пымалла. Хаљхи вăхăтра ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăç çинђен историллĕ поемăсем çырса ларни килĕшмест те пек.—Мĕнле усă кӳме пултарĕ ђăваш литтараттурине хаљхи вăхăтра ĕлĕкхи пурнăç çинђен çырса пани? Пире хаљхи çинђен, тата çитес çутă пурнăç çинђен çырни кирлĕ,—тейĕç хăш-пĕрисем. Ун пирки епĕ çакна калатăп: сотсиалисăмлă пурнăç тунă ђухнехи хĕрӳллĕ тапхăрта та ĕлĕкхи классен кĕрешĕвĕ çинђен пĕлни, пуйансем ђухăнсене йепле тискеррĕн пусмăрласа пурăнни çинђен пĕлсе тăни—пире пĕр усăран пуçне нимĕнле сийен те кӳрес çук. Ĕмĕрсем тăршшĕнђе пурнăç мĕнле улшăннине пĕлес тесен, тата вăл мĕн ђухлĕ малалла кайнине курас тесен, иртнипе хаљхине илсе пахаламалла.

«Хӗн-хур айӗнђе» поемӑна 1923-мӗш çулхинех çырма пуçланӑђђӗ. Ун хыççӑн ӑна пӗр-икӗ тапхӑр та çырма пӑрахса, çулталӑк-çулталӑкӗпе вырттарнисем те пулђӗç. Анђах поемӑн малтанхи сыпӑкӗсем («Сунталра») çапӑнса тухнӑ пирки, тата вулакансенђен нумайӗшӗ ӑна çырса пӗтермех ыйтнӑ пирки, ку поемӑна йулашки çулсенђе те пулин çырса пӗтермеллех килђӗ. Çакӑнпа пӗрлех поемӑн «Сунталра» çапӑннӑ сыпӑкӗсене те ђылай çӗнӗрен тӳрлетсе йакатмалла пулђӗ. Анђах 6—7 çул ӗлӗкрех пуçланӑ поемӑна вӗçленӗ ђух, ӑна пролеттари литтераттурин пайанхи сатађӗсемпе сыхӑнтарса çитерме нийепле те май пулмарӗ.

«Хӗн-хур айӗнђе» поемӑна çырнӑ ђух ваттисем каланипе, çавӑн пекех тата ђӑваш историне çутатаса паракан кӗнекесемпе токкумӗнтсем тӑрӑх та усӑ курнӑ.

Çак поемӑ ђӑваш ӗçхалӑхне ӗлӗкхи пусмӑр йӗркисемпе халђхи ирӗклӗ пурнӑçа пӗр-пӗринпе тавçарса пӑхма май парса, халђхи аслӑ сатађсене вырӑна кӗртме пулӑшӗ, тата ђӑваш историпе интересленекенсем валђи маттериал парӗ тесе шанатӑп.

*Шупашкар.*

*1930 ç. октапӗрӗн 20-мӗшӗ.*

# I. КАНТУР—ЂУНИЛЛИ.

Кушлавăш—текен вуникĕ йал уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртаť;
Çулла йе хĕлле,—такам та туйĕ—
Вăрманлăх кунта хўтлĕхне тытаť.



Кушлавăш текен вуникĕ йалуйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртаť.

Хаваслă çĕршыв! Сывлаť вăл калкал...
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.
Пĕрикĕ ĕмĕр пирĕнтен авал
Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.
Иквиç çĕр çулхи йаштак ват хырсем



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

Кармашнă унта пĕлĕте пăхса,
Кунĕн те çĕрĕн канмасăр вĕсем
Кашланă текех тем канашласа.
Çав ватă хырсем кашланисенђе
Çитес çулсенђи хурлăх сисĕннĕ,
Вĕсен пĕр тимлĕ канашĕсенђе
Çулсем васкаса иртни пĕлĕннĕ.
Çак хырлăхсенђех ушах[1]) мăк шурри
Талккиш-талккишпе выртнă сарăлса.
Луçсем-планĕсем, пурте мĕн пурри,
Çўренĕ унта шурлăха çăрса.
Мăк шурлăх лешйен—ђăрăшлă вĕтлем—
Хвĕел çуттине витĕр ўкермен;
Лапсак, çăмламас, хайар упасем
Ку ђăтлăх ăшне никама кĕртмен.
Унтах, тĕлĕпе, катмар йумансем
Çара çулçăпа шавланă текех.
Çамра[2]) тĕрлĕрен кайăк-кĕшĕксем
Йантратнă йурра кунĕ-çĕрĕпех.
Унта та кунта ахрат[3]) çырмисем
Выртнă пытанса вăрман тĕпĕнђе;
Çут тĕкĕр пекех тăрă шывĕсем
Курăк айсемпе йухнă вĕсенђе.
Йантак[4]) ђăрăшсем вăрман ăшĕнђен
Пăхнă кармашса тĕнђе хĕрнелле,
Таçти, инçетри ђăваш уйсенђен
Курăннă вĕсем ђиркў тăррилле;

1) Ушах—лађака, шурлăх.
2) Çам—çулçăллă вăрман, çамлăх.
3) Ахрат—çапса çурнă пек тарăн çырмана „ахрат çырми" теçç
4) Йантак—йаштака, вăрăм тўрĕ.

Çынна палламан вĕлле хурђĕсем
Сĕрленĕ унта ирĕклĕн вĕçсе,
Вĕт-шак уйсенђи ђăпар ђеђексем
Ђўхеннĕ хуллен вĕсене ђĕнсе.
Çак сĕмлĕх вăрман ђăтлăх варрине
Ђылай ĕмĕрсем çын шăрш те кĕмен.
Катмар йăвăçсем хăйсен ĕмĕрне
— Мĕскер вăл пуртă?—курман та пĕлмен.

Çак сĕм вăрмантан çурçĕр йеннелле
Кушлавăш уйĕ асланнă майпе.
Ĕшнелĕх çĕрте, улт-çиђ тĕлелле,
Ђăваш йалĕсем пуçланнă хуллен.
Инçе, пит инçе, çут кăнтăр йенђе,
Çуталнă Кутей-Пăрађкав уйсем.
Çуллен сарăлан вак-вак уйсенђе
Ĕрђенĕ унта вырăс йалĕсем.

***

Çул хыççăн çулсем васкапă текех,
Хура самансем иртнĕ пĕр пекрех.
Вăрман айĕнђи пĕђĕкçĕ йалсем
Малтан кунçула иртгернĕ пĕртем.
Ак çитрĕ вăхăт—вăрман хумханаť;
Унти вак йалсен тĕнђи улшăнаť...
Ырхан йалсене кашни уйăхрах
Çитеç есрелле кантур таврашсем.
Шăнкравпа, йалан виçшер лашапах,
Йан-йан! йанратса çўреççĕ вĕсем.
Йала пырсанах хурал пўрт умне
Мĕн пур халăха пухаççĕ хуса.
Пуху пухсанах,—пĕл унта камне,—

Пурмис йе тийек хирет кăшкăрса!
— Ђасрах куланай! куланай!.. тесе,
**Нађар халăха** пăваççĕ майран;
Парăмлисене çĕре ўкерсе
Хунав хулăпа касаççĕ йалан.
Хулли пĕтес çук: кĕлти-кĕлтипех
Выртаť çыххипе пуху умĕнђе;
**Хресђен çыннин** ăна курнипех
Сивлек йун сăркаť шăмми-шаккинђе.
Мескер тăвас тен? Тўлесех пулаť:
Кам-ха çийес тет вилĕм патакне?
Çўçенђĕк ђĕри хуйхăпа тулаť:—
Парăма йулсан—сĕвеççĕ тирне!
**Йалти ђухăнсем** усаççĕ пуçа,
Шыраççĕ меслет укçа-тенк тупма.
**Вăрман çĕрĕнђе килмест** мĕн укçа.
Тырри шав пулмасť. **Ăçта тыр сутма?!**
Сутан тырруна—пўлмўне тасат!
Çемйў пĕтме те вара пит ансат.
Мĕн пур пек шанђăк—пĕр аслă вăрман.
Пулаť-ши усси унпа тăрмашсан?..

***

Ак урăх çулсем. Урăх самана.
Авалхи аслă çăра вăрмана
Икĕ йенђен те тулђĕç етемсем,
Ăна йанратма пикенђĕç вĕсем.
Аптранă халăх сахал укçашăн
Ваклаť вăрмана, касаť те касаť.
Çырма тĕпсенђе курăс тăвасшăн
Ђаваť, ђакалаť, пĕвесем тăваť;

Ӳӗрет ӳӗренӳе—хирелле сутма,
Кӑклаҫ тымарсем—нумайрах акма.
Пур пек тавара йӑвӑр асаппа
Шупашкар йенне леҫеҫҫӗ лавпа.

Вӑрманӗ нумай,—ӳармаҫҫӗ касма;
Анӳах, усси ун сахал пурӑнма!
Ӗҫлетӗн кунпе—илен пилӗк пус,—
Ӑҫтан ес унпа тӳсен тӑкакна?

Хӗлӳ ҫывхараҫ, кӗтсех тӑр ак, тус,
Сан пур-и, ҫук-и—пӗлмеҫҫӗ ӑна:
Кантур ӳунилли ҫитет ак хӗсет,
Укҫу пулмасан—тытаҫ те хӗртет!

## II. КУЛАНАЙШĂН.

Пĕрре, çакнашкал, сивĕ кун, хĕлле,
Кĕçĕн Кушлавăш йалĕ варнелле
Кантур тавращĕ çитет ыткăнса,
Хурал пӳрт умне пухаť халăха.
Хура хурал пӳрђ. Ăш-ђикĕ киђем:
Тарпа, сĕрĕмпе сăрланнă çтена.
Ик йенђен пĕрер пĕђĕк кантăксем
Кăшт вăйсăр çутă кĕртеççĕ ăна...
Умри тĕпелте, тур кĕтессинђе,
Лараť тăлăххăн лутака сĕтел.
Пĕђĕк кантăкран çак сĕтел питне
Сап-саррăн пăхса çутатаť хĕвел.

***

Çитрĕç кантуртан пурмиспа тийек,
Килђĕç тийесе йал тулли инкек;
Иккĕш те вĕсем калăпсăр мăнтăр,
Пиђĕ-куçĕсем шыçмак та, сăнсăр.
Хыттăн машлатса, хайаррăн пăхса,
Лараççĕ вĕсем сĕтел хушшине.
Умри **мушиксем** шикленсе тăрса
Пуçа пĕшкĕртсе пăхаç урайне.
Пӳртри халăх шăп! вилнĕ пек тăраť.
Паллах, ырра мар, ун ђунĕ хăраť.



— Епӗр çитрӗмӗр—пӗлӗр хӑвӑрах.
Ҫасрах куланай! Куланай тавай!

Ак сас илтӗнет, пуху хускалаҭ.
Хӑравҫӑ ҫынсен ђӗри кускалаҭ.
Тийек машлатса мӑн кӗнекине
Ҫӗклет йерипен, уҫаҭ листине.
Сив куҫлӑ пурмис сулаҭ алӑпа,
Пуҫлаҭ сӑмахне хулӑм сасӑпа:
— Епир ҫитрӗмӗр—пӗлӗр хӑвӑрах,
Ђасрах куланай!... Куланай тавай!
Пӗрре анђах мар, кашни уйӑхрах
Сире кун ҫинђен калатпӑр нумай.
Саккун хушнине парса татмасан,
Питех те йӑвӑр сире пайантан!
Кам пайан памасҭ—текех каҫармасп.
**Мӑн парӑмлисене ђӗррӗн хӑвармасп.**
Кам путсӗр-кахал,—куланай памасҭ;
Ҫампа ун пеккин пуҫӗ те йулмасҭ.
Ун пек кахала хаљ ӳкермелле,
Хулпа хӗмлесе тирне сӳмелле!..
Пурмис сӑмахӗ халӑх хӑлхине
Вут-хӗм пек вӗрин кӗрет пӗҫертсе.
Шикленнӗ **хресђен** хыҫаҭ ӗнсине,
Унӑн пит-куҫӗ ҫунаҭ ӗнӗхсе.
Тийек пикенет йат тӑрӑх ђӗнме,
Пурмис пурне те хӑтӑрса хӗсме.
Хӑравҫӑ мушик, йађӗ тухсанах,
Сикет—йалт! тухаҭ сӗтел патнелле,
Тӳлет парӑмне укҫи пулсанах.
Тӑраҭ пашкаса хӑранипеле.
Тӗрӗслерӗҫ йат—камӑн пур пађӗҫ.
Кам-кам параймасҭ—тытса хӑварђӗҫ.

Пурмис, ак, пухха тула кӑларать,
Тыткӑнрисене ҫаптарма хушать.

***

Хӗрӳсӗр хӗвел аран ҫутатса,
Анать васкаса кӑнтӑр тӳпинчен.
Хайар сивӗ ҫил кас-кас вашлатса,
Килет ҫурҫӗрти тӗнче хӗрринчен.
Хурал ум тӑрать шӑппӑн хумханса.
Унтах, халӑхран патах уйрӑлса,
Тӑраҫҫӗ сӗнксе ҫич-сакӑр мушик...
Пурмиспе тийек, унтах ак сутник,
Васкаҫҫӗ хӗрсех ӳт-тире сӳме,—
Тимлеҫҫӗ вӗсем теҫетниксене.
Ак ӳкрӗ пырса кӗлтипе хулӑ—
(Шӑшийе макру—кушакка кулӑ!).
Ак **ват Итапай** выртать чӑсӑлса.
Тийек хӑй ӑна антарчӗ пусса.
Шыҫмак тийеккин аллисем паттӑр,
Ӳркенмест мӗн вӑл—пит ҫӑттӑр-ҫаттӑр:
Ёҫне тума та пуҫлать вӑл хӑйех,
Кама ёнтме те куҫлать чиперех:
Тӑраччӗҫ унта икӗ теҫетник,
Тийек вӗсене малтан тивретет.
— Маттур пул!.. часрах! вӑрт-варт!.. — тет
сутник.
Тийекӗ хӗмлет, сутникӗ тимлет.

***

Вырать йур ҫинче кӑвак Итапай,
Ун шывлӑ куҫсем сикеҫҫӗ пӗрмай.
Хӗрӳ тийеккин аллисем вӗри,

Патшашăн çунаҭ ун вăйлă ђĕри.
Пурмис мĕкĕрет: «Çапăр аллă рас!»
Кайаҭ йанраса аслати пек сас.
Ак, ик теçетник, вăр-вар васкаса
Итапай тумне илеççĕ хывса;
Хура сăкманне сарђĕç хăй айне,
Ўпне вырттарса антарђĕç йĕмне.
Шăп пилĕк таран кĕпине сирсе
Параççĕ паллă:—ан сиклен!.. тесе.
Ырхан Итапай, ватă пуçĕпе,
Выртаҭ ђĕтресе пĕтĕм пĕвĕпе.
Тискер ђунилли пуçларĕ ĕçне—
Касма пикенет Итапай ўтне.
Касаҭ те касаҭ, суса та пыраҭ;
Ырса çитет те—йулташне хушаҭ.
Итапай пиђђи, тўсеймен пирки,
Ађа сассипе йараҭ çухăрса.
(Çаплаçке ĕнтĕ патшасен йĕрки—
Кўпки-çапкипе панă ырлăхне!)
Пĕр вăтăр çапсан, ватă Итапай
Халтан кайнипе ăнтрашрĕ ђылай.
Çапса пĕтерсен, вилнĕ пекскерне
Хураççĕ кĕртсе хурал пўрт ăшне.

***

Киленнĕ пурмис машлатса вĕрет,
Сив сывлăш туртса каллех мĕкĕрет:
— Ак куртăр ĕнтĕ:—тўрккес çынсене
Йепле еп сăвса манми ађашлап...
Пуçне кам шеллет—таттăр парăмне.
Ун пек çынсене халех хăтарап.

Кама ҫунӗпе тирӗ шеллӗ мар,
Унӑн укҫи те пире кирлӗ мар...
    Пурмис малалла лӳпперӗн пӑхать.
Сулать алӑпа, хӗрӳллӗн калать:
— Ҫаптар лешсене!
Касҫен пӗтерсе вӗҫес кил йенне...
    Ҫӗр йун сирпӗнсе пӑрланӑ вырӑна
Кӑларҫӗҫ каллех пӗр ҫамрӑк ҫынна.
Ку ҫын—хут ҫинҫе «Йакку» йатлӑскер,
Йалта, ҫӑвашла—**«Ҫакка»** тенӗскер.
Ҫынни ку—тӑлпан, ҫӳллӗ мар—вӑтам.
Пит-куҫ те унӑн илемлӗ, ҫуткам.
Сухалӗ кӑшт ҫеҫ тӑрать мӑкланса.
Ҫине кивӗ тум йанӑ тӑхӑнса.
Ҫакка вырсла та пӑртаксӑ ҫухлать,
Ҫампа пурмиса пуҫҫапса калать:
— Ей, ырӑ пурмис, хӗрхенӗр мана...
Халех, ыранах кайап хулана.
Виҫ лав ман курӑс кайса сутмалла.
Ӑна сутсанах укҫа пулмалла:
Тенк ҫурӑ пулать—катап парӑма...
Тархасшӑн ан тив!.. хӑтар пуҫӑма!..
    Сасартӑк тийек пурмиса калать:
— Ку ҫамрӑк ҫӑваш ытла мӑшкӑлать!
Вӑл куланайа икӗ ҫул татман...
Ун пек найансем нумайах йулман.
Тӑват тенкӗ те ҫирӗм икӗ пус
Унтан илмелле... Ак мӗнле вӑл йус!
    Тийек сӑмахне илтнӗ илтменех,
Пурмис мӗкӗрет хӗремесленсех:

— Ăшалăр ăна ђĕри çурлиђђен!
Тĕп пултăр кунтах, епир кайађђен...
Шăртланнă пурмис, талхăрнă ђухнех,
Тапаҭ Ђаккана пуçран пĕрех çех.
Ун йăвăр кĕлел ђукун пек атти
Вирлех çакланаҭ Ђакка çамкине.
Ђунран пуççапса ларакан Ђакки
Палтах! сирпĕнет таптав йур çине.
Ун çирĕп тирлĕ кĕрнеклĕ çамки
Лаппех вистенет лектернĕ тĕлтен...
Вĕри, ђĕп-ђĕр йун сăрхаҭ суранран:
Йухаҭ йун, тумлаҭ йанах вĕçĕнђен...
Çĕкленђĕ Ђакка, каллех тилмĕрет;
Сасси ђĕтренсе аран илтĕнет:
...Тырри-çке пулмасҭ...
Укçи тупăнмасҭ...
Каçарăр пайан!—
Тейет вăл аран.
Пурмис, măн сухал, çынна хĕрхенмест—
Ђакка кĕллине хăлхана ђикмест;
Супне-çĕлĕкне хывса тăхăнаҭ,
Ђасрах хĕнесе пăрахма хушаҭ...
Ак, çамрăк пуçа вырттарђĕç ђăсса,
Тумне вашт! хывса пăрахрĕç çумма.
Пилеш хуллисем суйласа тытса
Пуçларĕç ăна вăйпа кастарма.
Ак, çапнă йĕртен, шĕв йун пĕрĕхсе
Шур йур çинелле кайаҭ сирпĕнсе;
— Ахлатнă сасă çураҭ ђĕрене.
Ку сас—хайар сас сарлаҭ йал çине...



Пилеш хуллисем суйласа тытса
Пуçларĕç ăна вăйпа кастарма.

Ни хурлăхлă сас, ни куççӳл, ни йун,
Нимскер хускатмасť шыçмак пуççене.
Упа пек урса çапла, кĕтмен кун,
Йунларĕç пайан **пĕђĕк йал питне.**

***

Хĕрӳсĕр хĕвел ансах ларайман.
Вашлатрĕ сивĕ çил—хумханђĕ вăрман.
Пурмиспа тийек, ĕçне пĕтерсе,
Ђавтарђĕç йалтан тăман вĕçтерсе.
Вăрман варринђи уллах пĕђĕк йал
Шăнкрав сассипе йулаť çӳçенсе.
Ку виђкĕн йантрак—ырă мар—усал,
Йантраť нумайђђен вĕçсе çӳресе.
Пĕђĕкçĕ йалтан кантур йеннелле
Рашђа хушшипе кайаť ансăр çул.
Çул икĕ йенпех, хайар çилпеле,
Сайра йăвăçсем карлаççĕ салху.
Ак виç лашаллă кантур таврашсем
Пыраççĕ унта тăман кăларса,
Тӳр çул хĕрринђи лапсак йăвăçсем
Вăљ-ваљ авăнаç вĕсене курса!
Хыт ларђăк çинђи курпун ват йамшăк
Шăрт-шарт! тутараť вăрăм пушшипе!
Нимскер мар ăна сулнăк, йе алтăк!—
Çил пек вĕçтерет вăл катмар çунипе.

***

Вăрман хыçнелле пытанђĕ хĕвел.
Кушлавăш хушши çаплах лăпланмасť:
Арçын, хĕрарăм, ађи-пăђи—шел,
Калла та малла урамра ђупаť.

Унта та кунта хурланҫӑк йӗрӳ,
Йӑслав, ҫуйхашу, тӗрлӗрен сас-ҫӳ!..
Ак ҫак хушӑрах ҫуналлӑ лавсем
Пыраҫҫӗ шуса хурал умнелле;
Вилес пек выртан ҫынсене вӗсем
Тийеҫҫӗ йӑтса,—ҫасрах килелле!

****

Каҫхи шуҫӑм хыҫ сӳнсе ҫухалать.
Йӗрӳ-ҫуйхашу тинех лӑпланать.
Пӗҫӗк ҫӳреҫеллӗ хура пӳртсенҫен
Курнаҫҫӗ имшер хӑйӑ ҫуттисем.
Хупса питӗрен хапха-алӑксем
Шӑлт-шалт! тукалаҫ тӑлӑххӑн, киҫем...
Тепле, сайраран, урам варрипе
Пӗҫҫен ҫын мӗлки иртет васкаса;
Вӑл, тӑкӑс йура касса утнипе,
Ҫӗриклеттерет пушӑ урамра.
Ура сассине хайар йытӑсем
Сиксе хамлатаҫҫӗ хапха умсенҫен.
Виртленӗ пекех—вӗсен сассисем
Тапаҫҫӗ калла вӑрман хӗрринҫен.
Каҫ... Вӑхӑт шӑвать. Пӑҫ тӗттӗм ҫӗрҫи.
Пӗҫӗкҫӗ йалта ҫарнать сас-хура.
Хӑш-хӑш пӳртре ҫеҫ ҫунать хӑй ҫикки.
Курнан хӑй ҫути те сӳнкелет сайра.
Хура тӳпере мӗлйун ҫӑлтӑрсем,
Талкишпе хыпса, ҫунаҫҫӗ сиксе.
Сайра хутра ҫех выҫ тӑманасем
Пӑсаҫҫӗ тӑппа хыт тӗввиклетсе.

---

## III. ЙУНЛӐ МУНҪА ХЫҪҪӐН.

Каҫхи тĕттĕме йерипен сирсе
**Хĕрӳсĕр хĕвел** курӑнҫĕ аран;
Карта хушсемпе шӑхӑрса, йĕрсе,
Хĕвеланӑҫ ҫилĕ кĕрлет тапхӑртан.
Лутра пӳртсенҫен, унтан та кунтан,
Кӑвак шĕв сĕрĕм тухаӑ палкаса,
Ирех вӑраннӑ анканӑ ҫӑхан
Йал урлӑ вĕҫет хыт кӑранклатса.
Кантур хӑватне курнӑ Кушлавӑш,
Ҫун ҫук пек пайан лараӑ тĕмсĕлсе.
Хурал пӳрт панҫи пĕҫҫен ват ҫӑрӑш
Хуллен сулланаӑ уса[1]) вĕҫтерсе
Ҫак пĕҫĕк йалта, Тукас варнелле,
Пĕр ҫухӑн кил-ҫурт лараӑ курӑнса.
Ун килкартинҫе, хапха йеннелле,
Наҫар хура пӳрт лараӑ лапҫӑнса.
Ку ҫухӑн кил-ҫурт—Итапай пиҫҫен,
Хӑй ҫухӑн пирки ун ҫурҫ те ҫĕрҫен.
Ёнер анҫах-ха ҫак Итапайа
Кантур таврашĕсем йаҫĕҫĕ сайа!

***

Итапай йаҫĕ вырӑсла—Ласӑр.
Пуп хунӑ йата ашшех савмасӑр,

1) Уса—хĕлле ӑавӑҫ ҫине ларнӑ йур ҫӑмакки.

Вара—Итапай, тенĕ ку çынна.
Аслашшĕ йатне пилленĕ ăна.
Йаш ђух Итапай йăвăрнех туйман.
Ун ђух, вĕт, унта пусçлăхсем пыман.
Кам пытăр ун ђух вĕсен йал йенне—
Тасçти, улахри вăрман сĕмлĕхне?..
Вăл ӳснĕ сĕмре кайăк пек шăппăн,
Çӳренĕ матур, луçă пек каскăн...
Çӳрен ухата вăл хĕлĕн те çăвăн,
Ун çывăх туссем—ухă йе капкăн...
Старик Итапай çакăнти çĕре
Вырнаçнă ађа ђух, ашшĕпе пĕрле;
Ун ашшĕ Йартух—хастарлă хресђен,
Вăл куçнă кунта Çавал вурринђен[1])...
Тырпул пулмасан та, ĕçђен Итапай
Малтан хăйне-хăй пурăннă самай:
Карташ тулли ун вĕркенĕ сурăх,
Иквиçĕ лаша та, ултçиђĕ ĕне...
(Выљăх тытмасан, ку çĕрте урăх
Нимрен те ус çук хресђен çыннине).
Çапла çав пулнă пирĕн Итапай.
Анђах та пурнăç ăнмарĕ, пĕрмай:
Пурна киле ак, сисмен вăхăтрах,
Пушар пĕтерет унăн кил-çуртне.
Вăй çитнĕ таран, ђăтса, хăвăртрах
Лартать вăл çĕн çурт кăмрăк вырăнне.
Çуртне лартсанах, пĕр-икĕ çултан,
Усал хурахсем хупларĕç ăна:
Пур пек лашине çулла, вăрмантан,

[1]) Çавал вурри—Çавал Атăла хутшăннă вырăн.

Хӑйне сисмесле вӑрларӗҫ тытса.
Кайран туйаннӑ пӗртен-пӗр лаши,
Тем ҫӗмерипе, ӳкет те вилет.
Ытти выҫӑхӗ, пӗр-ик ҫул хушши,
«Тукатмӑш-мурпе» йӑлтах хирӗлет!..
Инкек-синкекпе Итапай пӗтет,
Йалан куҫанса ун ӑс та ҫӗтет.
Ҫавах та хуллен вӑл ҫӳреҫҫӗ-ха.
Майлаҫҫӗ хӑйех пур-ҫук пурлӑха.
Ак хаҫ, ӗнер кун, пурмиспа тийек
Ватса ҫӗмӗрни хупларӗ ӑна.
Кун-ҫул тайӑлсан ҫакланнӑ инкек
Йӑлтах тӗп тӑваҭ йӳтенӗ ҫынна.
Ак хаҫ вӑл, ӗнтӗ, ҫак пӗҫӗк пӳртре
Пайан ирхине асаппа вилет.
Ун ват карҫӗкпе хӗрӗ—Кулине
Саспах кӑшкӑрса йӗни илтӗнет.

***

Итапай пиҫҫен йышӗ пысӑк мар:
Пӗр хыт карҫӗкпе ик хӗрӗ анҫах.
Хӗрсем ун ҫипер, айван хӗрсем мар—
Ашшамӗш йатнех ӳснӗ аҫапҫах.
Пӗр хӗрӗ Тайпи, тепри Кулине;
Кӳреҫҫӗ вӗсем йал-йыш илемне.
Тайпи—хаҫ арӑм, аҫи те ун пур,
Вӑл каҫҫа тухни ҫитет пилӗк ҫул.
Тайпи—ҫӗрӗ ҫын, ӗҫҫен те матур,
Анҫах ҫапах та ҫук ҫав вӗсен мул!
Ашшин ирӗкпе тухнӑ вӑл каҫҫа.
Ҫапах каҫҫине кайнӑ йуратса.

Каҫҫи те унӑн хӑй пек ҫиперскер,
Йалтах, инҫе мар,—Ҫакка йатлӑскер...
Анҫах Ҫаккана, хуннӗпе пӗрлех,
Хурал умӗнҫе хӗнерӗҫ ӗнер.
Кантур пуҫлӑхсем хӗремесленсех:
— Ку пӗттӗр халех!—терӗҫ ик-виҫшер.
Ҫакка та пирӗн ак ҫавӑн пирки
Вилес пек выртаť пайан кунхине.
Ват ашшӗ вилет пулсан та, Тайпи,
Унта кайаймасť, пӑхаť Ҫаккине.

***

Ҫакка аҫаллах йулнӑ тӑлӑха:
Ашшӗ вилнӗ ҫух—пулнӑ тӑххӑрта,
Амӑш вилнӗ ҫух—вунпилӗк ҫулта.
Тӑлӑх ҫамрӑклах курнӑ хурлӑха.
Тата унпала тӑлӑх пурнӑҫа
Йулаť пӗр шӑллӗ—нишлӗ Йатарин.
Ҫак шӑллӗшӗн те ку ҫамрӑк пуҫа
Килет тӳсмелле талкишпе, тӗппин.
Ӳссе ҫитсенех, пӗр ҫирӗм тӗлне,
Авланҫӗ Ҫакка,—илет Тайпине.
Анҫах, авланса пӗр-ик ҫул тулсан,
Кӗтмен тӗлтенех, йалти пӗр пуйан
Ҫакка телейне таптаť ҫӗрпе тан.
Халҫхи инкек те тухаť ҫакӑнтан.

***

Ҫакка йалӗнҫех, ҫи йал варринҫе,
Пурнаť пӗр куштан—пуйан Алапит.
Кун пек ҫын сайра Кушлавӑш йенҫе:
Никам умӗнҫе ҫакмасť вӑл пӗр шит.

Алпит паллă, ун йаҫĕ хайар;
Пурмис-тийек те унпа тус пурнаť.
Мулне кура ун йыш те пĕҫĕк мар:
Виç ывăл, пĕр хĕр унăн йал касаť.
   Пĕрре, тенепле, йал тĕлĕнмелле,
Куштан Алпит хăй те сисмесле,
Ун хăй савакан аслă ывăлне
Ҫĕнеççĕ хăвăрт салтак слушпине.
(Салтак пурнăçĕ хĕн пулнă авал,—
Ăна ҫухлама çитмест пирĕн хал:
Кайан салтака—иртет ĕмĕрў,
Калла килиҫҫен шуралаť çўçў!)
Алпит усал хыпара илтсен,
Сикет те тăраť мулне ĕненсе.
Пыраť вăл хăвăрт вулăс кантурне—
Пылпа-мулĕпе çавраť тийеке.
(Кунта пĕлмелле ĕлĕк мĕнлине:
Камра выртнă-ха, леш тĕп кĕнеке?)
Тийекĕ вара, кăмăљ çемĕçсе,
Ĕçе «тўрлетет» хăй пĕлнĕ майпа:
Алпит ывăљ йатне илейсе
Çыраť Ҫаккана, тĕплĕ ăслайпа.
Çампа та, ĕнтĕ, пĕр хўтсĕр Ҫакка
Кĕтмен тĕлтенех кайаť салтака.
Кайаť вăл, çапах нумай пурăнмасť:
Йутри хыт пурнăç ăна йурамасť:
Ик çул пурăнсан, вăрах ҫирлесе,
Килет вăл пуçпех аран силленсе...
Килте те ҫылай выртса хăрнăскер,
Ҫакка хаљ çине ҫухăнҫҫĕ питех.

Ик çул татайман куланай пекскер
Çапла майпа ун пухăннă текех.
Ак хаљ, тамаша, тийекпе пурмис
Ђакка кун-çулне пăхмарĕç нимскер:
Сан пур-и, çук-и (йал-йыш кур та—сис!)
Хĕмлерĕç ăна, пĕтерђĕç ĕнер.

***

Тискер ĕç пулни иртет пĕр ерне.
Ђасах манас çук-ха усал ĕçсене...
Çапса хĕненĕ çиђ-сакăр çынран
Ик-виçĕш вилђĕç ерне хушшинђе.
Пĕр тăкăс сив кун... карлаҭ сĕм вăрман.
Курак кăраклаҭ вăрман хĕрринђе.
— Çанталăк питне шăн пĕлĕт караҭ,
Имшер хĕвеле витсе хупăрлаҭ.
Çак кун ак, каçпа, хĕвел анайсан,
Ђакка, суранне самай пек туйса,
Хура пўртĕнђе пĕђђенех, аран,
Нар сакĕ çинђе лараҭ тайăнса.
Ун пĕђĕк çемйи пайан килте çук.
Виç кун ак çитет Итапай вилни:
Пайан ак, хунĕ вилни виç кун ђух,
Ăна асăнма кайнă ун çемйи.
Çампа та пайан, улах сехетре,
Çавраҭ вăл пуçне иртнĕ ĕçсемпе.
Çапла ларнă ђух, сисмен те Ђакка,
Пыраҭ ун патне старик Тĕвенеш.
Ку паттăр ват çын,—хисеплĕ йалта;
Ун çул те ђылай, пĕр çитмĕл тĕлеш.
Анђах вăл хĕрў, утаҭ-ха матур.

Сухаҫ ун сӳс пек, варкӑшаҫ шап-шур...
Пӳрте кӗрсенех хываҫ ҫӗлӗкне,
Кӑшт-кӑшт шӑлкалаҫ ҫут пуҫ тӳпине.
— Ман килес,—тет те, малалла утса,
Ват ҫын сассипе ыйтаҫ Ҫаккаран:
— Мӗнле сывлӑху, самай-и, Ҫакка?..
Шеллетӗп хыр пек йака шӑмшакка!
Ҫакка:
Самай пек пайан... Анҫах та темле...
Те ҫӗрлеп ӗнтӗ... те тен вилмелле.
Ех мӑшкӑл, мӑшкӑл! пӑх-ха, муҫей, вырт!
Нимӗскер тума ҫук: шӑлусене ҫырт!..
Тӗвенеш:
Самай пек пулсан, ҫӗрлен-ха еппин.
Турра тавтапуҫ... хӑрамалли ҫук!..
Сӑмах ман пурҫҫӗ. Калап ӗнтӗ тин.
Калам-ха сана, пӳртре улах ҫух.
Ҫакка:
Каласам, кала—
Мӗскер-ха апла?..
Тӗвенеш:
Вӑт, Ҫакка аҫам,
Итле, ак калам:
Ес хаҫ тӳсекен пур инкек-асап
Мӗнтен пулнине еп тӗппех курап...
Ҫарта пулмантӑк—есӗ ҫирлес ҫук;
Сыв пулнӑ пулсан, куланай пекки,
Ҫапла ҫултан ҫул йулса пырас ҫук,—
Патак та пулмӗҫ халӗ ун ҫирки...
Салтакне кайрӑн каймас ҫӗртенех.

Еп витĕр пĕлтĕм ку вăрттăн ĕçе:
Пĕтерҫĕ сана хамăр йал-йышах—
Алапит анҫăк турĕ ку ĕçе!..
Усал инкекĕн кăкне курнипе,
Тăртаннă Ҫаккан алли-урисем
Тăрр! туса илҫĕç шăнăр туртнипе.
Шăнк! хытса ларҫĕç хăмăр куçĕсем.
— Ҫăнах-ши, вара, ку?..
Ҫăнах-и, ну!.. ну!..—
Тесе пырать вăл сăмах хыçĕнҫен.
Тĕвенеш тăкать хăй пĕлни çинҫен.
— Ҫăнах пулмасăр...
Еп çын—суйасăр...
Еп хам-çке илтрĕм... Текей патĕнҫе
Леш кĕр, ҫўклеме ĕçки ĕçнĕ кас,
Çавскер ўсĕрпе, кĕреке хушшинҫе
Ларать мухтанса, ех ан та калас!
— Кам пур ман пекки!—тет—
Ампар тулли тыр, пыл-çу ишĕлет...
Пурмис та, пуп та—сирĕншĕн çĕлен!
А, маншăн вĕсем—ыр туспа пĕрех;
Çампа хуть хăçан, инкек-мĕн çитсен,
Йуман пек тăрап епĕ тўп-тўрех!
Мул вăл—çын турри,
Етем—ун ҫури... тет.
Мухтанҫĕ ҫылай. Вара Текейе
Пăшлатрĕ темскер, хăлхи патĕнҫен.
Еп сисрĕм унтах... еп те, вĕт, ҫейе.
Кайран Текейрен ыйтрăм ун çинҫен.
Вара вăл тĕппех каларĕ çакна:

Хăй ывăлђ вырăнне йанă, тет, сана!..
Анђах—ан шарла!—тет, турран килеш...
Текей, вĕт, ун тус...—терĕ Тевенеш.

Ђакка:

Ых, есрел çынни!..
Йепле сывалам...
Пуйан çын кулли
Тума кăтартам!..

Тĕвенеш:

Çапла, ун пирки есĕ хĕн куран...
Мăнланнă ђăваш—ђăвашах çийет!
Пурмис та, пуп та шуйттанпа тăван;
Вăл пур—вĕсемпе ĕçет те сикет!
Ну, шăллăм Ђакка, кăна ан манах...
Кайам-ха, ĕнтĕ, тата васкасах...
Сывалђђĕ!.. тет те, Тĕвенеш кайаť.
Пăлханнă Ђакка пĕђђенех йулаť.

Ђакка, халђ анђах пĕлейни çинђен
Сиссеђђĕ пăртак ăна çийĕнђех.
Анђах, Тĕвенеш сăмахне илтсен,
Ку ђăн пулнине ĕненђĕ тинех.

***

Хĕл кунĕ иртсе ђасах каç пулаť:
Хываççĕ каçпа Итапай йатне.
Хывсан, пур йал-йыш киле саланаť.
Киле Кулин çеç йулаť амăшпе.
Çанталăк тĕттĕм. Çуркаç тĕлнелле.
Тулта çил-тăман пуçлаť кĕрлеме.
Ак çак самантрах, хайар çилпеле,
Итапай ђуњ те пыраť хăй килне.

Уллах тёттём каç асаť вăл хытах,—
Ураť, çĕмĕрет тăвăлпа танах:
Луртра пÿрт çине хăпарса шаккаť,
Ђÿређе умне тăрса шăхăраť,
Кĕçех ак лăкаť алăка пырса,
Утаť пăлтăрта ђĕрĕ çын пулса;
Кĕрлен çилпе мар, курăнми алпах,
Нађар хапхана уçса пăрахаť!
Вилес килмен ђун, çапла çĕр каçах,
Хĕрпе карђăкне хытах хăратаť.
Кулин, çамрăк çын, çĕрпех çывраймасť,
Вăл амăш çумне вырťаť лăпђăнса.
Ун амăш—хытă ђун, ытлах хăрамасť,
Текех старикне хушаť ђарăнма.
Ире хирĕç тин кайаť Итапай,
Текех хăратма пымарĕ кайран.
Кун хыççăн кунсем иртеççĕ пĕр май:
Итапай йатне çухатрĕç йалтан...

---

## IV. ПĔРРЕ, ÇУРХИ КАÇ.

Тăманлă, тĕксĕм, сивĕ хĕл кунсем
Ак карĕç иртсе—çитет çуркунне.
Карти-картипе кайăк-кĕшĕксем
Килеç кăнтăртан Кушлавăш йанне.
Çара çам вăрман каллех тумланаť—
Пур кайăксене витсе хўтлет;
Шур хурăн çинђе куккукĕ куклаť
Сĕмлĕх варринђе шăпђăк треллелет.
Кушлавăш йаљ те, вăраннă пекех,
— Çу çитрĕ!—тесе шавларĕ майпе.
Ĕçђен сыннисем, йурсем пĕтсенех,
Пуçларĕç сарма хăйсен уй çĕрне.
Хавас çуркунне çитсе тăнине
Туйаť-мĕн пурте—мĕн пур ђĕрĕ ђун.
Кушлавăш сынни ăшђик-ђĕрене
Вăрман хушшинђе уçаť кунран кун.
Ђакка та ĕнтĕ сывалђĕ хуллен:
Шăм-шак ун ђĕрлет, суран тасалаť.
Çўрет вăл ђипер, ĕçлет йерипен;
Çурхи акана та хăйех вăл акаť.
Анђах, сывалса çитнĕ пулин те,
Усал синкере Ђакка манмаймасť;
Иртнийĕ çех мар, малашнехи те
Ăна хăратаť, ним канлĕх памасť.

Малла пĕр шиксĕр пурăнас тесен,
Куланай татма укçа тупмалла.
Çампа та кăçал кĕре çитиђђен
Ултçиђĕ тенкех тупса хумалла.

***

Çу кунĕ иртсе тӳлек каç пулаť.
Кушлавăш тĕнђи хавассăн сывлаť.
Каçпа пур çамрăк хăпаť урама.
Пуçлаççĕ вĕсем йала ђун пама.
Урам вĕçĕнђи çерем уçланкра
Йаш-кĕрĕм йурри шăнкрав пек йантараť.
Хастар йур кĕвви тӳлек саманара
Йĕри-тавраллах шăранса йухаť.
Шап-шур ђеђекпе тумланнă çĕмĕрт
Вăрман хĕрринђен ыр шăрăш сараť.
Çурхи илемпе ђĕрĕлнĕ ĕмĕт
Малашлĕх йенне ђĕнсе хаваслаť.
Çак каç ак Тайпи хăйсен пӳртĕнђе
Пĕђĕк ађипе лараť йăпанса;
Ађи—Иљушша, амăш çумĕнђе,
Нимскер кирлĕ мар, лараť çуйхăшса.
Ђакка килте çук.
Киђем вăл çук ђух.
Ерне ак çитет, вĕсем кӳршсемпе
Кайсађђĕç лавпа Шупашкар йенне...
Унтан çуркуннех пĕр хуçа килсе—
Ђĕр тир, ăвăс, пыл пуçтарнăђ илсе.
Хаљ çав тавара, улт-çиђĕ лавпа,
Карĕç тийесе вырăс хуçапа.
Лава кайансем (Ђакка та пĕрле)—

Пулсаҙҙӗҫ килме тӑват кун ҫинҙе.
Ак, халӗ—ерне!—Килмерӗҫ темле.
Ӳкеҫҫӗ хуйха вӗсен килӗнҙе.
Тайпи те ҫампах ак ҫак каҫхине
Хура пӳртӗнҙе ларат тӗмсӗлсе.
Вӑй-йурӑ сас ҫех ун тӗттӗм пӳртне
Парат ҙӗрӗ ҙун, кантӑкран кӗрсе.

***

Анаҙах кӗҫех йурӑ ҙаранса,
Вӑйри аҙа-пӑҙа ҙӑлпар! саланат.
Унтах Йатарин те, ҙасрах васкаса,
Хӑйсен кил йенне хурҙка пек ҙӑмат.
Йатарин килте. Кӗрет вӑл пӳртне.
Кӑҥ-каҥ пӑхкалат—курат инкӗшне;
Шур шӗлепкипе тӗрлӗ халатне
Хыват те ҫакат, пуҫлат пуплеме:
— Инке, теп, темле ҫӳҫенҙӗк хыпар
Илтейтмӗр халҙ ҫеҫ епир вӑйӑра.
Халҙ ҫеҫ Хумпуҫрен килекен Йуксар
Каларӗ пырса: малти рашҙара
Темле етемсем...
Хӗҫлӗ-пӑшаллӑ, тет, пурте хӑйсем,—
Выртаҫ, тет, канса ӗшне варринҙе...
Ик-виҫ каҫ ҫавсем Хумпуҫ уйӗнҙе
Хупларӗҫ тет шалт, мӗн пур йалсене...
Кунтах килӗҫ, тет Йуксар, вӗсене,—
Терӗ Йатарин хумханҙӑк саспа.
— Тур сир усалла!.. ан килҙҙӗр кунта...
Камсем-ха вӗсем?!—тейейҙӗ Тайпи.
Усал хыпарпа ӑш-ҙик ҫӳҫенет...

Нумай та тӑмасӗ—хапха уҫӑлатӗ!
Йатарин шӑлт-шалт! пӳртне питӗрет.
Анҫах, никам мар—Ҫакка таврӑнатӗ.
— Ак, ҫитрӗ пиҫҫе!.. Тинех хайхискер.
Еп леш хурахсем пуҫ тесе темскер...
Лаша тӑварас... лӑштах пултӑм тин,—
Тейет те, сикет тула Йатарин.

***

Ҫакка ак пӳртре. Урине салтса,
Ҫасрах вырнаҫатӗ сӗтел хушшине.
Тайпи, уйранпа тип ҫӑкӑр касса,
Апат хатӗрлет Ҫаккийӗ умне.
Тата ҫул ҫинҫен шӑмшакка кайма,
Ӑсатӗ вӑл сӑра пӗр пӗҫӗк ҫӑмпа.
Йатарин кӗрет лаша тӑварса.
Хаваслӑ халап кайатӗ пуҫланса.
— Мӗнле-ха, Ҫаккам, ҫӳрерӗр нумай?..
Хӑрармӑр епир... кӗтетпӗр пӗрмай.
Пуҫне кӑшт лӑстӑрт сулласа илсе,
Пуҫларӗ Ҫакка сӑмахне сӗрсе:
...Ну-и, хӑйамат...
Хуплантӑмӑр шалт!..
Лава тытакан—вӑл тӗп хуҫи мар.
Хуҫи хӑй лере... Хупласҫӗ ҫынна!
Лав хакӗ пирки карӗҫ кутӑна.
«Сум та пилӗкех[1]) тытса» тет, вӑрҫатӗ.
Лавран ҫирӗм пус катса хӑваратӗ.
Вара, хай хуҫи патне кӗтӗмӗр.
Анҫах унта та тӗнкелентӗмӗр...

[1]) Сум та пиллӗк пус—35 пус.

Ťапукпа Мики мулкађпа пĕрех,
Çав хуçа патне, такки, кĕмерĕçех.
Вĕсем йалта çех маттур та хайар;
Вăт ес вĕсене ĕçе шанса йар!
«Ес кĕр те, ес кĕр» тесе тавлашса,
Сехет пуђ тăтмăр. Тăраççĕ хытсах!
Хуçин те тарçи кĕртмест, тамаша!
Çапах хам кĕтĕм вăл тарçпа вăрçсах...
Ах, çурђĕ таса-а-а!.. Хуçи тађкаскер,
Ларať сарăлса. Пăхаť хăй тискер!
Калап шалăпа. Хăтăрма пăхаť:
— Çитет вăтăр пус!—тесе кăшкăраť.
— Тархасшăн, тетĕп, ђунран йăлăнап—
«Сăсар-тилĕ тир нумай пирĕнте.
Пуçтарпăр саншăн çак çитес кĕрте...
Уçсам кăмăлна...»—терĕм те, хуçа
Тинех çемçетет хайар пит-куçа.
— Йураť... ыйтнинех сире еп парап...
Анђах пĕр-ик кун ĕçлĕр ман патра;
Склатран таварсем турттарма йарап.
Кашни лав пуçне вуншар пус, вара.
Кайатăр-и?—терĕ. Йӳнрех те, мĕн тен?!
Ĕçлермĕр вара укса тӳлиђђен,
Виç кун,—тет Ђакка, йăвашшăн кулса.
Унтан уйранне пĕр тапхăр сыпса,
Алне ђавсалаť сĕтел хĕрнерех.
Каллех ак пуçлаť лери çинђенех:
— Ех, Атăл çинђе!..
Ăçта вăт тĕнђе...
Мĕн ђухлĕ етем! мĕн ђул паршăсем!..

Паршăсем çине тир, курăс, çăм, сӳс
Тийеççĕ ҫыхсах... Пурлак мĕскĕнсем,
Выççи хуплаттӑ çав, пĕрре кĕршнĕ—тӳс!
Ну, йăвăр пулас пурнăçĕ вĕсен:
Мĕн ҫухлĕ тӳсӳ, вăй кирлĕ иккен!..
— Мĕскер вăл—пурлак? илтеп епĕ тин.
Парши те темскер?—терĕ Йатарин.
— Пурлак вăл—етем. Тулли паршсене
Туртаççĕ вĕсем мăн шыв хĕррипе.
Лаша выраннe кӳлнеççĕ вĕсем.
Парши—пысăк ким... тĕрлĕ таварсем,
Пиншер пăт таран тийес ун ăшне.
Туртаççĕ вара—тет, Ҫакка шăлне.
Хавассăн пыраттӑ пĕр вĕççĕр сăмах.
Çуркаç та çитет. Тулта сĕм... шăпах.

## V. ПĂКАЂАВ МĔЛКИ—ПАХХОМККĂ.

Кил-йыш çывăрайман. Ђĕтрет хăйçутти.
Пĕр Илђуш анђах туртаҭ ăйăха.
Ак, халтăрт! тăваҭ пўртўм картлашки.
Кив пўрт алăк те йарри уçăлаҭ.
Унђђен те пулмасҭ, ак пĕр самантра
Улт-çиђ çын харсах кĕреççĕ пўрте.
Улт-çиђђĕш те йут. Пурин те алра
Киншал, йе пăшал!.. Хăйсем шăп пурте.
Пĕри вĕсенђен—тăлпан, çўлĕскер,
Çўç-пуçĕ кăвак, сухаљ пысăкскер,
Тўрех талтлатаҭ Ђакка патнелле.
Ăна çурăмран хуллен лўпкесе:
— А, ну-кă, итле, есĕ—ађамми,
Туп, пар ес пире апат—тăрантар!..
Мĕн ыйтнă—парсан, утаман алли
Сана тивес çук... Мĕн пур?—Тавай, пар!..
Ыйтаҭ вăл тимлĕн, хăйуллăн, тискер.
Ђакка шăнк хытса кайнине кура,
— Иваш!.. ăçта, ес?—Кала-ха, пĕлтер,—
Терĕ утаман, пăхрĕ хăй тавра.
Иваш, тесенех—алăк патĕнђен
Тухаҭ сиксе—ђалт! пĕр çамрăк ђăваш.
Утаман вырăсла мĕн ыйтни çинђен
Калаҭ ђăвашла маттурăн ку йаш.

Сикме, хускалма пĕлмерĕ Ђакка,
Йупа пек лараҭ сĕтел хушшинђе:
— Апла-ха, тăнлап... ҫтан тупас ҫукка?!
Тет вăл Иваша. Шăмми-шаккинђе
Пађăрр! вĕри тар тухаҭ ун тапса.
— Ҫăкăр пур... уйран... нимскер урăх ҫук...
Камсем-ха есир?—терĕ вăл хăйса.
— Хуҭ те кам пулар.. Айта, есĕ тух!
Тавай, тупса пар шăрттан, йе сĕт-ҫу!..
Парантăк-ђас пар, хамăр лайăх ђух.
Хирҫентĕк—пуҫна ҫийĕтпĕр, асту!—
Терĕҫ кăшкăрса сивлек етемсем.
Унтах хĕҫсене вăљт-ваљт выљатса,
Хăмсарђĕҫ харăс Ђаккана вĕсем:
— Ваклатпăр халех!.. теҫҫĕ хăратса.
Пиђђĕшне касрĕҫ, тесе хыпăнса,
Хавшак Йатарин тарма пикенет.
Тайпийĕ—шари! йараҭ кăшкăрса.
Иљуш вăранса—макăрса ўкет.
Умра тăракан утаман пекки
— Ну ђарнăр!—терĕ. Пурте ђип-ђипер.
Шăпах, ним ђĕнмест хурахсен пулкки.
Ђакка та аптраҭ, ђĕнмест вăл нимскер.
Хай пысăк сухал пуҫларĕ пĕртем:
Епир хурах мар—ирĕк хусахсем.
Епир каммине пĕлес тен пулсан,
Нумай, пит нумай калас пулаҭ ман.
Анђах ҫапах та кăшт калам сана:
Ĕлĕк аҫусем йуратнă ҫынна,
Пăкађав йатне ес пĕлетĕн-и?

Пĕлетĕн пулсан еп çав çын мĕлки...
Анҫах каласма пирĕн вăхăт çук,
Пĕлтерпĕр сана епир ӳлĕм ҫух.
Тавай, есĕ пар çимĕç-йурварна!..
Çапла каласса тăнă самантра
Шик! шик! шăхăртрĕç малти урамра;
Кĕçех хайаррăн «хурах!» кăшкăрни
Таçта илтĕнет.—Çырлах!—тет Тайпи.
Улт-çиҫ хусахран, ик-виçĕш ҫасах
Ҫупаççĕ тухса кăшкăрнă сасса.
— Ей, ирĕк çынсем, сирĕншĕн пулсан,
Нимскер шалккă мар килте мĕн пурри.
Пиҫке сăрам пур... кăмăла кайсан,
Лартам та парам сирĕншĕн йури,—
Йантратрĕ Ҫакка. Сикет вăл, тăрат,
Усăт урлă сак—пиҫке кăларат:
— Ак, мейĕр—сире!.. Ĕçĕр киленсе!
Анҫах, çиме çук,—терĕ вăл хĕрсе.
— Аван ку, йурат—терĕ утаман,
Ларат савăнса сĕтел хушшине.
— Ну есĕ, Лавруш, ҫуп ҫасрах, ан ман:
Тупăр çимелли!—тет вăл йулташне.
Сӳсленҫĕк, хăйпак, тăсланкă Лавруш
Тухат те ҫупат... Çӳçенҫĕк, хăруш!

***

Килет тул çути.
Сӳнет хăй ҫикки...
Ак çак самантра усă алăкран
Пĕр ушкăн хусах кĕрет ак пырса.
Вĕсен аллинҫе—сĕт-çу, йе шăрттан,

Теприн—йӳҫ пылпа тултарнӑ катка.
— Хурал сых тӑрат—ларсах ӗҫсе-ҫи...
Кусем—типӗ аш, ку пыллӑ йӳҫҫи,—
Терӗҫ хусахсем ват утамана;
Мӗн тупнӑ—йӑлтах параҫҫӗ ӑна.
Тинех хусахсен тӗнђи уҫӑлат:
Ташши те йурри вӗсен пуҫланат.
Умра пуррине ӗҫсе пӗтерсен,
Каллех ак шерпет тупрӗҫ кӳршӗрен.
Кӑвак утаман, хӑйпе йунашар,
Сӗтел хушшине лартат Ђаккана.
— Манран ан хӑра, пупле,—паллашар!..
Тесе вӑл хавас пуҫлат халапа.
Пуҫлат—ађаран улпут аллинђе
Ӗҫпе писӗхсе хӗн курни ҫинђен;
Вунскакӑр ҫултан Атӑл хӗрринђе
Паршсем сӗтӗрсе ҫӳрени ҫинђен.
Калат вӑл:—йепле Пӑкађав тухса
Атӑл таврашне кисретни ҫинђен;
Ҫирӗмик ҫултах унпа ҫыпҫӑнса,
Улпут таврашне ҫӗмӗрни ҫинђен.
Ђылай каласан, урнӑ пек пулса:
— Ҫук, ӗнтӗ Пӑкађав! ҫирӗҫ ун пуҫне!..
Анђах, манас ҫук епир ун ӗҫне!..
Ак вун ҫул иртет... **епир унтанпа**
Йултӑмӑр виҫҫӗн ҫех ак ҫак ушкӑнра;
Ҫӳретпӗр ишсе сӗм-сӗм вӑрманпа—
Сӑртан—Атӑла, Атӑлтан—Сӑра,
Терӗ вӑл хыттӑн, пӳрте йанратса.
Тайпи ађипех, ӗнтӗ, лӑпланса

Кайса хĕсĕнет тĕпел кĕтесне.
Шик ҁун Йатарин, никам туймасла,
Ҁăмаť таçталла—çăва шăтăкне.
Ĕçсе пуç хĕрнĕ сивлек утаман
Тăраť ак тăтăш, утса çаврăнаť;
Вĕри шухăшсем пусма пуçласан,
Атăл йуррине йанратса йараť.
Йе, тăтăш, хăйне çамкаран çапса,
Пăхаť урайне—калаť кăшкăрса:
— Паххом! Ех Паххомккă! пурнăçу наҁ
Ирĕкшĕн тăрса хĕсрĕн кун-çулна.
Йалсем, çут уйсем, ĕнтĕ саншăн мар.
Асту: вунă çул йĕрлеççĕ сана!..

***

Хĕвел хăпарса йарах çутăлаť.
Тинех утаман тăрса кăшкăраť.
— Ну, ирĕк хусах!.. вăхăт хускалма:
Хура вăрман ав пуçлаť хумханма...
Хĕвел те хĕртет—тапранăр, çитет!
Вăрман тĕп пире паçăрах кĕтет...

Пĕр çамрăк хусах сăрнай кăларса
Мĕкĕртрĕ виç хут тăп йал çинелле.
Нумай та пулмасť, мĕкĕртнĕ саса
Пĕр вунă хусах, ушкăнпа пĕрле,
Йуналутсемпе пыраť сиктерсе.
Пĕри—йал çынне пыраť сĕтĕрсе.
**Ку çынĕ—Итрен, Алапит аҁи,—**
Кăшкăрнă çĕрле урама тухса.
Анҁах ăнмасса (тулнă ун шалҁи),
Ăна хусахсем тытаççĕ хуса.

Итрен йĕкĕте илсе çитерсен,
Кăвак утаман тĕпђет ун çинђен.
Ђылай тĕпђесен, йунаť вăл ăна:
— Ай-йай, упăте, çийетĕн пуçна!..
Кай!.. анђах, асту, сыхлан малашне—
Тет те вăл, хуллен сĕлтет Итрене.
Хăранă Итрен тăраť—шăнк! хытса.
Пĕр çĕтĕк хусах ик-виçĕ çупса,
Тĕкет те йараť ђĕтрен Итрене.
Вара, ку аран тĕрнет пўрт çумне.

***

Ђаккана тавпа кăшт алă парсан,
Йăлтрарĕ хуллен ватă утаман.
Унтан вăл вăшт-вашт лашине тытса,
Йаш çын пек çăмăл лараť утланса.
— Ађамккă, сыв пул!.. пуçсем пĕтмесен,
Куратпăр каллех,—терĕ вăл хуллен.
— Ăçталла есир?—тесе пăвăртсан,
— Ăçта ирĕкрех—епир те унта,—
Тейейђђĕç вĕсем, вĕçтерђĕç йалтан.
Лаша ђуппи çех кĕрлет вăрманта.

***

Хусах-таркăнсем кайсан, йал-йышсем
Ватти-вĕттипех хăпрĕç урама.
Пурин те пĕтми сăмах-йумахсем
Вĕçеççĕ анђах таса услампа.
Никамах та мар усал таркăнсем
Алапите çех шар[1]) турĕç ытла:
Мĕн пур укçине, пур мулне вĕсем

[1]) Шар—инкек

Ҫаратрĕҫ унне... тĕп турĕҫ ҫапла.
Виҫ ҫĕр тенкĕ кĕмĕл!—сахал укҫа мар,
Ăна вăл ваккăн пуҫтарнă вун ҫул.
— Кĕтмен ҫинђенех кун пек пысăк шар—
Йал-йыш тĕкмесен пулма пĕлес ҫук!
Ђакка патĕнђе ĕҫсе-ҫинĕрен,
Алапит ăнах хурат йунава.
— Ҫавах тĕп турĕ, тесе ун ҫинђен
Вăл шалăп пама ђупат кантура.

## VI. ÇАПĂÇУ.

Сасартăк хусах-таркăнсем килсе,
Улах йалсенђе çаратни çинђен
Хир йен йалĕсем те тавраллах пĕлсе,
Хăраççĕ хытах, ним кĕтмен çĕртен.
Алапит йышши муллă пуйансем
Çакна илтнипе ђĕтреççĕ сиксех,
Вĕсен сăмахпе мĕн пур йал-йышсем
Синкерлĕх кĕтсе хăраç ахалех.
Усал хыпара пурмис та пĕлсе,
Çарпусĕ патне çыраť ун çинђен.
Алапит елек тăрăх ĕненсе,
Ђаккана тытса пыртарма хушаť.

***

Алапит, ђăнах, ђарăнса тăмасť,—
Çилли сирлиђђен пуху пухтараť.
Унта Ђаккана тытса çыхтарма,
Хĕрўллĕ сăмах пуçлаť калама:
«— Ей, халăх! Халăх!.. пурăнăç хăруш...
Хуплаççĕ пире хусах-таркăнсем...
Куратăр пурте—йепле-ха ку хуш
Пурнатпăр ђунсăр, тăван йал-йышсем.
Малла тек лăпкă пунасђĕ тесен,
Ђасрах пурмисран пулăшу ыйтас;
Çав таркăн майлă Ђаккана халех
Тытас та çыхас, кантура йарас...—

Пурмис хӑй хушаҫ!»—терӗ Алапит.
— Хӑрушлӑ!.. шиклӗ!..—теҫҫӗ сасӑсем.
— Анҫах Ҫаккана ма-ха есӗ пит...
Тӑрнан ахалех?—теҫҫӗ хӑшӗсем.
— Ара, шухӑшлӑр, тӑрӑнса-и ку?..
Ҫакка, вӗт, хӑйех вӗсене ҫӗнсе
Пӗрле ӗҫсе-ҫинӗ... Ҫакка вӑл шӑршу.
Вӑл ҫын пурлӑхпе ҫӳрет кӗвӗҫсе,—
Тесе ҫуйхаҫ ҫиллӗ Алапит.
Пӗҫӗкҫӗ пуху тӗлӗнсех кайаҫ.
— Таса ҫын пуҫне пылҫӑкпа ан вит!—
Терӗ ак пӗр сас. Пуху хумханаҫ.
— Ҫим-ха, аҫасем, ҫим-ха—хулленрех:
Ҫаккан айӑп ҫук... ҫавӑн пек тӗлеш.—
Унта таркӑнсем кӗнӗ хӑйсемех,—
Терӗ шур сухал—ватӑ Тӗвенеш.
— Вӑл ма таркӑнсен пуҫне ӑсатаҫ?!.
Мӗн-ма ал параҫ?—пӗрле вӑл, йытӑ!
Ҫавах йал-йыша ҫаратма хушаҫ,—
Ҫӗмрет Алапит, йантратрӗ хытӑ.
— Ҫӑнах, ҫӑн та вӑл хурахсемпе тус...
Ҫыхас паҫ ӑна... Ҫыхас! ӑсатас!..
Ҫийет йала вӑл—усал шӑши-йус,—
Теме пуҫларӗҫ ик-виҫ уҫӑ сас.

***

Пуху кӗрлесе тӑнӑ самантра,
Ҫакка унта хӑй пыраҫ те кӗрет.
Алпит туссем, Ҫаккана кура,
Ак карҫӗҫ ҫӑвар,—Кушлавӑш ҫӗтрет.
— Акӑ вӑл килҫӗ!.. тытас та ҫыхас!

Пурмис хушат-тĕк мĕн пăхса тăрас?..
Ђакка йеннелле хускалђĕ пуху.
Вăйланђĕ пушшех шăй-шай! çуйхашу.
— Мĕн-ма ку мана? Мĕнле айăппа?
Кăшкăрђĕ сиввĕн тĕлĕннĕ Ђакка;
Хăйне çыхланан Текейе вăйпа
Кисет вăл пĕрре,—сирет айакка.
— Ђим-ха, етсемри[1]), елек хыççăнах
Çынна айăпсăр шыва йарас мар...
Еп хам, вĕт, пĕлеп—çав таркăнсемех
Хăйне те ăна хырнă сахал мар,—
Терĕ Тĕвенеш, утрĕ малалла.
Мĕскер ес лăркан? Мĕскер ес куртăн?
Пуçу кĕçтетим? кай айаккалла!—
Кăшкăрђĕç хыттăн ик-виçĕ кутăн.
Анђах Тĕвенеш хĕрет ак пушшех,
Кĕрет вăл утса пуху варнерех:
— Тен, тепле, Ђакка хур турĕ пулсан,
Ку Алапите тавăрни анђах...
Ђакка ун пирки ђăтнине курсан,
Пурте калăттăр: кирлĕ лайăхрах!
Терĕ Тĕвенеш хыттăн кăшкăрса.
Калађђĕ татах—ĕçе хускатса,
Анђах вăл хĕрсе кайнине кура,
Ăна Алапит йарат те илет.
Ăш-ђик урнипе, пĕр çур самантра,
Вăл ват шăм-шакка хуçса ўкерет.
Тĕлĕнђĕ кайрĕ пухури халăх:
Такамшăн, темшĕн тăрас такăш май!?

[1]) Етсемри—ађасемĕр.

Ђăнах та, ĕнтĕ, Ђаккийĕ лайăх,
Ăна çавăнпа шеллекен ђылай.
Тата Тĕвенеш сăмах те, темле,
Ђасах çаврăраť Ђакка йеннелле.
Ак вăл, çĕмрен пек, старике çăлма
Алапит патне пырса çапăнаť;
Ăна иртнишĕн таварса пама
Тытаť те илет, силлеме пуçлаť.
Анђах çак тĕлтех Итренпе Текей
Ларaççĕ сиксе Ђакка пуç çине.
— Ей, сирлĕр кунтан! Тăр, есĕ, муђей!..
Тейейђĕ Ђакка вăрçа пикенсе.
Ак сылтăм алне вĕçертсе илсе,
Пĕрех вăл сулаť хăрах йеннелле:
Алапит ывăљ—Итрен, вăшт! вĕçсе,
Кайаť сирпĕнсе çерем çинелле.
Унтан Текейе, вирлĕнрех тытса,
Ик-виççĕ кисет—çапаť çĕр çумне.
Текех вĕђĕхен Текей, ăнтăхса,
Выртаť ђылайђђен тăн пĕтнĕ йенне.
Шăртланнă Ђаккан аллисем ђулла.
Ак, ĕнтĕ, вăл халђ пĕлмест ђарăнма;
Пуйан пусмăрне—хирĕç пусмалла,—
Ун унсăр ђĕри пĕлмест лăпланма!
Вăл акă каллех тимĕр алсемпе
Алапит пўне тытса пăркăçлаť;
Текех хĕмленен хĕрў çиллипе
Тађка шăм-шака туптама пуçлаť.
— Ес-и, текех вăл мана тăрнакан?..
Ак парăп сана çынна хуптарма!..



— Ей сирĕлĕр кунтан. Тăр есĕ, муҫей!

Ес-и, вăл, çынна шыва йаракан,
Вĕрен вăт акă салтака сутма!..
Сана-а! акă! ак! тесе çех Ђакка,
Туптаŧ те туптаŧ тађка шăм-шакка.
Çак вăхăт Итрен, карсак пек siксе,
Çĕкленĕ пыраŧ таçтан ђĕренђе;
Пуху варрине вăркăнса кĕрсе
Сулаŧ вăл унпа Ђакка пуç çине.
Вĕрçĕн ђĕренђе хыттăн çапăнса
Шартах хуçăлаŧ хулпуççи çинђе.
Нимскер пулман пек, Ђакка ђалт тăрса.
Йараŧ те илет хайхи Итрене.
— Сана-и лекмен!.. тесе кăшкăрса,
Ăна çавăнтах пуçлаŧ лăскама.
Ак çак самантрах Текей тăрайса,
Ўксе такăнса пикенђĕ тарма.
Пуху—пур йал-йыш, аптранă йенне,
Кулаŧ те мухтаŧ Ђакка вăй-халне.
Куштан Алапит сикме те хăраŧ:
— Ей, халăх, ђарăр! упана!
Çийет ађама!.. шеллетĕр ăна...
Ей, ђарăн, Ђакка!—тесе кăшкăраŧ.
Анђах та пуху йăлтах Ђакка май:
— Ес ху пуçларăн,—терĕç иквиç сас.
— Ну çитĕ, Ђакка, патăн-çке самай,—
Терĕç кайарах, çавсемех пулас.
Итрен çемçелсе лăштăрах кайсан,
Ђакка тин ăна йараŧ алăран,
— Ах, ман Йаратав ма пулмарĕ-ши?
Вăл пулнă пулсан, еп парнаттăм-и?!

Мĕн пур халăхне ђăл-пар! тăваттăм...
Ку вăрă пуçне çыхса йараттăм...
Пурте вăрă май... есрел илтĕрех!—
Терĕ Алапит, тарăхса йĕрсех.
— Ес мĕн калаçан? Мĕн ĕç халăхпа!?
Кăшкăрђĕç ăна пурте пĕр саспа.
Алапит шăпăрт,—çĕклет Итренне,
Ăна çавăтса утаť кил йенне.
Антранă Итрен, аран сулланса,
Утаť ашшĕпе темскер ылханса...
Алапит арĕм, çитĕннĕ хĕрĕ—
Вăрçа тин сиссе ђупаççĕ хирĕç.
Çуйхашнă сасса Тайпи те çитсе,
Хайар Ђаккине кайаť сĕтĕрсе.
Тĕвенеш муђей, тинех ак темђђен,
Калаť пухăва Алапит çинђен.
Ђылай кĕрлесен, пуху саланаť.
Пурте тĕлĕнсе пĕççе шарт! çупаť.

***

Те йал халăхĕ Ђакка майлăран,
Те ђăн та вара хăй ўкĕннипе,
Çак вăрçă иртсен тепĕр-ик кунран
Пыраť Алапит Тĕвенеш патне.
— Тĕвенеш пиђђе! каçарах туршăн...
Ак ĕнтĕ ик кун çунаť ман ăш-ђик:
Тем ăсран тухса, ухмах, тем муршăн,
Еп çапрăм сана! Ех, тăралик! тралик!
Ес кирлĕ мара тапратса йани
Хуйхатрĕ пулас питех те мана...
Ах... ват çын çине аллăма хуни

Ытла та çылăх... Ех ку, пуç-тăна!
Каçарђђĕ, тур пул, Тĕвенеш пиђђе,—
Ирлет Алапит муђей умĕнђе.
— Мĕскер кирлĕ мар? Кирли çинђенех
Ху кутăн пирки тапратрăм ăна...
Сан вăрттăн ĕçне пĕлеп тĕппипех.
Ахаљ те Ђакка айăпсăр кунта,—
Терĕ Тĕвенеш сивлекĕн пăхса.
Нимскер пытарма май çукне курса,
Алапит йăкăшт тăрса ђăркуçлаť.
Уçаť ђĕрине, тилмĕрме пуçлаť:
— Тĕвенеш пиђђе! ђăн ман айăп пур.
Ђаккана сутса кăтартрăм хĕн-хур.
Çампах пуљ хăй те, çакна сиссех пек
Хупларĕ мана—турĕ мăн инкек.
Çавах, епĕ хам каçарап ăна.
Анђах есĕ те каçарђђĕ мана!
Ес—вата, ыр çын, хисеплĕ етем, —
Еп сан çиллӳне мĕнле-ха тӳсем?!
— Хаљ ан йăпăлтат! Тăр, апла ан лар!
Хама тивнĕшĕн сана ним те мар:
Ђакка хĕнлĕ çын—каллех ес тăрнан,
Асту ун пирки хăнаху хуплан!—
Терĕ Тĕвенеш сухал ђĕтретсе.
Алапит ура çине çĕкленсе
Каллех йăлăнаť:—Тĕвенеш пиђђе!
Итле, ак епĕ—турă умĕнђе:
Текех Ђаккана тытма тăрас çук,
Анђах çапах та ăна ырлас çук...
Пурмис хăй килсен:—йăнăшнă, тейĕп.

Мĕнле те пулсан ĕҫе сӳнтерĕп...
Ҫапла тунипе ес мана каҫар.
Леш—хай сăмахне хунтах тыт, ан сар.
Тĕвенеш сиввĕн, кулнă пек пулса,
Витӳллĕн, хыттăн хурат̆ каласа:
— Алапит, асту:
Ахалђ хур ан ту!..
Пурмис-тийекпе, ђиркӳ пупсемпе,
Ђараймăп—йавăҫ. Анђах ђĕрӳпе
Ан пул вĕсемшĕн ђăн-ђăн тĕрĕс тус.
Тултан шăлса ҫех вĕсемпе ес кус!..
Йал-йыш ҫынни те вĕсем май пулсан,
Пĕтес пат̆ вара—мĕнле пурăнан!
Канса сывлама пулмĕ апла май,
Халђ те вĕсенђен тӳсетпĕр нумай.

Алапит:

Ара, шухăшла, хайар пуҫлăха
Мĕнле-ха хăйас хуса кăларма?
Пырат̆ те кĕрет—ыйтат̆ вăл ĕҫме.
Пĕлес пат̆ вара унпа килĕшме...

Тĕвенеш:

Ак ĕнтĕ хăвах ђухла, Алапит:
Ес пĕр хăна ҫех шутлан вара пит.
Ђакка та ҫавах. Тискер утаман?..
Пырат̆ те кĕрет. Ăна мĕн тăван?..
Вăл сан пуҫлăхран пĕртте кайа мар;
Мĕскер вăл хушат̆—туртăнса ан лар!
Атту ҫавăнтах касат̆ те хурат̆.
Хусах вăл хайар, сан пĕлес пулат̆.

Алапит:

Апла вăл апла... анђах та мĕн-ма
Хистенĕ Ђакка мана çаратма.

Тĕвенеш:

Йурат-ха сана çаратнă анђах.
Вĕлернĕ пулсан пулаттăн шăпах.

Алапит (шăлăнса):

Ну, йурĕ унпа... тĕп пултăр ку ĕç:
Йал-йышăм усал,—пуçа та суђĕç...
Айта-ха, пиђей, кайар ман пата.
Пăртакçă «тутли» йулсађђĕ унта.
Йе, кăмăл пулсан, кунтах кўртерем:
Ĕçер те пĕрре, пĕтђĕр сăмахсем...
Хе-хе-хе!.. итле, Тĕвенеш пиђђе!
Ей, тем те курăн! Ех, ку çуттĕнђе!

Тĕвенеш:

Пулмасть пуљ ĕçсе, Алапит тиллĕм.
Шăлса ĕçтерсе мана çаврас çук.
Ес ху та куран—çуктăр ман çиллĕм.
Анђах еп сапна туслă пулас çук...
Пĕлен ес, мана пур йал хисеплет.
Йал ман сăмахран тухмасть те, иртмест.
Пĕр çав хисепе ĕçкĕ ĕçтерсе
Çаврасшăн ес хаљ ху май илĕртсе.
Кайах, кирлĕ мар санăн шерпетў!
Пулинђђĕ пĕрре ултавсăр ђĕлхў...

Алапит (урса):

Мĕнле вăл хисеп?! Пĕлместĕп ăна...
Питех хирĕçсен, палла ес мана:

Ес мар йал хуçи,—**хуçи ак вăл—ку!..**
Ђакку-мĕнĕпех ăсатăп, асту!—
Терĕ вăл, хăйне кăкăртан ђышса;
Лăст та ласт! силлет хура çўç-пуçне,
Çавăрђĕ măкăљт çавра куççене,
Тухаť те кайаť алăка ђышса.
— Кайах!— тейейђĕ шур пуçлă старик.
Сикмерĕ пулас ун пиçнĕ ăш-ђик;
Ађин ађсем çех, шикленнĕ йенне,
Ђупсах пек тарђĕç тĕпел кĕтесне.

---

## VII. ТĔШМĔШЛĔХ.

Уйар, шăрăх кун...
Ђăмаť сулхăма мĕн пур ђĕрĕ ђун.
Анђах унта та ларса тăнă ђух,
Шăна çинипе нимпе канма çук.
Çĕн купăс пекех ныйкаң ўпрене
Кăштах та пулин сиресђĕ тесе,
Лаçри, пўртсенђи вуђах тĕпсенђе
Кун-çĕрĕн сĕрĕм тăраť пелкесе.
Тайпи те пайан хура пўртĕнђе
Лараť ђыхăнса сĕрĕм ăшĕнђе.
Ђирпе ахлатан ађи çумĕнђе.
Ађи,—Иљушша, темрен, хăвăртах,
Вĕри тытнипе ўкет йăвăрах.
Пайан ир ђипер çўрекен ађа—
Вилес пек выртаť аран пашкаса,
Çумри кĕпи ун кăвак улађа—
Лађкам шыв тăраť вĕри тар йухса.
Кун пек ђир инкек çитсе пуснă ђух,
Иљушăн ашшĕ—Ђакка килте çук.
Виç кун ак çитет, вĕсем шăллĕпе
Кайсађђĕç тасңа—ђĕренђе ђĕлме.
Тайпи, пĕђђенскер, хытах шикленсе,
Ђĕнетваскасах йалти вĕрўçе.
Вĕрўçĕ-карђăк, ђире тишкерсе,

Ђасах пуçӑнаҭ имсамлас ĕçе:
Сывмар ађана çавӑраҭ вӑл виç хут.
— Ку ђир кĕлĕрен... Йĕкĕс кĕллинђен.
Асту, ан пултӑр каллĕ-маллĕ шут:
Халех ђӳклесе хывмалла каçђен,—
Тет карђӑк. Вара, курка шыв ӑсса,
Вĕрет вӑл шыва, сураҭ, пӑтратаҭ;
Алӑк хӑлӑппе каштасем çуса,—
Пӑтранђӑк шыва Илђуша параҭ.
Тайпи, ун амĕш, тата Кулине
Тӑраççĕ туса вĕрӳç хушшине.
Хуллен шӑвӑнса иртет ик-виç кун...
Илђуш ак пушшех пĕтет мĕскĕн ђун.

***

Ик кун çинђе тин, каçа хирĕçле,
Ђакка, шӑллĕпе, çитет вӑрмантан.
Илђуш ђирлĕрен, ӑш çуннипеле,
Вĕсем ђĕмсĕрех пулсађђĕç малтан.
Пĕрре, Йатарин хускалђĕ тӑрук,
Калаҭ пиђђĕшне:—кĕлрен пулас çук...
Ђим-ха, ку Илђуш йĕрĕхрен мар-и?!.
Хӑпарнӑ йĕрĕх ампарĕ çине,
Темскер, хушӑкран пӑхаҭ ун ӑшне,
— Еп йĕрĕх курап, тет хӑй йӑлкӑшса.
Нимпе те анмасҭ пырса хӑвађђен,—
Терĕ Йатарин хӑйаккӑн пӑхса.
— Çырлахтӑр анђах! ма ес, ывӑлсам,
Халђен ун çинђен пире каламан?
Пĕлмен пиркийех пĕтетпĕр ку, кам!

Ма карăр унта?—пăвăртат Тайпи.
— Пĕлетĕр, нихçан йулмаст вăл манран.
Кайсаттăм уйа... вăл пыҭĕ хыçран.
«Йулатăп», терĕ уйа тухнă ҭух.
Пăхап кайарах—ҭăнах Иљуш çук!
Калла килнĕ ҭух курап хайхине,—
Выртат шаккаса ампар тăрринҭе,—
Терĕ Йатарин, ларҭĕ сак çине.
— Çампах пуљ, апла... тет Ҭакка кўтсе.
— Ех ку аҭа-пҭа!.. Çавăнтан апла.
Пĕлмен пиркийех тем те курмалла!
Йĕрĕх ампарĕ çавтер вăл хайар,
Патне пырсан та унтан ырă мар.
Хуçи ун, Çатăк, вилни вăтăр çул.
Шăп вăтăр çул ун алăкне уçман.
Ех—ну, Йатарин, пăртак ăсу пул,—
Мĕнле ун çинҭен шăл çыртса пурнан?—
Тет Тайпи амĕш хыткан Иҭукка.
— Ҭăнах, еп маннă,—терĕ Йатарин.
Нимскер те ҭĕнмест ăш кўтнĕ Ҭакка.
— Нухрат тенкисем тупасҭĕ, еппин...
Ах ҭим-ха, Тайпи, шултра нухратсем
Ман пурҭҭĕ килте... кайам еп илме.
Вĕрўç имлени тухмарĕ ку, тем!—
Тет те Иҭукка ҭупат хăй килне.

***

Тĕшмĕш Иҭукка кайнă хыççĕнех
Шăпланҭĕ пĕр си хура пўрт ăшҭик.
Тайпи вырнаçат аҭи çумнерех;
Ун пиҭĕ çинҭе пĕр канăççăр шик.

Хавшак Йатарин, айăплăн туйса,
Выртаť лăпђăнса хĕртсурт кĕтесне.
Ăш çуннă Ђакка, пĕр сассăр тăрса,
Пăхаť Иљушне—выртаť вăл сикми...
Ак çак самантрах—шăт-шат! тăвайса
Çурлаť кив мађђан хăрăмлă кашти.
— Ех, ку—ырра мар... инкек!—тет Ђакка.
— Инкекĕ умрах... Виçĕм кун çапла,
Хура ђăх хыттăн, çунатне çупсах,
Автан пек авăтрĕ... Вăл та усаллах!
Çук, çав, ђĕрлеймĕ,—куљанђĕ Тайпи.
— Темле çав, темрен,—пуçларĕ Ђакка,—
Ахаљ те, ку хуш, йăвăр самани.
Ёнер еп илтрĕм: хир йенђе, паťкка,
Кашни йалтах пек çӳрет, тет, мур ђир.
Кипек йеннелле çынни-выљăхпех
Хирет, тет çав ђир... Тур, усала сир!
Епир анђах мар,— мĕн ђул йĕрӳ... ех!
Пурне те шеллеп,—тет Ђакка хуллен.
Халап хушшинђех çитет Иťукка.
Ун ывăç тулли нухрат тĕрлĕрен.
Каллех ак ђĕнмест, шăпланђĕ Ђакка.
Татах виçĕ кун иртет йерипен.
Ђӳклес, кĕл-кĕлес, хывас тĕлĕшрен
Виç кун хушшинђе пĕр тур та йулмасť.
Анђах пĕри те çаплах çырлахмасť.
Куллен имçампа муталаннăран
Пĕђĕк Иљушша тертленђĕ нумай.
Ӳт-тир хĕрелсе пыр тĕп шыçнăран,
Вун кун иртсен тин сывлаť вăл самай.

## VIII. ИКĔ ЙУНАВ ХУШШИНЂЕ.

Ĕççи умĕнсем...
Пĕрре çухалнă хусах-таркăнсем
Çитеççĕ каллех Кушлавăш йенне,
Тухаççĕ куллен улах йалсене.
Пуйан килсене хăйуллăн кĕрсе
Ыйтаççĕ вĕсем ĕçме-çимелли.
Кам хирĕç тăрсан, хытах хĕмлесе
Сехре хăптараççĕ. Çук çав ђĕнмелли!
Йăлтах улшăнаť тăп пурнăç йĕрки!
Пуйан Алапит те, хайарлăх пирки,
Тўсет ђылайах ак çак кунсенђе:
Пĕрре утаман хăйех хĕнесе
Кăштах вĕлермен ăна килĕнђе.
Вара çакăнтан пуйан Алапит
Пылпа çу пекех ђыслаť вĕсене;
Хуť те ăçта пыр, хуť те ăçта çит—
Хăймасť вăл çиме Паххомккă йатне.
Анђах вăл çавах, кунĕн-çĕрĕнех
Ђĕри-ђунĕпех кĕтет пурмиса:
«Пурмис çитейсен таврап вĕсенех!»—
Тет хăй ăшĕнђе, тем пек кĕвĕçсе.
Анђах пурмисĕ халђ хăй те аптраť,
Йала пыма мар, килте те хăраť.
Пурмис уйесран ыйтаť пулăшу,—

Ҫарпуҫӗ йарат҆ ҫакӑн пек ҫыру:
«—Салтак-мӗн йама—вӗсем ман сахал.
Анҁах сыхланма йарап хӗҫпӑшал...
Пит шиклӗ пулсан, Пукрав вӑхӑтне
Йарап килекен салтак отретне».
Кун пек ҫеҫ ҫыру памаст҆ нимле хал.
Памаст҆ вӑл канлӗх, хӑйулӑх—нимех.
Анҁах хавшани пушшех те усал.
Ҫампа та пурмис «ӗҫлет» пикенсех.
Ак вӑл ҫывӑхри сутниксем патне
Йарат҆ ҁас-ҁасах ҫакӑн пек приккас:
— «Патша йаҁӗпе ҫӗкленӗр пӗр харс.
Хӑвӑр халӑхпах Паххом шайккине
Ӑсатӑр тытса ҫарпуҫӗ патне...
Ун пек тумасан хӑвӑрах наҁар,
Пур пуҫлӑх йенҁен сире аван мар...
Йепле те пулсан ӗҫсе суптарас,
Вара тытмалла»,—тет вӑрттӑн приккас.
Вӑрман айӗнҁи ҁӑваш йалӗсем
Ик йенлӗ йунав хушшинҁе тӑрса
Аптраҫҫӗ питех. Ҁӗнмеҫҫӗ вӗсем.
Алапит хӑй те тӑрат҆ ҁаранса.
Анҁах, ак йалти ҫара ҁухӑнсем
Хусах ушкӑнне, паллах, вашават.
Пӑкаҁав йатне ҁӗртен таркӑнсем
Хӗн-хур сыннине хушаҫҫӗ ҫунат.

***

Хура кӗркунне. Ҫанталӑк йӗпе.
Ак, кайӑк хурсем карти-картипе

Киклаççĕ вĕçсе çут кăнтăр йенне.
Шур акăш кĕтӳ теваскаҭ хăй килне.
Çаралђĕ йăлтах Кушлавăш ђĕрçи.
Шураҭ те типет ун симĕс витти.
Хурхулă пиçен çуртрисем анђах
Лараççĕ çаплах тĕл-тĕл хумханса,
Йе хăмăл çинђех, ыраш пек лађах,
Сӳсен-мађăлта лараҭ кашласа.
Шурутлă васан çеремĕ çинђе
Мĕн пур выљăхĕ çӳрет ирĕкре.
Йал-йыш çыннисем те çак кĕркунĕнђе
Çӳреççĕ таврах, тĕрлĕрен ĕçре:
Хăш-хăшĕ вут-шанк касса хатĕрлет,
Хăшсем—кайăкра, хăш—авăн илет.
Савкай муђи те куланай пухма
Тухаҭ картсене шакăртаттарса.

***

Ђакка та ĕçлет йал-йышĕ пекех:
Вуник урапа нађар ырашне
Çапаҭ те хураҭ сӳсенĕ мĕнпех.
Унтан вăл пуçлаҭ ухата ĕçне.
Ђакка ађаран, хăй хунĕ пекех,
Хура вăрмана йуратнă ђунран.
Вăрман—уншăн ђун. Вăл хĕлĕ-çăвпех
Хăй сывă ђухне тухман вăрмантан:
Çулла вăл—çупех ђĕлнĕ ђĕренђе,
Хĕлле-кĕркунне—ђупнă кайăка.
Ак хаљ те Ђакка, кĕр кунĕсенђе,
Иленђĕ каллех хура вăрмана.

Вăл халĕ ĕнтĕ, сывалнăранпа,
Мăн хуйăх пуссах тăраймасть килте.
Хуйхи ун пысăк: куланай татма
Çить тенкĕ патнех кирлĕ çак хĕлте.
Тем пек ĕçлесен те çав тер укçана
Ниçта та нимпе тупса илме çук.
Çампа та Ђакка йалан вăрмана
Тухать те утать ăш-ђик вăркан ђух:
«—Сăсар, йе пĕр тил тепле çаклатсан—
Çавраттăм сывлăш, питех те самай...
Пĕр-ик сумлăха кайăк тир сутсан
Ђылай-çке çĕклет»,—тет вăл пĕрех май.
Çампа та Ђакка йалан кайăкра,
Анђах кайăкне çаклатать сайра.

***

Иртет хура кĕр—çитет сивĕ хĕл
Ђулланнă çĕр пить курнать-ха тĕл-тĕл.
Ђасах çил-тăман: вĕçет мамăк йур.
Варсем, сăртламсем шуралђĕç шап-шур.
Ах ку вăхăта хурах-таркăнсем
Тепрер тапхăра кайаççĕ кунтан.
Никам та пĕлмест—ăçтарах вĕсем:
Те Кăрмăш йенђе, те Улатăрта?
Ђўк уйăх çитсе тăнине кура,
Ĕçрен те пăртак пушаннă пирки,
Ђăваш йалĕсем тăваççĕ сăра,—
Пуçлаççĕ хĕрсех ђўклеме ĕçки.

## IX. АЛАПИТ ЁҪКИ.

Уйар, сивĕ каҫ.
Ҫĕн уйăх кăпка йурпа йалтрашаҭ...

Йалта кĕрсăри. Хăш-пĕр шăтăк лаҫ
Ҫаплах-ха ҫиҫсе сăра йухтараҭ.
Ҫак каҫ Алапит хăна пуҫтарсах
Кĕрхи мăнтăрпа ĕҫет ђўклеме.

Ун аслă пўрђĕ хĕвел ансанах
Вĕлле пек сĕр-сĕр пуҫлаҭ сĕрлеме:
Хавас сасăсем те ҫемҫе кулăсем
Пĕр вĕҫсĕр, пĕр пек йантраҫҫĕ унта,
Йут йал ҳăнисен лаши-ҫунисем
Карташ туллийех тăраҫҫĕ тулта.

Алапит кил-ҫурђ вырăсла манер:
Ҫурђĕсем шултра. Ҫўлĕ те ђипер.
Хуралт ҫисене тавраллах лап-лап,
Ђĕренђе ҫинђен пустарнă шулап.

Ун пўрђĕ катмар, йалта пĕр пĕђђен
Ҫĕн май, шурăлла лартнă тăсăк пўрт.
Ҫапла, Алапит пуйан хресђен,—
Пули-пулми ҫын ан ту унпа шўт!

Ҫампах ĕҫке те вăл вăйлă ĕҫет,
Вăтăр ҫухрăмран хăна ђĕнтерет.

***

Пӳлмексĕр, вăрăм, хура сăнлă пӳрт—
Сар хурăн хăйпе тăрат çуталса.
Кӳрĕш хĕрађи—шур питлĕ Алтӳт
Унтах хăййине тăрат майласа.
Кайри кĕтесре, кăнтăрла йенђе,
Тăпа çурти кăшт çунса ђăлкăшат.
Аран йăлкăшан çурта умĕнђе
Ђӳклеме пăтти пăсланса ларат.

***

Пырас хăнасем пухăнса çитсен,
Креке умнелле пырат Шерпике
(Шерпике—хуçан ыр хĕрĕ иккен),
Пырат те калат хĕрĕнк ашшĕне:
— Атте, теп, атте! Лартас пуљ апат...
Пуçлас çĕн пиђке... шерпетне ăсас:
Хăш-пĕр хăнасем йурласшăн пулас,
Терĕ Шерпике ăшшăн, тарават.
— Йурат, хĕрĕм, ларт... пуçла шерпетне.
Çапла пуљ, карђăк, çиме те вăхăт?..
Тет те Алапит пăхат ик йенне.
Арăм килĕшет. Креке çум шăпăрт.

***

Ик-виç самантран сĕтел çи тулли:
Вун тĕслĕ апат, сăра та шерпет...
Кăнтăр кĕтесре çунакан çурти
Пăђăх сывлăшпа аран вĕлтлетет.
— Тăрар пуљ, ађсем, турра кĕлтăвар.
Ђӳклев йађĕпе пиллĕхне ыйтар...

Терĕ уйăх пек шур пуçлă старик,—
Хир йенĕ хăни—хисеплĕ Тепик.
Пÿрт тулли халăх тăрат̆ шакăрах,
Тĕллеççĕ пурте çурта кĕтесне.
Тепик, ђи ватти тăрат̆ маларах.
Алапит тăрат̆ ун сылтăм йенне.
Çири кĕрĕкне лашт йÿле йарса,
Хăрах хул хушне çĕлĕкне хурса,
Шур пуçлă Тепик тапратрĕ кĕлле.
Йантрав пÿрт шăпах пулат̆ ку тĕле.

Ей, пĕсмĕлле. çырлах...
Турă, ан пăрах—тесе пуçлат̆ Тепик,—
Алапит хăй кил-йышĕпе
Ђÿклеме пиђки пуçласа,
Виç тĕслĕ тырпул сĕђĕпе
Ђÿклеме курки тытса,
Ыра турă, сана асăнат̆, витĕнет,
Килнĕ хăнапа пĕрле:
Кÿршĕ-аршăпа, йалĕ-йышĕпе,
Пĕлĕш-тантăшпа асăнат̆, витĕнет,—
Çырлах, турă, амин.
Ей турăçăм! Çура çитсессĕн,
Виç тĕслĕ тыррăма-пуллăма
Акма тийесе кайсассăн
Усал-тĕселтен, синкек-сехметĕнђен
Сыхлассамђђĕ, упрасамђђĕ, турă.
Ку сăмаха епĕ мар,—Алапит калат̆.
Ана çине çитсе утне-тумне кÿлсен,
Шăрт касса тĕрен хăпартма пулин те
Парасăнђђе, турă.
Ку сăмаха епĕ мар, Алапит калат̆.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Кĕлтурĕ ђылай шур пуçлă старик,
Пурин те лăштах çемçелђĕ ăш-ђик.
— Ну çитĕ, ађсем, ларар вырăна,—

Терĕ вăл хуллен, кĕлле пĕтерсе.
— Ҫитет-ҫке,—терĕ Алапит ăна.
Лараҫҫĕ пурте хавассăн ҫиҫсе.
— Ђӳклеме курки!.. терĕ Алапит.
Пурне те алла тыттарђĕҫ курка,
Шерпет сăрипе тултарнă курка.
Нимле сас-ђӳ ҫук, шăпах тулли пӳрт.
Пур пек ват ҫынна курка тыттарсан,
Каллех ак Тепик тăмашкăн хушаť,
Ђӳклев йађĕпе тулли кăмăлтан
«Ҫĕрĕҫ кимĕнне» йурлама калаť.
Тăраҫҫĕ кашăл! Ваттисем умра.
Тăсаҫҫĕ харăс авалхи йурра:

Аки пĕр сухи тивлеђпе,
Ĕҫер-и кăна-а-а ҫийе-ер-и-и,
Ĕҫер-и кăна-а ҫийе-ер-и,
Выљар-и халĕ-ĕ кула-ар-и.
Хурăнлă ката хыҫĕнђе
Ахарса ака тăваҫ тет,
Хура та вăрман ҫумĕнђе
Шăхăрса сӳре сӳреҫ тет...
Улта пĕр лаши акара,
Ҫиђĕ кĕсри сӳрере...
Аки пĕр сухи тивлеђпе
Ĕҫер-и кăна ҫийер-р...

. . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . .

Ҫĕрĕҫ йуррийĕн аваллăх кĕвви
Уҫнă тĕн [1]) витĕр йанраť тулалла.
Вак ҫуртлă луртра ђăваш йал хушши

[1]) Тĕн—тĕпел кĕтессинђи пĕђĕк ђӳређе.

Ђунран тинкĕрсех тăнлаŤ ку йурра.
Йурри пĕтсенех ак пурте каллех
Лараççĕ харăс харкам вырăнне.
Тинех ĕнтĕ, хаљ, ђăрмав иртсенех,
Йурри те, ташши те тулаŤ пӳрт ăшне.
Кĕрнеклĕ креке—сарлака сĕтел—
ЛараŤ пăсланса апат-сăрапа.
Хĕрарăм кĕтес—нар саклă тĕпел—
Сĕрлет те йантраŤ хавас йурăпа.
Креке пĕр йенђе кĕслеçĕ Йуксар
Тĕнкĕлтеттерет кивĕ кĕслине.
Ӳсĕр хăнасем мăшăрпа, вăр-вар
Тăраççĕ, тĕвеççĕ урай хăмине.
Алапит хĕрĕ, кинĕ, ывăљсем
Хăна хушшинђе арканса кайса,
Майпе ташша та йурра шăратса
Кумаççĕ текех сăра куркипе.
Ак ку самантрах кукша стариксем
Сĕтел хушшинђе сарăлса ларсах
Ним шав ҫук пекех йĕркеллĕн, пĕртем,
Йумах-халапа çапаççĕ çаплах.
Алапит, тулли çырă питлĕскер,
Хура çӳç-сухаллă, хура куçлăскер.
Тађка пĕвĕпе сарăлса ларса,
КулаŤ, выљатаŤ кăмăлне уçса.
— Ĕçер-р-р, тăвансем,—тет ак Алапит,—
Çаратрĕç... çавах аптрамăп-ха пит:
Пин пăт тырă пур, çирĕм пăт пыл пур,
Кĕтӳпе сурăх, ултă ĕç лаши...

Шур пӳрт тулли йыш,—ађамсем маттур...
Мĕн-ма кулђанас, ма ĕçес мар-ши?!.
Кăçал çиђ ĕне çӳрет картара,
Утмăл купа утă çултăм пахђара...
Хусах-таркăнсем урăх тивмесен
Алапит пурнаŷ! Пурнаŷ вăл, пĕтмен!..
— Вĕçех ĕнтĕ, вĕç! Çавăн-çке ђĕлхи!—
Терĕ йунашар ларан карђăкки.
— Нимскер вĕçмесĕр, ђăн утмăл купа.
Ђăн!.. ђăн!.. терĕ вăл хавас сасăпа.
— Хе-хе-хе... утмăл купа тан!
Ман хĕрĕх анђах... ара, пахђу сан
Ытла та пысăк... ха-ха-ха... ехĕрђĕ Текей.
Шавлаŷ те кĕрлет тулли кĕреке.

Алапит:

Пахђа ман пысăк—шăп ик теçеттин...
Сан пĕђĕк пулсан, аслат ес, еппин!
Карта тытассах ӳркенетĕр çав.
Кам—çук, тет, хирçет—вăл çемçе, йулхав.

Текей:

Кахал та пуђ те,—çук еп унпа мар:
Ытла выçăхсан йалтан аван мар.

Тепик:

Ей-йай, тăвансем, сирте хађ аван.
Ав, пирĕн йенђе çĕршыв хĕсĕнет.
Килейђĕ улпут таçтан-çăваран,
Ђи ырă çĕре касаŷ те илет!..
Тата вырссене тултарђĕ хăйпе.
Каллех килет, тет. Турах вĕсемпе!..

Текей:

Ђим, Кулђтсав улпут теҫҫи ҫав ӑна?—
Ђёрлех вӑл ҫийет, тет, алри ҫынна...

Тепик:

Кашни ернерех ун хресђенёсем
Тӑват кун ёҫлеҫ улпутшӑн анђах.
Виҫ кунне аран илеҫҫё хӑйсем...
Васкавлӑ ёҫ ђух—ерне уншӑнах.
Ёҫленшён улпут пёр пус та памасҭ.
Ёҫрен пӑрӑнсан—ђунна кӑларасҭ!
Тата, мӑшкӑлла, ҫав мур улпутах
Хёрпе кађђӑна хӑй мӑшӑрлатасҭ.
Илемлё хёре кађђа парсанах,
Малтанлӑх каҫсем унпа хӑй ҫывраҭ...
Йутри ват хӑна сӑмахне илтсе
Тулли кёреке кайрё тёлёнсе:
— Ай тур ҫырлахах!.. ав ӑҫта хён-хур!
Ун пек пурнӑҫран мён кётмелли пур!?
Апла пирёнтен хёнтерех вёсен...
Терёҫ Тепике ик-виҫё йенђен.

Тепик:

Хённи ёнтё пур. Анђах ҫав вырӑссем,
Хӑйсен улпуђё ёшкёртсе-и, тем,—
Ђӑваш ҫыннине ҫийеҫҫё ытла;
Таптаҫҫё уйра ӳсен тырпула...
Вӑл вырӑс йалне пырса та ан кёр,—
Ватти, ађи-пђи витлет тем те пёр...
Урам хушшинђех картлаҫҫё ҫулна,

Ђипер çёртенех пересçĕ ђулпа..,
— Хайар халăх çав... тискер етемсем..
Турă инкекĕ, тесçĕ ватăсем.

Текей:

Тискер етемсем... татах вăт темле:
Татах ик улпут килет, теç, кунта...
Хаљ çеç пĕр улпуђ пăхрĕ пĕр тĕле.
Хура çĕре-çке шыраççĕ ытла!

Алапит:

Ей... лутра вырăс вăрман касаť, тет.
Ђĕлхе-çăвара çыртмалли килет!

Тепик:

Нађар ку, нађар... Хĕсеççĕ каллах.
Вăтăр çул ĕлĕк çакна шутламан.
Вăрманђђĕ тавра—пĕтет вăл ђасах.
Ак уй те йулмĕ каплах хăтлансан!
Çултан çул ўсет тўлев куланай,
— Леш, пуп таврашсем хĕсеççĕ хăй май!
— Çапла-çке, çапла... тесçĕ хăнасем,
Лапсак пуççене сулласçĕ хăшсем.
Киђемлĕ халап пусасран пулас,
Хĕрĕнк Алапит тапратрĕ хавас:
— Ей-нў, тăвансем, ђĕр пуç пурăнаť...
Ак, сывă пулсан, çулла ман туйсем:
Итрен авланаť, Шерпике кайаť.
Анђах сывăхра çук-ха мăшăрсем...
Ну... тупăп çирĕм-вăтăр çухрăмран,—
Терĕ Алапит, карĕ халапа.
Ќĕреке тулли халап пынă ђух,

Тĕпел кукринҫи ҫамрăк арăмсем
Йараҫҫĕ йурра вĕҫĕ-хĕри ҫук.
Илемлĕн йантраҫ кĕсле хĕлĕхсем.
Таҫка Алапит, халапне ҫарса,
Ĕҫкĕ хăватне сăнама тăрать.
Курать вăл—ĕҫки питех те паха,
Мăн пўрт ăш-ҫикки шавлать, арканать...
Хайхи талт! сиксе, кĕсле кĕввипе,
Матур йĕкĕт пек ташша ҫаптарать.
Сиксе ĕшенсен, сăвла йуррипе
Каллех кĕреке хушшине ларать.
— Ей-ну, куккамҫăм, мĕн-ма шăп ларан?
Йурла-ха пĕрре авал йуррине!..
Йурру-сăввусем питех тутлă сан,—
Терĕ Алапит—Типек куккăшне.
Тепик, ҫутă пуҫ, туртăнсах тăмасть—
Пĕр кивĕ йурра шăратма пуҫлать:

Ан ух пуҫна, лашам, кăвак лашам,
Инҫе ҫулна ҫывăх тăвасшăн,
Ан тапăртат, лашам, ырă лашам,
Тĕпсĕр ҫырма урлă ай каҫасшăн.
Ан сик, ҫĕрем, ан сик, ан та хумхан,
Хĕн пурнăҫна ирĕк ай тăвасшăн,
Ан шухăшла, пуҫăм, тек ан хускан,
Патша саккуҫ урлă ай пурнасшăн...

Аваллăх йуррин хурланҫăк кĕвви
Кĕрлек халăха шăп тăвать пĕр си.
— Ку йурра Илҫхун, Пăкаҫав пĕтсен,
Куҫҫўлпе йĕрсе йурлан, тет пĕҫҫен—
Терĕ ват Тепик. Кун хыҫҫăн каллех
Тĕрлĕ халапсем карĕҫ хĕрўрех:

Ҭапратрĕç таçти, авалхи çинђен—
Пăкаҭђав вăрçи... Паххомкка çинђен.

***

Ире хирĕç тин ĕçкĕ лăпланаҭ:
Йал-йыш, кӳрĕш-кӳп киле саланаҭ,
Йут йал хăнисем выртрĕç саланса...
Тулта автансем автаç шарлатса.

## X. ПУППА ТЕЂУК.

Хаваслă ĕçкĕн иккĕмĕш кунĕ.
Шăп кăнтăр тĕлне хăна пухăнаť.
Алапит хĕрĕнк, ђĕрĕ ун ђунĕ—
Пуплет вăл, йăлтраť, хавассăн йурлаť:
Ăна çĕклеме, йут йал хăнисем
Пуçлаççĕ хăйсен хир йен йуррине.
Йантраççĕ уççăн Итрен сăмахсем.
Йуксар та çитсе тытаť кĕслине.
Сасартăк хапха кăрринк! уçăлаť.
Хуçа хĕр, хăна килет пуљ тесе,
Ђўређе витĕр васкаса пăхаť.
Анђах, кĕтмесле, кайаť çўçенсе:
— Атте, тет, пăх-ха, пăх-ха хапхана,—
Пуппа хай теђук килеççĕ, асту!..
Терĕ Шерпике вут пек хыпăнса.
Пўртре пĕр самант тухаť пăлхану.
Ах, ђим... ăçтађђĕ вырăс турри çав?
Ађсем! ей... илĕр, сак айне кĕрсе!
Ес, тух-ха хирĕç, тух, тух, Йаратав!
Терĕ Алапит шыв пек ђўхенсе.
Йаратав—хуçан уйрăлнă ывăљ,
Ђасрах вашкăнса тухаť пўрт ўмне,
Ђи кĕçĕн ывăљ—хурамша Йымăљ—
Иккона тупса лартаť вырăнне.

Алапит хӑй те, шерпет тултарса,
Пупсене хирӗҫ тухмашкӑн васкать.
Ун арӑм сисми, майпе йӑпшӑнса,
Тӗпел кӗтесне кайса вырнаҫать.
Кӗреке ак пушах.
Пӳрт ӑшӗ шӑпах...
Итрен хӑвӑртрах мӑн ҫурта ҫунса,
Ҫӑт ҫыпӑҫтарҫӗ икконӗ ҫумне;
Ҫӳклев пӑттине вӑшт та вашт пухса,
Лартаҫҫӗ ҫасрах нар сакки айне.
Хайхи пуп кӗрет, ун хыҫҫӑн—теҫук.
Йӗнрен тин тухнӑ упасем пекех,
Вӗсем иккӗш те мӑклӑ тумсемпе,—
Хайар сиваҫи нихҫан ҫыртас ҫук.
Урай варрине ҫаранса тӑрса
Таҫка тумсене хывса пӑрахсан,
Пуппа мӑн теҫук йупа пек хытса
Пур хӑнасене тӗсеҫҫӗ малтан.
Унтан ҫӑмлӑ пуп кӗтессе пырса,
Хӑма иккона тинкерсе пӑхать.
Кӗҫех вӑл мӗшӗл ҫаврӑнса тӑрса:
— Сух-сух ту! сух-сух!—теме тапратать.
Теҫук, Алапит патне ҫывхарса:
— Сух-сух ту, сана, Ҹоксантӑр хуҫа!
Хоспоть сух-сухас!.. терӗ кӑшкӑрса.
Пур пек хӑнасем усаҫҫӗ пуҫа.
— Турра кӗлтума хушаҫҫӗ вӗсем;
Тӑрар-им, еппин, савнӑ хӑнасем! —
Терӗ Алапит. Тӑраҫҫӗ пурте.
Пуппа мӑн теҫук тӑсаҫҫӗ кӗлле:

«—Отђă на-а-аш... ише ççси на непеççе...»
Йурра мĕкĕрсе йурланă ђухне
Вĕсен аллисем пĕлмеççĕ канма;
Йурра пĕтерсен пур хăнасене
Хушаççĕ виç хут ӳксе пуççапма.
Кĕлле пĕтерсен, пуппала теђук
Лараççĕ кĕрсе сĕтел хушшине.
Хаљ ĕнтĕ унта пĕр хăна та çук—
Лăпђăннă пурте алăк кĕтесне.
— Ех ку, пĕтермĕш, мĕншĕн килђĕç-ши?
Ĕçки пĕтсен хуй йурĕђђĕ килме,—
Тесе хирĕçет хуçа карђăкки.
Кӳрĕш-арăшсем шăваççĕ килне.
Хăнисем кăмăл хуçнине кура,
Алапит хăй те имшерсе ӳкет:
— Кусем кĕтмесле килнĕ-мĕн, ара...
Ђиркӳ хырçине пухма килнĕ, тет.
Епир ĕçнине пĕлтернĕ пулас...
Пĕлсен, веç, кунта вĕçтернĕ хавас,—
Терĕ Алапит кăшт пăшăлтатса,
Салхуллă Тепик патне çывхарса.

***

Иртет пĕр сехет. Пӳртре урăхла.
Пур пек хăнасем пĕрĕн-иккĕнех
Шăваççĕ тухса унта-кунталла.
Алапит çемйи йулаĭ пĕђђенех.
Малтан тиркешнĕ пуппала теђук
Хаљ ĕнтĕ айта—çăтаççĕ йăлтах!
Анђах пӳртĕнђе никам ларма çук,

Кам пырса кĕни—тараҭ кайаллах:
Теђук хуҭ кама тытаҭ çулăхса—
Хĕрес çакнине пăвăртса пăхаҭ;
Пуп хăй çилхине салтса йарса—
Йăлт та йалт! сикет, сăхсăхма хушаҭ.
— Киремет виђнă—хоспоҭ пор!—тесе
Йантраҭ, кăшкăраҭ, «Отђе наш» йурлаҭ.
Тепик старике кĕтессе хĕссе
Çумри хĕреспе çамкаран шаккаҭ.

***

Каçа хирĕç тин, вил ӳсĕр пупсем
Ӳкеççĕ лапах креке хушшине.
Анђах ку тĕле çук ĕнтĕ хăнасем.
Çут пуç Тепик те шăваҭ кӳрш килне.
— Ђĕнмен хăнасем—йытран та усал.
Йĕрки-мĕн сахал...
Ăнмарĕ ку пит!..
Пĕтерђĕç ĕçке,—терĕ Алапит.
Каç... Йаратав та çамрăк арăмпе,
Ађине йăтса, утаҭ хăй килне.

## XI. ТУРĂ ЙАЂĔПЕ.

Ђӳклеме йађĕпе ĕçен хресђенсем
Нимле мăн ĕçе тытмаççĕ питех.
Тухмаççĕ йалтан пур пек йал-йышсем:
Каçпа ĕçкĕре,—ирсерен килтех.
Çанталăк сивĕ. Сывлăш тĕлĕрет.
Ирпе пит ирех, хăйăсем сӳнсен,
Ђĕренђе витнĕ хура пӳртсенђен
Кăвак-шур сĕрĕм пăлкаса вĕçет.
Çак кун Ђакка та хăйĕн килĕнђех,
Пӳртре урхалăх вĕçлесе ларать;
Шăллĕ—Йатарин, алăк патнерех,
Саккăр çăпати хуçса калăплать.
Тайпи тĕпелте йухтарать сăра.
Илђушĕ çаплах-ха ăшă ăйхăра.

***

Ђаккан, вуттине ирех хутнăран,
Хура пӳртĕнђе йӳçек сĕрĕм мар;
Мађђи-çтенисем йăм-хăрăмлăран,
Тул çутăлсан та, пӳртре çутах мар.
Тĕн ђӳређине хупса ăш ансан
Хура пӳртре те лармашкăн ђипер;
Ђакка çемйи те, çаплах ак пайан,
Аван сывласа кĕтмест ним синкер.

— Пиҫҫе, ес пӗлни: ӗнер каҫпала,
Алапит хӗрсе ӗҫме тапратсан,
Пыраҫ кӗрет, тет пуп теҫукпала..
Вара, хӑнисем пӗри те йулман,—
Терӗ Йатарин йалкӑшса кулса.
— Илтсеттӗм ӗнер еп,—терӗ Ҫакка.
Кулӑшла халап кайаҫ тапранса.
Ак ҫак сехетрех уҫӑлаҫ хапха.
Пӑхаҫҫӗ—хайхи пуппала теҫук,
Тата вӗсемпе—лавҫӑпа сутник!
— Мӗскершӗн кусем?! Нимӗн пӗлме ҫук!
Ҫӗре—шӳ-ӳ! тӑваҫ, ҫӳҫенет ӑш-ҫик...
Ак кӗҫӗҫ пӳрте. Пупӗ ҫи малта:
— Сторовӑ, хоҫа! тет те вӑл, ҫасрах
Иртет тӗпеле, пӑхаҫ тавралла.
Нумай та иртмест, иккӗш те харӑсах:
— Ӑҫта сан иккон?—терӗҫ мӑн саспа.
— Еп... иккон илмен... еп ҫӑваш тӗнпе...
Тапратрӗ суйма аптранӑ Ҫакка.
— Мӗскер ыйтаҫҫӗ?—терӗҫ шиклӗхпе
Йатаринпеле Тайпи хыпӑнса.
— Вырӑс туррине ыйтаҫҫӗ вӗсем...
Еп ҫук теп,—терӗ ҫыхланнӑ Ҫакка.
— Кунтах вӑл, ҫӳлтех... халех ак илем,—
Терӗ те Тайпи, уҫрӗ пӗр сакка.
— Ах ку, хӗрарӑм, пӗтерҫӗ ухмах!
Тейейҫӗ Ҫакка, кӑшт пӑшӑлтатса:
— Ҫуках тен пулсан—ырҫҫӗ хамӑрах...
Хаҫ ӗнтӗ мӗн тес?! терӗ вӑл урса.
Хура хӑма пуҫ тӗсне курсанах

Теђук сăхсăхса çулăхаť ăна:
— Паťťушкă, асту, пăх-ха иккона—
Куçсем ун шăтăк! Мĕнле ку капла?!
Хăйсем шăтарнă пулмалла ăна...
— Калтун! Киремет!.. Усал ђĕпписем!..
Тамăк хураннех сире хумалла...
Мĕнле тўсейнĕ хоспоť анкĕлсем!
Халђ сирĕн куншăн ĕмĕр çунмалла...
Тавайккă пăхас—пор сирĕн хĕрес?
Кил, сотник! Халех пăхас, тĕрĕслес...
Ак пуп, мăн теђук, ђи хыçра сутник,
Виç çын виç саспа мĕкĕрсе йарса:
— Кăтарт хĕресне! Тухатмăш,—ан сик!!!
Терĕç Ђаккана хĕсме тапратса.
— Хĕрес çухалнă... кайăр çăвана!—
Терĕ те Ђакка, тĕкрĕ теђука.
— Тавай лешсене! Лешсене пăхар,—
Теççĕ хайхисем. Тытрĕç Тайпине.
— Çухалнă... çук, çук! терĕ вăл хайар,
Çапаť те сирет теђук аллине.
Ак çак хушăрах хыçри Йатарин,
Сентре çийĕнђен хĕресне илсе,
Çакаť сисмесле: Ак пăхăр, еппин—
Хĕрес манăн пур,—тет вăл шикленсе.
— Вырăс тĕнпе-и? мĕнле сан йату?—
Терĕç Ђаккана пуппала теђук.
— Йалта еп—Ђакка, хут çинђе Йакку.
Çапла йат хунă мана пĕђĕк ђух.
Шыва кĕртнĕ те, пурнап ђăвашлах,—
Терĕ хай Ђакка хĕрўллĕ саспах.

Теҫук, кёсйинҫен хутсем кăларса,
Ҫакка сăмахне кармаклаť ҫырса.

Пуп:

Тата аҫу сан мĕнле тĕнпеле?
Тавай-ха, кăтарт,—пур-и ун хĕрес?

Ҫакка:

Вăл вырăс тĕнпе... хĕресĕ тепле?
Ҫаксаҫҫĕ. Анҫах ăҫтан ман пĕлес?

Пуппа мăн теҫук ҫарҫĕҫ куҫсене,
Лăс-лăс вĕҫтерҫĕҫ вăрăм ҫўҫсене:
— Тавай виҫ тенкĕ! Тавай, халех туп!
Ес унсăр пĕтен,—каттăркă! тет пуп.

Ҫакка:

Ҫук, ҫук, пуп муҫи, ним те параймасп.
Пĕр пус та саншăн ниҫтан тупаймасп.

Пуппа теҫук:

Мĕн-ма шăтаран иккон куҫсене?
Мĕн-ма ҫакмастăр хоспоť хĕресне?..
Виҫ тенкĕ саха-ал!.. Асту, памасан
Ҫыратпăр халех—миҫе айăп сан!

Сутник:

Ҫакка, ну ҫăнах куншăн лайăх мар,
Каҫарҫҫăр тесен—мĕн те пулсан пар.

Ҫакка:

Тайпи! Йатарин! ех ку тамаша...
Кам пăсрĕ капла вырăс туррине?
Кун пек пуласса илмен те ăша!—
Терĕ те Ҫакка, ларҫĕ сак ҫине.
Ак ку самантра пуппала теҫук

Çитерђĕç хĕссех виç тенк пăвăртса.
— Ђакка, вĕсенђен ахалђ йулас çук,—
Парсам!.. тет сутник пуп майлă тăрса.

Пуп:

Ђăваш—киремет! Ђăн туррун куçне
Мĕн ăспа хăйса шăтартăн апла?
Асту, ђĕрĕллех кайан çĕр тĕпне!
Пуçа çăластăк—укçа памалла...

Ђакка:

Пĕр пус та ман çук. Ан кĕтĕр манран...
Пĕтсен те пĕтем, çунам тамăкра.
Епир ак халђ те пурнатпăр аран:
Ђĕрлех тамăкра, йалан асапра...

Пуппа теђук:

О-о, мĕн калаçать, усал киремет!..
Кăна пурмиса калатпăр халех,—
Сана йусама аван вăл пĕлет.
Йе халђ—виç тенкĕ тўле ирĕклех!
Укçа памасан виç пуç вылђăхна
Тытатпăр пайан... пăхмастпăр сана!

Шăлт кўтнĕ, тĕппех шăртланнă Ђакка
Ђăтмарĕ текех пуппа теђука:
Пĕрех кăшкăрать вăл, хайаррăн тапать,
Сасартăк пупа çўçрен çулăхать:
— Есир-и есре-ел, шуйттан çилхисем,
Çăтасшăн ђĕрлех выç çыннăн пуçне!..
Сире еп, на вăт, хĕсме вĕрентем!
Ак, кам вăл, тамăк сунать çынсене,—
Тет Ђакка, пуçлать пупа лăскама.



— Есир-и есрел, шуйттан сылхисем,
Çăтасшăн ђĕрлех выç çыннăн пуçне
Сире еп на вăт, хĕсме вĕрентем.

Арăмпе шăллĕ ђараççĕ ăна.
Тăсмак, мăн теђук тухаť те тараť,
Йăлт-йалт пăхса çех вĕçет урама.
Хăранă сутник Ђаккана ђараť,
Ђунран йăлăнса хушаť лăпланма:
— Ей, Ђакка ађам, пĕтен хăна-ху...
Ăсран тухрăн-им—мĕскер хăталанан?
Мана та усал. Каçмасť ĕнтĕ ку!—
Тесе ÿкĕтлет сутник Утихван.
— Хăна лекиђђен ђасрах тухса кай!
Йытсем пек ес те çавран вĕсем май,—
Тесе кăшкăраť Ђакка сутнике.
Çантах вăл вашăлт! алăка уçса,
Малтан сутнике, ун хыççăн пупне
Йараť сирпĕтсе çурăмран тапса.

Пуппала сутник, хапхаран тухсан,
Йунарĕç алпа Ђакка йеннелле.
Ђакка шарламасť, хумарĕ хыçран.
Кĕрет вăл пÿртне, лараť тĕпеле.
— Ес пуљ-ха кăна, Йатарин, итле:
Мĕн турăн, ухмах, путсĕр ђĕмере!..
— Еп мар çав, пиђђе. Ман çине ан хуш:
Çуллах, вĕт, ăна шăтарђĕ Иљуш,—
Терĕ хăранă хавшак Йатарин,
— Иљуш, вăл—ађа. Ес хушнă, еппин...
Ăна хушма мар,—санăн ђармалла.
Ак тÿс хаљ ĕнтĕ: мĕскер курмалла?!—
Терĕ тарăхса аптранă Ђакка.
Нимскер ђĕнеймест Йатарин ăна.

Тайпи пĕђђенех лăпланма пĕлмест:
— Ех, Ђакка, пĕтрĕн... ех!.. тесе çӳрет.

Ђакка:

Пĕтсен те пĕтеп—мана ырри çук:
Ак кĕç куланай ыйтаççĕ каллех—
Пуç сыв йуласса ан та кĕт ун ђух.
Киле пăрахам та тарам ак халех...
Ак килеç кунта хусах-таркăнсем:
Кайам вĕсемпе—ирĕкре çӳрем...

Тайпи:

Ђаккаçăм! Ђакка.. есĕ хăтăлан—
Пире кам валђи тăкса хăваран?!
Ађу-пăђупа ăçта ман кайас?
Пĕтестĕк пĕтес,—пĕрлех пурăнас.

***

Ђаккашăн кĕтмен пăлхав кӳнĕ кун
Хĕрӳ шухăшпах иртсе каç пулаť;
Çав кун каçђенех сарлаť ђапĕ ун—
**Мĕнпур пек йал-йыш Ђаккана мухтаť.**

## XII. ПУÇЛĂХСЕМ ПĂВАÇÇĔ.

Хĕлле. Сивĕ кун. Тул çутăлнă тин.
Ђакка шăвараҭ кăвак лашине.
Сарай умĕнђе ĕçђен Йатарин—
Тураҭ, купалаҭ ыраш улăмне.
Ак çак самантрах урам хапхинђен
Ђупсах пек кĕрет йал çынни—Йуксар.
Ђакка çаврăнса сăмах хушиђђен
Çитет вăл унта, пуçлаҭ сив хыпар:
— Ђакка! Ак мĕскер: хаљ çеç, пайан ир,
Пăхаттăм килте пур-çук вылђăха...
Асра-тĕсре çук, кĕтмен нимĕн ђир,—
Çумри сутникĕн криклетрĕ хапха;
Сассем кĕç... пăхап хӯме хушшинђен:
Тăраççĕ сутник, Алапит, Текей,—
Пуçлаççĕ сăмах тӯрех сан çинђен...
Ну илтрĕм, пĕлтĕм. Пĕлни ку—телей!

Ђ а к к а:

Мĕскер-ха апла?
Усал пулмалла?!

Й у к с а р:

Ай хăруш, Ђакка! Ак çак кунсенђех,
Ыран-виçминех пурмис килмелле.
Пурмис çитиђђен çак çитес çĕрлех
Тытасшăн сана никам сисмесле.

Леш, пуп ыйтнипе тытасшăн, ара,
Йарасшăн уйес хулине вара...
Тата Тĕвенеш çинђен те темскер
Мăркарĕç хуллен. Тытасшăн пулас.
Шутлаççĕ ай-вай,—ђеййе те ђипер!
Мăн Калăм кун пек йалтраççĕ хавас.
Асту ну, Ђакка, пытан хаљтерех.
Пурмис таппине ан лекђĕ текех.

Ђакка:

Капла ку иккен çук пурнăç-телей,
Таса çинђенех татаççĕ пуçна!
Ах шел-çке, пĕтет Тĕвенеш муђей;
Пытантăрђђĕ вăл, каласђĕ ăна.

Йуксар:

Еп куртăм ăна кунта килнĕ ђух.
Каларăм. Темме, ђĕнмерĕ питех:
— Ват çын еп, тарса ман май килес çук.
Систер Ђаккана,—терĕ мĕскĕнрех.

Ђакка:

Мĕн-ма шăна пек имшеррĕн парнас?
Упа-кашкăрпа— упах пулмалла!
Май килнĕ таран кĕрешес, пурнас...
Каласђĕ ăна—ун пытанмалла.
Айта-ха унта кайар, канашлар...
Ну, йурĕ... пĕлтертĕн, ыр тусăм—Йуксар.

Ђĕнмерĕ текех пăлханнă Ђакка.
Тăрук ывăтаť алри супнине,
Шатăрр! ђăмăртаť ик селлĕм ђышка,
Тухаť те утаť Тĕвенеш патне.

***

Пухха виçĕ хут хурĕç тарăхсах,
Çавах та унта йал-йыш пухăнмасть;
Сутник, Алапит... вун çын ытларах
Хурал пӳртĕнче халапа çапать.

Йериле:

Ай-йай, Алапит, йал-йыша хуçан!
Ахаль те Чаккун пырши тухас пек...
Аванччĕ пит те ăна касарсан,—
Начар çын... тӳсет тем тĕрлĕ инкек.

Алапит:

Çынна ан хĕрхен, нихçан ан касар:
Пырши тухсассăн—пыршине тапта!
Кам вăл начар çын? Кахал,—çав начар.
Çавсем хапсăнаç çынри йамăта...

Сутник:

Ун пек кашкăра мĕнле хĕрхенен?!
Мĕнле вăл пĕр кун вĕçтерчĕ пире...
Хĕнерĕ пупа... ун пирки мĕн тен?
Ун ĕçĕ пирки хыт сикрĕ чĕре.
Тем курса тăра-а-ас!..—терĕ ват сутник.
Кун хыççăн шăпах пулать пӳрт ăш-чик.

***

Ак шăнкрав сасси, уй йенчен килсе,
Сасартăк йала йантратса йарать.
Кантур таврашсем çитнине сиссе,
Пурин те чĕри çӳçенсе кайать.
Кĕçех ак вĕсем: пурмиспа тийек,
Вунпилĕк лавпа—вунпилĕк сутник,
Тăман вĕçтерсе çитеççĕ туй пек.

Пĕђĕкçĕ йала хуплаť пысăк шик!
Пурмис-ђуниллисхăраť вăл çавах:
Хăруш саманра çӳремест пĕђђен!
Вăрман йалсенђе, ђăн хаљ, хăрушрах.
Çампа та вăл ак килет темиçен!
Хурал пӳрђин ак алăк уçăлаť,—
Пӳрте мăн тийек кĕрет те иртет.
Хываť тăлăпне вăл—тавралла пăхаť,
Кураť сутнике—хайаррăн калаť:
— Сутник!..
Халăху сахал...
Пухмастăн, кахал!..
— Виç хут хутартăм, хăспатин тийек!..
Ех, ку халăха!.. Ђупăр, теçетник!
Çирĕм çын килмен... ну, çитрĕ инкек!
Пата-а-ак çав кирлĕ!— çуйхашаť сутник.
Малта тăракан тађка Алапит
Хавас пит-куçпа вăшт-вашт çаврăнса:
— Та, та, та, çапла... килмеççĕ-ха пит...
Ђакка хăйамат тарђĕ, вĕт тухса...
Ватти, хуť, алрах...—терĕ тийеке.
— Ма тартрăн!? Ђăваш! Усал сĕлехе!—
Хайаррăн çĕмĕрет тийек тарăхпе.
Ак ку самантрах, сутник ушкăнпе,
Капан пек пурмис пӳрте хăй кĕрет.
Пӳрте кĕрсенех çакскер мĕкĕрет:
— Сутник! Ăçта сан пуху çыннисем?
Йе, ес, йурийех пухмастăн капла?
Асту еп сана, ђĕрĕллех сĕвем!..
Ђуп!.. Пĕр сехетре пуçтар халăха!—

Тет те, пĕрех çех ђышаҭ сутнике.
Сутник тулалла сикет шăшилле.
Ак ку вăхăта йерипен, майпен,
Вунпилĕк сутник кĕреççĕ пӯрте.
Вунпилĕк йалпуç—хирти йалсенђен,—
Кантуршăн—тĕрек вĕсем çак тĕлте.
Хайар пуçлăхсем пăртак лăплансан,
Алапит майпе малалла иртет.
Вашт! усаҭ пуçне пилĕкĕ таран,
Пур пуçлăхсене хăнана ђĕнет:
— Пухха пур халăх килсе çитиђђен,
Паха хăнасем, аҭăр ман пата.
Пăртакçă ĕçер-çийер çул çинђен,—
Тет те вăл, майпе пуç тайаҭ тата.
Кантур таврашсем килĕшеç ђасах,
Алапит патне карĕç хавасах.

***

Алапит панђе кӯпсе сарăлса,
Пурмис-сутниксем пыраççĕ пухха.
Анђах пухура йалти халăхран
Паçăрхи пекех нумайĕш çук-ха.
Çынсем сахалран шăртланнă пурмис,
Сĕм ӯссĕр пуçпе пушшех ак ураҭ:
— Ђупмастăр есир—усал ӯпре-вис!—
Çĕмрет вăл, йантраҭ, туйине çавраҭ:
Хирет сутнике—пĕлме çук ним шут!
Ик теçетнике çапаҭ виçшер хут.
Сутник ђăркуççи çине хуçланса,
Хăй ђупни çинђен калаҭ йăлăнса:

— Хăспатин пурмис! Ку пухха килме
Килтен кил кĕрсе хурмăр тепĕр хут;
Мĕскер-ха тăвас? Тараççĕ темме!..
Ун пек çынсене кирлех хайар сут!..

Пур ĕçлĕ çынсем хупланҫĕç мĕн шалт.
Пурмис аранах ĕçе пуçăнаҭ:
Йалта миçе çын, миçе çĕрлĕ йат—
Пурне те ыйтаҭ, тийекĕ çыраҭ.
Ĕçе пĕтерсен кантур таврашсем
Ҫĕнеççĕ тинех Тĕвенеш йатне.
Ҫĕтренҫĕ халăх—ҫĕнмеççĕ çынсем.
Тухаҭ Тĕвенеш ак сĕтел умне.
— Ес-и вăл путсĕр, пăлхавçă старик?!
Ăçта сан Ҫакка—усал йулташу?—
Çĕмрет хай пурмис.—Ҭарҫĕ...—тет сутник.
Кĕтмест Тĕвенеш нимĕнле каçару:
Тăраҭ вăл паттăр, хăйуллăн пăхаҭ,
Пурмис ыйтуне пĕр шиксĕр калаҭ.

Пурмис:

Туслах-и ҫăнах есĕ Паххомпа?
Мĕскершĕн тата саван Ҫаккана?

Тĕвенеш:

Паххом ман тус мар. Ҫакка тўрĕ ҫун.
Анҫах елекпех пĕтме килҫĕ ун.

Пурмис:

Çаплах-и усал таркăна мухтан?

Тĕвенеш:

Мĕн-ма вăл таркăн? Тискер пурнăçран!

Пурмиспа тийек:
А... ес... апла-и? Патшана хурлан?!
Ку сăмахсемшĕн пуçна ес хуран!..

Пурмис:
Кала-ха тата: мĕн-ма, ес, йалан
Алапит çине тăма пăлхатан?

Тĕвенеш:
Çук, еп пăлхатман. Апла мĕн усси?
Кун пек елеке ђăн та ђăтасси!

Пурмис:
Ăçта сан Ђакка? Ма ăна мухтан?

Тĕвенеш:
Таçта... Вăл тўр çын. Анђах Алапит
Тĕп турĕ ăна. Пĕтерђĕ вăл пит...

Тийек:
Тўр çын Паххомкка хăй патне кĕртмест.
Ыр çын вăл турра хирĕç ĕçлемест:
Хĕнет пађăшка, кулаť икконран,—
Çавна-и есĕ ват супнă, мухтан?!

Тĕвенеш:
Турра хирĕç мар—анђах ђăвашла.
Паххомкка ђĕнмен,—ку елек апла!
Выç куçлă пупа тўсме ытла хĕн,—
Çампа лектерме кирлех пулнă-мĕн.

Пурмис:
Çитет, ват супнă! Хайар калаçан!
Хăна кура мар—ђĕлхў вăрăм сан...
Сутник! Ес ăçта? Халех тупăр лав.
Çыхсах ку çынна хурăр лав çине.

Уйес хулине кайат ку антрав.
Унта, сут хыççăн, парат вăл ђунне.
Тĕвенеш:
Ăсатăр, йурат... кантăр Алапит!
Ват çын еп, кун-çулшĕн хыпмастăп-ха пит.
Анђах ман килте ађан ађисем!..
Пĕтеççĕ вĕсем йĕрсех, тăлăхсем...
Кам пăхĕ?!.—Терĕ Тĕвенеш хуллен.
Ак çак вăхăтрах çыхаççĕ ăна.
Çыхса тăлласан, кăларђĕç пўртрен.
Вăл тухнă тĕле шăват хуп çуна.
Çак хуплă çуна тĕпне пăрахса,
Ăсатрĕç ђасах ват Тĕвенеше.
Пĕђĕкçĕ пуху—йал-йыш хумханса,
Пуçа пĕшкĕртет хĕнпе килĕшсе.

***

Хурал пўртĕнђе ĕçсем пĕтсенех,
Кантур таврашсем халăхпа тухса
Ђакка кил-çуртне çавăраççĕ тĕппех.
Анђах никама тупмаççĕ тусса.
Каçпа, кил-çурта хупса питĕрсе,
Пур пек вылђăхне кайаççĕ хуса.
Кайаççĕ вĕсем çил пек вĕçтерсе,
Шăнкрав сасси çех йулат йантраса.

***

Çанталăк сăнне сĕм-тĕттĕм витсен,
Арпа ăшĕнђе ĕнтĕркен Тайпи
Илтет ак сасă ўпле умĕнђен.

Кăртах! ун сикет хăравçă ђĕри.
— Тух, Тайпи хĕрсем, тин карĕç лешсем,—
Тейет ку сасă ђуна йăпатса.
Хускалђĕç Тайпин шăм-шак тымарсем,
Ђасах вăл паллаť ку çемçе сасса—
Алђинкĕш сасси—çинçен йантăраť!
Лармарĕ Тайпи текех хăраса:
Çывран ађине вăратса йăтаť,
Арпа айĕнђен çĕкленсе тухаť.

Алђинке:

Ах, Тайпи хĕрсем, пытантăр аван:
Ех, сирĕн килте ухтарђĕç пайан!..
Ват Тĕвенеше йађĕç çыхтарса!
Мĕн пур йал-йыша хуђĕç хăратса!
Шырарĕç сире тĕппи-йĕррипе,
Килте анђах мар, мĕн пур кӳршипе.
Лаши-ĕнине, сурăххи мĕнпех,
Кантур йеннелле карĕçĕ хуса.
Тата халăха—Ђаккана халех
Тытса ăсатма хăварђĕç хуша.
Пӳртпе хапхăра, тĕкĕсем лартсах,
Никам кĕме çук питĕрђĕç çапсах...

Тайпи:

Пĕтетпĕр—вилĕм! Пĕтет вăл тинех.
Хĕрӳ ђĕрипех пĕтет-çке ку... ех!
— Ан йĕр-ха ытлах ђун татса, Тайпи,
Тен ак каçару, тепле, пулмĕ-ши,—
Тесе йăпатса, шăннă Тайпине
Алђинкĕш кĕртет хăйĕн кив пӳртне.

## XIII. ШĂННĂ ВĂРМАН ХӲТТИНЂЕ.

Кантур таврашсем пырса кайсанах,
Ђаккана тытма хушнине пĕлсен,
Тайпи йăмăкĕ, Кулин, хăвăртрах
Йарнаť вăрмана йĕлтĕрпе, пĕђђен.
Йарнаť вăл, утаť хура вăрманпа,
Пытаннă Ђакка тĕлне ђухласа;
Вĕт-шак туратсем пăрлак сулăмпа
Вăљ-ваљ сулланаç ăна çакланса.
Йарнаť Кулине сукмак-çулсăрах
Шур кĕрĕт тăрăх тӳрĕ йĕр тытса.
Хăш ђух ун çине, пĕлĕт пек, лаштах
Йăвăç синђи йур анаť çавранса.
Хайарран сывлаť шур куçлă кăрлађ:
Нисçта илтĕнмест пĕр кайăк сасси;
Тепле пĕр, умран ĕрхĕнет мулкађ,
Йе карăк-ăсан тăкаť хыр лăсси.
Пăрланнă вăрман лараť сывăрса:
Лутра çăкасем, пилеш тĕмисем,
Пур хулă, турат, çатра—арканса
Хĕрри çук, вĕç çук,—курнаççĕ пĕртем...
Йарнаť Кулине вăрман тĕпнелле
Карсак пек матур шăнми шăм-шакпе.
Васкаť вăл, васкаť Ђакка патнелле,
Усал хыпара ђасрах пĕлтерме.

***

Тискер вăрманта пĕр лапђăк çĕрпӳрт
Лараť тан тапнă çыран хĕрринђе;
Нађар та пулсан, хĕл кунђе ку хӳт
Питех те ырă вăрман варринђе.
Çĕрпӳрт ăшĕнђе, тăм урай çинђе,
Çунаť, хĕмленет тип кăвайт вутти;
Сар çулăм çинђи хуран тĕпĕнђе
Сикет, çаврăнаť мулкађă йашки.
Вăхăт каçхине... Вăрман тăп-тăпах.
Тăмана анђах таçта ӳхĕрет.
Çăра сĕм вăрман çӳçенђĕк, улах!
Тулли уйăх çеç тухса ђун кĕртет.
Çĕрпӳрт умĕнђе, тулта, Йатарин
Çураť те ваклаť каска вуттине.
Ђакка хăй пӳртрех, караť ĕнтĕ тин
Сӳсе пĕтернĕ пакша тирсене.
Ак çак самантрах, ак ик-виç хутђен
Темскер улани килет инçетрен:
— У-у-у!..
— У-у-у!..
Ку сасă вăрах тăсăлса йĕрсе
Хура вăрманта таçтах йарăнаť.
Çывран кайăк та, пуçне çĕклесе,
Ăна пĕр самант шикленсе тăнлаť.
— Пиђђе,—арçури!.. итле, ӳхĕрет,—
Терĕ Йатарин ĕçне пăрахса.
— Çав пуљ, шеремет... тухнă, веç, йĕрет.
Персе пар çăкăр, хыптăр,—тет Ђакка.
Йатарин ђӳклет: çи, акă, ляплан!—

Тесе ыватат ҫăкăр татăкки.
Анҫах «арҫури» ҫырлахмасӗ,—куштан!
Текех улашаӗ, йӗрет ун сасси.
— У-у-у... ы-а-а-а-а... и-и!..
У-у-у... ы-а-а-а... и-и!..
Ку сас вăйланаӗ, текех ҫывхараӗ,
Ăна илтнипе Ҫакка та тухаӗ.
— У... йыс-на-а!.. Йа-та-ри-ин!—
Тесе пекех мӗн йӗрет тăлăх сас.
— Ҫим ку, тăнла-ха, Кулине мар-ши?!
Пирех ҫӗннӗ пек, тавай кăшкăрас...
— О-хо-хо-о-о... хо-хохо!—терӗ Ҫакка хăй.
— Ку-ли-не-е!..—терӗ Йатарин.
— Ах тур, шыраса пӗтрӗ пуҫ ун вăй!—
Терӗҫ тăвансем, сиксе ӳкрӗҫ тин.

***

Пӗр вунă самант... Кулине умра!
Аҫа пек кӳтсе—ни макрас, ни кулас.
— Лери ҫӗрпӳртре тесе еп, ара...
Ну, ах хăшкăлтăм!—терӗ ырнă сас.
— Ҫук ҫав. Вăл пӳртре пурăнма май ҫук,
Хавшанă, наҫар... Ну мӗн, Кулине?..
Ку, есӗ килни, ырра пулас ҫук?—
Тӗпҫерӗ Ҫакка, тӳсеймен йенне.
— Сыхлаҫҫӗ сана, тытасшăн питех...
Лаши-ӗнине карӗҫӗ хуса,
Пӳртпе хапхăра хупрӗҫ питӗрсех,—
Калаӗ Кулине хӗрсе, хыпăнса...
Пăлханҫӗ Ҫакка, усайҫӗ пуҫне:
Ҫылай вăл тăраӗ йупа пек хытса;

Ҭăн-пуç тăрăлсан, шарт! çупаҭ пĕçне
— Култармăп!—тет çеç кăкăрне ђышса

***

Çĕрле... Çĕрпӳртре. Пурте йĕркерен
Лараççĕ ђăрăш çапписем çинђе.
Çунса йăлкăшан вутпуççисенђен
Шур сĕрĕм тухса пăлкаҭ пĕр йенђе.
Хĕрӳ кăвартан вĕçет хĕм вĕл-ваљ,
Çапаҭ тавраллах шупка-хĕрлĕ çут
Ђылай ђĕм хушман Ђакка, ĕнтĕ хаљ,
Таттисĕр хирçет, тăваҭ тĕрлĕ шут:
— Ыр кун пулас çук... çуках, çук ырри!
Кăшлаççĕ иккен таса çын пуçне.
Ну, пĕт!.. пулам мар кашкăрсен хурри!
Пĕтсен те пĕтем—таврап çавсене...
Есир, Йатарин, пурнăр-ха кунтах,
Ан тухăр йала тата ик виç кун...
Ыран еп кайам кăвак çутăллах,—
Тупам Паххомкка... хăват пур-ха ун,—
Терĕ те Ђакка, каллех шăпланаҭ,
Каллех вĕçĕмсĕр шухăша кайаҭ.
Çĕрпӳрт ăш-ђикки йӳçек те вĕри.
Пĕђĕк ђӳређе сĕрĕме çăтаҭ.
Тăм урай çинђи кăвайт кăнарри
Йăл-йăл тĕлкĕшсе кĕллěнсе выртаҭ.

***

Ђакка, тытасран тарса пурăнни
Сахал вăхăт мар,—ерне те ытла.

Текех пытанса пурнайман Тайпи —
Пыраҫ ҫеҫ килне,—лекет вӑл алла.
Шӑнса тертленсе, патак та ҫисе,
Сутник витинҗе лараҫ вӑл виҫ кун;
Җакка ӑҫтине пӑвӑртса хӗссе
Ыйтаҫҫӗ унтан—җӗнмест мӗскӗн җун.
Ҫунаҫ тек Тайпи лапрак витере;
Илҗуш ун Кулин патӗнҗе пурнаҫ.
Макраҫ, тулашаҫ Тайпи тӗттӗмре,
Усал пурнӑҫне җунран ылханаҫ.
    Йал-йышӗ хыпман, хыт җунлӑ пулсан,
Татах та Тайпи тӳсеҗҗӗ пулас.
Пурмис аллине ӑсатнӑ пулсан,
Пуҫпех, пӗтмеллех пӗтеҗҗӗ вӑл җас.
Анҗах ак, җылай ларса аптрасан,
Кӗҫвӗҫ кантура леҫес пек ҫынна,
Ыр кӳрӗш—Йуксар, ҫӗрле ҫын выртса
Никам сисмесле тартаҫ йут йала.

## XIV. ХАЙАР ТАВӐРУ.

Пӗр сӑхӑ сив каҫ... автан авӑтсан,
Кушлавӑш туйми ӑйха туртнӑ ђух
Паххомккӑ шайкки тухаҭ вӑрмантан;
Кӗрет вӑл йала. Сас-ђӳ твраш ҫук.
Ҫывраҫҫӗ пурте. Амаҫ Мики ҫех
Лаша шӑварма тухма тапратсан,
Кураҭ кантӑкран ҫакна пӗђђенех.
Ђухлаҭ вӑл тӳрех вӗсене курсан:
— Ех ку, етсемри!.. Итле Ернепи,
Каллех таркӑнсем килеҫҫӗ пулас!—
Ҫывран арӑмне вӑратаҭ Мики.
Вӗсем иккӗш те ҫӳҫенђӗҫ пӗр кас.
Хурах-таркӑнсем хӑвӑртах иртсе
Ҫухалђӗҫ ђасах Михи куҫӗнђен,
Хайар йытсем ҫех вӗсене сиссе
Хамлаҫҫӗ сиксех хапха умсенђен...
Ак, катӑк уйӑх хуллен хӑпарса
Хӑрах куҫӗпе йала пӑталаҭ;
Кӑвак ҫуттине йал ҫине сапса
Хура пӳртсене ӑйӑхпа саваҭ.
Микин ӑйӑх ҫук, лараҭ шикленсе,
Кашни сас-ђӗвве илтет, тишкӗрет:
Вӑл кӗҫвӗҫ, темскер, шӑй-шай илтӗнсе
Тӑп йал пуҫхӗрлӗ тӑрасса кӗтет.

***

Усал-тĕселе кĕтмен çын—сутник
Лапка тăрринче туртать ăйăха;
Нимле хуйхă çук. Çавах ун ăш-чик
Темле лăпкă мар,—кансĕр шăм-шака.
Пăчăх хура пÿрт... Сутник ăнтрашсах
Усал ăйăхра выртать тĕллепсе:
«Çулла пек, йалтах, паллană çулпах
Анать кĕпере вăл тислĕк лавпе.
Анса çитет çеç—кĕпер кисренет:
Ак, йăвăр лава кĕпер тÿсеймест!
Ай-уй, çĕмĕрлет—шăтăрт-шат! тискер!..
Тÿнет ак, тÿнет, ишĕлет кĕпер,—
Сутник те пĕрлех чăмать çĕр тĕпне».
Чун хăпнă сутник çĕклерĕ пуçне:
— Чим! ай... ку мĕскер? Чăнах-çке
шăл-шат!
Вăраннă сутник тинкерсех итлет:
Тул йенчен такам, чăнах та—шалт! шалт!
Хытах шаккаса пÿрте чĕтретет.
Мĕн пур кил-йышĕ шартах вăранать:
— Путь, ку ырра мар!—тесе шикленет.
Сутник, вată çын, йалт сиксе тăрать:
— Кам çав?.. Мĕн унта?—тесе çихĕрет.

Чакка:

Ку епĕ—Чакка... уç-ха, алăк уç!
Хам ĕçĕм пирки санпа сăмах пур.
Пит кирлĕ пулсан—хампах манăн пуç:
Халех тытса çых, кирек ăçта хур!

Сутник:

Çĕрле ан çӳре—ыран ирпе кил...
Çук, çук,—кӳртместĕп... хуť те шăнса вил!

Ђакка:

Кӳртместĕн пулсан, еп вăйпах кĕреп:
Асту алăкна ватса çĕмĕреп,—
Терĕ хайарран тархăннă Ђакка,
Унтах вăл хыттăн çапаť алăка,—
Тăр-тăрр! кисренет катмар хура пӳрт.
Шалта—шăй та шай! çемйе çĕмĕрлет:
— Атте, ах атте! Ах турах, ан кӳрт!
Кăшкăр йал-йыша!—тени илтĕнет.
Ак çак хушăрах улт-çиђĕ хусах
Сапур пуçĕпе кисрĕç алăка,
Ик-виççĕ киссен алăк шалтăрах
Ђĕрпеклĕн ванса ӳкет таталса.
Алăк ӳксенех таркăнсен шайкки
Кĕрет вăркăнса сĕм-тĕттĕм пӳрте,
Сехри хăпнă çын—сутник карђăкки
Тĕн витĕр пăхса çураť çихĕрсе.
Сутникĕ пĕђђен, малти кĕтесре,
Мăн сăнă тытса тăраť ђĕтресе:
— Ех, Ђакка—шуйттан, мĕншĕн ес пире
Хуплан Паххомпах!?—тет вăл ӳпĕнсе.
— Еп мар—хăвăрах ђĕнтертĕр ăна...
Сире уншăн тав!—пуç тайрĕ Ђакка.
Сутник Ђаккапа харкашнă тĕлте
Паххом хăй кĕрет хый çутнă пӳрте:
— Акă, йал пуçĕ—пурмисăн йытти!
Ик ђухăн киле тĕп турăр шалтти!..

Кулаймăр ĕнтĕ текех халăхран...
Лаврушкă, майла!—терĕ утаман.
— Майла!—тесенех тăсланкă хусах
Ик-виç йулташпе сутнике тытат̆.

— Лавруш! Мĕн тума? Тивес мар аплах;
Çемйи ытла та ђун татса макрат̆...
Шалккă,—тет Ђакка. Леш тăрат̆ хытса.
Тĕпел йеннелле уттарнă Паххом
Лавруш ђарăнса тăнине кура:

— Мĕнма ес тăран? Хăвна кирлим, хо?!.
Халех тирпейле!—тесе кăшкăрат̆.
Лавруш, сутнике хăлт-халт! сĕтĕрсе,
Ик-виç йулташпе тухса çухалат̆.

Паххом хайаррăн хушнине илтсе
Ђакка ăна тек ђĕнме хăйаймаст̆.
Йĕрет, çуйăхат̆, çĕмĕрлет кил-йыш.
Паххом пĕрех çех тапса кăшкăрат̆:
Ахвонђккă! пĕрер çăвар урлă ђыш!..

Пар, пар хăвăртрах! тет Паххом, урат̆.
Ахвонђккă хусах хавассăн сиксе
Шăп та шап! çупат̆—кам макрат̆ ăна.
Ђун тухнă çемйе малти кĕтессе
Ларат̆ ђыхăнса, хăймаст̆ сывлама.

— Ну ат̆ăр, ађасем, ĕçе пĕтерер.
Ĕçе пĕтерсен ĕçер те çийер...
Ыран ирпеле кантура вĕçер—
Тĕвенеш ватта хăтарса килер, —
Васкатрĕ Паххом; тухат̆ вăл пӳртрен,
Ыттисем пурте унăн хыçĕнђен.

Пӳрт ăшĕ йантраҭ. Кил-йышĕ улаҭ.
Ҫара алăкран сив сывлăш палкаҭ.

***

Ҫуркаҫ тĕлĕсем. Пĕђĕк йал ҫывраҭ.
Йала таркăнсем килнине сиссе
Унта-кунта ҫех анђăк ханклатаҭ.
Патри сĕм-вăрман лараҭ тĕлленсе.
Ак, Алапитĕн лепсĕркке йытти
Сасартăк сиксе харлатма пуҫлаҭ;
Ђăл-пар сирĕлет пуйанăн йăхи,—
Тăраҭ вăл хуллен, кантăкран пăхаҭ:
Мăн пӳрт тавралли катмар хуралтсем
Шапах-ха лараҫ шулапсем йăтса;
Хурах-мĕн кĕме ҫуктăр шăтăксем—
Алапит ђунне йараҭ йăпатса.
Анђах ак, темме, йытти ђарăнмасҭ,—
Хытăран хытă пуҫлаҭ харкашма,
Карташ тавралла тарăхсах ђупаҭ,
Сикет те тулаҭ малти хапхана.
— Кашкăр, йе вăрă!.. Айта-ха, Итрен,
Тумтир тăхăнса тухса пăхкалар:
Ҫĕкле ес тукшан, еп илем кистен...
Йытти кускалаҭ, тем ку—ырра мар!
Вăшт-вашт тăхăнса тухаҫ хайхисем,
Хапха патнелле тăраҫҫĕ пырса,
Питех ҫӳҫенме пĕлмеҫҫĕ хăйсем.
Сасартăк пĕр сас кайаҭ йантраса:
— Итрен! Алапит! Уҫăр хапхăра...
Ылханлă таркăн парнаҭ аллăра.

Алапит:
Ђакка-и, есĕ?.. кам санпа пĕрле?
Ђакка:
Ђакка еп, Ђакка... хам пĕђђен ара:
Анђах пирштисем сыхлаççĕ тавра.
Итрен:
Мĕн ес, вăрă пек, çӳрен сĕм-çĕрле?..
Ђакка:
Йăваш мулкађăн кăнтăрла кун çук,
Ђаккан та çаплах есĕр хĕснĕ ђух.
— Ех, есрел çынни, çĕтен ахалех...
Шеллеп еп сана—тивтермĕп текех.
Айта кĕр, еппин; кĕр, хапха уçап.
Пӳртӳ сивĕ пуљ... шăннă ес, туйап,—
Терĕ Алапит ултавлăн шăлса.
Хăй çав вăхăтрах хапхана пырса
Алри кистенне тытаĭ çирĕпрех,
Çумри Итренне калаĭ шăппăн çех:
— Кĕрет-тĕк, тӳрех йара пар пуçран;
Ăна вĕлерсен—мухтав пуçлăхран!..
Хапха йерипен—кăррик уçăлаĭ:
Хайар, мăн йытти сикет харлатса,
Алапит ăна ђаранçи пулаĭ.
Итренĕ кĕтет тукшана йăтса.
Ак, кĕç хапхаран курăнаĭ пĕр пуç,
Ун пуçĕ çинђе Ђакка çĕлĕкех.
Итрен ваштǃ сулаĭ. Ђалхăраĭ пит-куç.
Мăн пуç лăпсăрах ӳкет çĕр çинех.
— Е-хе, апла-çке!.. Ну йурĕ, еппин,—
Йантрарĕ хыттăн Ђаккан уç сасси.

Итрен шăнк хытаť, кураť văл хађ тин:
— 'Еппей, ку пуç мар—çĕлĕкпе алси!
Ах, шуйттан Ђакки, питех те ђеййе.
Алси-çĕлĕкне туйана тирсе,
Çын пуç пек туса хапхаран ђикет.
Каçхи куç ула—вăл мĕскер пĕлет?!.
— Айта, тирпелер! терĕç паттăрсем,
Иккĕш те сикрĕç урама вĕсем.
Йытти кађкипех хурĕç Ђаккана.
Итрен кăнтарнă пыраť тукшана.
Ђакка ђавкăнаť çумри хушшалла.
Хайар йыт ăна пыраť тулласа.
Итрен те маттур кĕç-вĕç çапасла,
Çитсех, çывхарсах пыраť вашлатса.
— Ш-и-ик! шăхăрђĕ Ђакка, ђупнă май.
Итрен, кĕç-вĕçех çитеп тенĕ ђух,
Сасартăк илтет—патрах тем лăй-лай!
Ай-вай, нимскерне пĕлсе илме çук:
Хушран, çывхăри пура хыçĕнђен
Улт-çиђĕ мĕлке тухаççĕ сиксе.
Ťăмарĕ Итрен камне паллиђђен,
Калла çаврăнса вĕçет килнелле.
Ак, унђђен пулмасť, ăна çул татса
Тухаççĕ ума ик-виçĕ мĕлке,
Киле кĕме çук! Ăçта тармалла?
Паххомсем кусем!—терĕ вăл хăйне.
Ак кураť Итрен—умра виç хусах
Илеççĕ тытса унăн ашшĕне.
— Ах, ку аттене мĕнле çăласах?
Тесе ытканаť вăл ашшĕ патне.



Сулат̆ те йарат̆ катмар тукшана,
Пӗр ҫӳлӗ хусах лађӑрах анат̆.

Çитет вăл вĕçсе, шарри! кăшкăрса
Сулаŧ те йараŧ катмар тукшана,
Пĕр çӳлĕ хусах лађăрах анаŧ.
Анђах çак тĕлтех сисет вăл,—хăйне
Пĕр çирĕп алă хыçран çулăхаŧ.
Карт! çех туртăнаŧ Итрен пур вăйпа,
Алран вçерĕнсе хыçалла пăхаŧ—
Ехих, ан тĕрмеш! Вĕç сывă пуçпа—
Вун-вуник таркăн ыткăнса пыраŧ.
Ђăнах та Итрен çывăрса тăмасŧ,
Тапса ыткăнаŧ ирĕк йеннелле.
Ђупаŧ хăй луç пек, çăварне караŧ:
— Хурах! таркăнсем!—тет, пур йал илтмелле.
Ун вăйлă сасси йала анђах мар,—
Çумри вăрмана—йан та йан! йараŧ,
Каçхи тăлăх сас тискер те хайар—
Мĕн пур йал-йыша сăр-сăр сăркатаŧ.
Анђах пĕтĕм йал хăраŧ Паххомран—
Никам та тухмасŧ ăна пĕлсенех;
Усал йытсем çех кас-кас, тапхăртан,
Сас-ђӳ илтĕнми хамлаççĕ хĕрсех.

***

Вĕçе-вĕç хуралт. Кӳрнеклĕ кил-çурт
Лараŧ сарăлса çырма хĕрринђе,
Çумрах мăн пахђа,—ик çĕр вĕлле хурт,
Лараççĕ вĕсем кĕрĕт айĕнђе.
Ђĕренђе витсе шулаппа пусса
Йакатнă катмар çуртсем варринђе
Лараŧ хура пӳрт талккин сарăлса,

Пурнаҫ-мĕн Текей ҫак ҫурт хӳттинҫе.
Ӑна ĕмĕрте никам хур туман,
Никам «ырҫынна» хӑйман тĕкĕнме;
Халҫҫен пурӑннӑ канлĕ те аван,
Анҫах ак кĕҫĕр лекет ун тӳсме!
Ҫуркаҫ иртейсе автансем авӑтсан,
Пыраҫ те кĕрет таркӑнсен шайкки.
Текей хӑй сиссе хӑтӑлаҫ кунтан,
Арӑмĕ лекет тарайман пирки:
Ик-виҫĕ хусах вите тӑрринҫен
Ут-улӑм туртса антарнӑ ҫухне
Кӑларнӑ ӑна купа айĕнҫен—
Кӑштах вӑл вилмен сехри хӑпнипе!
Паххомккӑ патне ҫавӑтса пырсан
Ҫыхаҫҫĕ ӑна, лартаҫҫĕ пӳртех.
Укҫа хĕстерсе пӑваҫҫĕ мӑйран.
Инке пур пекне параҫ пĕтĕмпех.
Пуйан Текейĕн укҫи ун сахал:
Таса кĕмĕлтен—ҫĕр ҫирĕм тенк ҫур,—
Ара, самани ун ҫух ҫавнашкал,
Вун тенкĕ тытсан, мухтанма май пур!

***

Тӑвас пеккине туса пĕтерсен,
Ĕҫме-ҫимелли тупса тултарсан,
Хусах-таркӑнсем ик-виҫ пиҫкерен
Пуҫлаҫҫĕ ĕҫме ик-виҫ килте тан.
Ĕҫеҫҫĕ ирĕк. Ирпеле супса
Ӳкеҫҫĕ пурте йӑвӑр ӑйӑха.
Ик-виҫ хусах ҫеҫ, тем майпа ҫӑтса,
Ҫӳреҫҫĕ ҫаплах сыхлав-хуралта.

## XV. ПĂЛХАВЛĂ ПУХУ.

Хĕвел хăпарат̆... Хăлхаллă хĕвел.
Йупа пек тӳп-тӳр, çулăм хăлхасем
Шупкан та хĕрлĕн çиçсе, пĕрешкел,
Хăпарђĕç хура вăрман хыçĕнђен.
Вăрман варринђи çавра таса уй
Сив çил каснипе хытса тĕлĕрет.
Уй тăрăх, çул май, йăлтăркка хăрпу
Хĕвел çуттипе йăлкăшса вĕçет.
Шăпăрт... Йанрамаст̆ хура вăрманта
Çуллахи ђеђен кайăксен йурри:
Хура çăхан çеç, тепле карнклатса
Уй урлă вĕçет—çак çеç мĕн пурри;
Йе выçăхнă тил мулкађ йĕрлесе,
Вăрман хĕррипе шăвăнса йуртат̆.
Кĕрĕт çиййĕпе йуха вĕçтерсе
Вĕсен йĕррине йакатса лартат̆.
Кушлавăш йалђ те хайар сивĕрен
Ђĕрђунсăр, сассăр ларат̆ лăпђăнса;
Ун тĕксĕм пӳрђсем шăнса кӳтнĕрен
Пуçлаççĕ ирех сĕрĕм палкатма.
Сиврен анђах мар, сехри хăпнăран
Пушшех те сĕнкнĕ пайан ак ку йал:
Çак ир ку йалти тискере курсан,
Ђăн çав, никамăн çĕкленмĕ вăй-хал!

Ку сехре хӑппи кӑларан усал
Пурне те курнаҫ урама тухсан,
Ун ҫинҫен ҫӗрлех пӗлменни сахал.
Ку тискер хыпар вӗҫрӗ ҫилпе тан.
Хурал пӳртӗнҫен виҫҫӗр хӑлаҫра
Лараҫ тайӑлса ҫатрак укӑлҫа,
Укӑлҫа йенҫе—таса уҫлӑхра
Ҫул икӗ йенҫе лараҫ ик шалҫа:
Вӗсен тӑрринҫе етем пуҫӗсем
Вӑш-вӑш вӗҫтерес ҫӳҫ-сухалсене,
Кусем—Алпит... сутник тенисем,—
Хайар йал пуҫсем—пӗтнӗ мӗн ҫӗрле!

***

Хӑлхаллӑ хӗвел шӑваҫ-ха сисми —
Тӑраҫ йӑлкӑшса сӗм-вӑрман ҫинҫе,
Ун ылтӑн ҫуттин имшер пайраки
Тӑрнаҫ пӗр хушпа Текей кантӑкне.
Тӗпел-кӗтесре, тӗк тӳшек ҫинҫе
Пӗҫҫен сарӑлса выртакан Паххом,
Ҫан-ҫурӗм хытах кӗҫсе кайнипе
Кӑшт та кӑшт хыҫса кайаҫ вӑранса.
Вӑраннӑ тӗлтех ун пиҫӗ ҫине
Ӳкет имшеркке вут хӗвел ҫутти;
Вӑраннӑ Паххом ҫӗклет мӑк пуҫне.
Каҫхи мухмӑрпа хӗсет ун ҫамки!
— Ҫитет!.. терӗ вӑл, сикет те тӑраҫ.
Ак ҫак самантрах, Паххом ларнӑ ҫух,
Хуралҫӑ таркӑн алӑка шаккаҫ:
— Кам унта?..—Хамрӑн... сивӗ, тӳсме ҫук!

Паххомккă хăвăрт алăка уçаť.
— Миçен хуралта?—Сахал: виççĕн çех.
Вĕсем те шăннă, ыйтаççĕ улшăнма...
— Ну, халђ вăраннă... кала, кĕђђĕрех:
Мĕкĕрт сăрнайна—пухăнђђăр кунта.
Хуралçă хусах вашкăртса тухса
Пĕђĕк сăрнайпа мĕкĕртет виç хут,
Ђĕнен çурăк сас кайаť лăрласа—
Йала сăркатаť вăл вунă минут.
Нумай та иртмест, Текей мăн пўртне
Тулаççĕ кўршрен ытти таркăнсем;
Паххом бĕсене калаť шухăшне,
Калаť—йал пуххи пухасси çинђен.

***

...Кăнтăрла тĕлеш.
Имшерĕн йăлтраť кăнтăрти хĕвел...
Паххом хускалсан, питех ан пуплеш:
Тăваť хăй ĕçне, тупаť вăл ăс-мел!
Хăраççĕ унтан; çавах та пайан
Пухаť вăл йалти мĕн пур арçына.
Паллах, Пăкађав çынни пулнăран
Курасшăн ăна—хĕм ђунлă çынна.
Паххом пурмис мар, Паххом тийек мар,—
Ђухлаť вăл ĕçђен ђунне çывхарма;
Паххом йăваш мар,—хĕрў те хайар,
Анђах вăл çемçе хĕн-хурлă çынпа
Ак халђ те пухха пыран çынсене
Ђыслаť вăл, лăпкаť—ей тăван! тесе,
Ђĕнмесĕр тăран хăравçăсене

Тăван сăмахпа йарат çĕклесе.
Пырас пек çынсем пухăнса çитсен,
Паххом сак çине тăрат хăпарса:
Пуçлат вăл сăмах касхи ĕç çинҫен,



Хресҫен!.. хура халăх!
Айта ак, çĕклен!..

Калат вырăсла—ҫăвашла çăрса.
Паххом сăмахне майласа пырса
Ивашкă хусах калат ҫăвашла.
Касхи пысăк ĕç çинҫен пĕлтерсен,

Паххомккă пуçлаť хĕн пурнăç çинђен:
Хресђен!.. хура халăх!
Çунан ес, тўсен...
Мĕскер, саншăн, лайăх?
Мĕне ес кĕтен?!.
Çултан çул хайаррăн
Хĕсеççĕ сана,
Инкек-хĕн усаллăн
Пусаť кăкăрна.
Пурмисĕ-тийекĕ
Тўлевшĕн сĕвет,
Пур пурнăç сĕтекĕ
Вĕсемшĕн типет.
Таçти çĕр улпуђĕ
Касаť çĕр-шывна,
Нўхреп куçлă пупĕ
Ємет пурлăхна.
Тăван вăрманна та
Ђараççĕ касма;
Сывлан сывлăша та
Ак памĕç сана!..
Хресђен!.. Хура халăх!
Татах-ши тўсен?
Мĕскер саншăн лайăх?
Айта ак, çĕклен!..
Пур тўснĕ хĕнсемшĕн
Таврар тăшманна,
Манми Тĕвенешшĕн
Кисретпĕр ăна...
Йăтар хĕçпăшал та

Кайар кантура:
Çĕмрер, салатар та,
Çунтарпăр ăна.
Пур халăх инкекĕ
Кĕллентĕр вутпа,
Пурмисĕ, тийекĕ
Тĕп пулĕç унтах...
Пире кура выртмĕç
Ытти йал-йышсем:
Хĕçпе пăшал тытĕç
Асап тӳсенсем.
Хускал, ђухăн, штрум пек—
Хăвна хĕçпе вит!
Ан пулђђăр пирте тек—
Сутник—Алапит...
Кам савăннă, кулнă
Кантур хӳттинђе—
Ун пек çынсен пуçĕ
Шалђа тăрринђе!
Çĕмрер кантура та,
Унтан—малалла...
Выç куçлă пупа та
Тытса çакмалла...

Кăвак утаман хĕрсе талхăрса
Пуху пуç çинђе çавраӑ çĕлĕкне,
Мăн çӳç-сухалне аркатса йарса
Хайар сассипе ђĕтретет пӳрте.
Пуху шарламасӑ, никам хускалмасӑ.
— Мĕнма-ха шăпах? Йе çуктăр сăмах?

Йе ыр утаман сире улталаĭ?!—
Ђакка кăшкăраĭ çиллес сасăпах.
— Çук ара, Ђакка,—ђăнне вăл ђăнах,
Вут пекех хĕртет Паххом калани...
Анђах... ну... пăртак... хăрамалларах:
Хăруш çав... пăлхав!—тет Йериле муђи.

Ђакка:

Мĕнтен хăрама?.. Мĕн ђĕтремелли?
Çитет пуççпаса ђуниллисене!
Мĕн ђухлĕ йăваш—хĕнрех тўсмелли...
Çăлатпăр, халăх, Тĕвенеш пуçне!

Паххом:

Кайатпăр çăлма! Пурте ман хыçран!
Ан манăр—еп кам? Еп Пăкађавран.
Нимле улпута, нимле пуçлăха
Пире Пăкађав хĕрхенме хушман...

Йериле:

Çынна çăластăк пăлхав тумалла;
Анђах, утаман, мĕскер курмалла?!.
Аван астăвап Пăкађав кунне:
Ай-вай çунтарђĕç кайран хамрăнне!
Малтан ђăнахах, мĕн пур улпута
Алла лекнине ђĕррĕн вĕçертмен.
Кайран ун пирки шăварђĕç йунпа!
Çунтарђĕç—вилĕм!.. Тек кун-çуљ кĕтмен.
Майра патша хăй салтаксем йарса,
Тустарђĕ, вĕтрĕ пĕтĕм йалсене:
Хирте, йалсейрен ик-виç çын касса,
Пур пек арçынна пĕтерђĕç хĕртсе...

Пăлхав тапратсан каллех кĕт çавна:
Ырри пулас çук, пĕтерĕç пуçна!

Ђакка:

Кун пек пурнăçа пурнăç теме çук:
Капла тӳсиђђен хăватлăн вилес...
Ăшра ђĕрĕ вăй сиксе тăнă ђух,
Ма-ха путек пек имшеррĕн пĕтес?!.
Пурмис патакне пĕре курнăскер,
Нихçан та урăх ахаљ парнас çук.
Çук, çук пурнăç мар,—асап та тискер!
Çапăçас пĕтес луђђĕ кунпек ђух.
Йал-йышăм! Шутла: мĕскершĕн мана,
Ман урлă çынна тĕп турĕç капла?!.

Йериле:

Ђакка! Ех ађам, Пĕлетпĕр хĕнне:
Пуçна хума та сана вырăн çук!
Тивме кирлĕмарђ çав вырăс пупне;
Мăшкăл та пулсан тӳсмеллех хаљ ђух.
Хырçу-марçуна çыхвартнă пулсан,
Леш, вырăс пупне тĕкĕнмен пулсан,
Çаплах тĕп туса хумасђĕç сана.
Мĕнле-ха çăлас ĕнтĕ пурнăçна?!

Ђакка:

Пуп пек сĕлĕхе ђĕррĕн ђăтаймастп.
Нимле пуçлăха текех пуç таймасп,
Çавсем пиркийех тухрăм çынлăхран.
Мĕншĕн?—Тасаран! Çитмен пурнăçран!
Хускалђĕ кĕшĕл! Тăп тăнă пуху.
Кĕрлет ак пĕр сий кĕрлек калаçу:

Халăхран 1-мĕш сасă:
Асап та мăшкăл! Мĕскер ырри пур?
Çампа та Ђакка кĕрешет... маттур!

2-мĕш сасă:
Никам мар, пĕр çав, Алапит шампи
Хупларĕ ăна... ну, тулђĕ шалђи!

3-мĕш сасă:
Кам çирĕ тата Тĕвенеш пуçне?
Çав çын шайккийех... Вилĕм вĕсене!!!

2-мĕш сасă:
Халђ вилнĕ ĕнтĕ, ђĕрлеймĕç текех.

3-мĕш сасă:
Текей кам тата? Ăна та кирлех!

4-мĕш сасă:
Текей—алри йыт. Лешсемђђĕ пире...
Ђирке каймасан, хĕрес çакмасан,
Иккон лартмасан та ан сĕвђђĕр тире.
Пурнасђĕ пирĕн хамăр пек аван...
Кайар ак халех, мĕн пур халăхпах—
Пупне, теђукне тытар та вĕтер!
Ан хăвђђăр вĕсем ђирĕкне вăйпах,
Ан килђђĕр йала... лайăх вĕрентер!

Ђакка:
Тĕпех тумалла вĕсене, Йуксар:
Пурмисĕ, пупĕ вĕсем уйрăм мар.

Йантраť, çуйăхаť, хумханаť пуху—
Пăш-пăш калаçу, унтах кăшкăру:
— Ђăнах, ĕмĕрне ĕçлен, тăрмашан—
Пĕр пусăн пухса харама паран!..

— Ђакка ђӑн калаҫ: вӑй пур, мӗн хӑрас?
Ҫӗмрес кантура!!!—теҫҫӗ иквиҫ сас.
Хӑш-хӑш, ҫак тӗлтех, шанусӑр куҫпа
Йӑпӑшт пӑхкалаҫ таркӑнсем ҫине.
Паххом утаман пӑлханђӑк сӑнпа
Тӑраҫ сак ҫинђе, сӑнаҫ сассене.

Йериле:

Ђӑнни вӑл ђӑнах. Анђах, етсемри,
Пӑлхав хыҫҫӑнах, асту, мӗн курас?!.
Есир, ҫамрӑксем, ытла та вӗри,—
Ват ҫын канашне пӑтрак хуҫ тӑнлас.

Паххомпа Ђакка:

Асту ес, супнӑ, пурмис майлӑ-и?
Мӗскершӗн текех пӑсан халӑха?!.

Йериле:

Паххом! Ех, Ђакка! Пулмасҫ лайӑххи.
Ѣп сирӗн майлах, пӗлсӗрђђӗ мана...

Сассем:

Йериле суймасҫ: ыррине ан кӗт.
Пӑлхав кӑларма пирӗн вӑй ҫук вӗт!
Ватти вӑл курнӑ—тӳснӗ, ађасем:
Пушшех хӗн пулаҫ,—терӗҫ ват ҫынсем.
— Паххом, сан аван: сана тытас ҫук,
Ес пайан кунта,— ыранах таҫта!
Пире вӑт мӑйкӑђ ун пек пӑлхав ђух,
Киле пӑрахса тарма ҫук ниҫта!
Ҫампа та пире сирӗн сӑмахсем
Йуравсӑр вӗсем,—терӗҫ теприсем.
Ҫиленнӗ Паххом ђарнаҫ калаҫма,

Хайарран пăхса калаĭ văл çапла:
— Мĕнле тертленет йалйышăр Ђакка?
Пĕтет Тĕвенеш! Тухмастăр çăлма?!
— Хăратпăр, шиклĕ... теççĕ ваттисем.
Ђĕнмеççĕ, шăпах хĕрӳ çамрăксем.
— Мулкађ ђĕрисем!—терĕ утаман,
Анаĭ кĕрст! сиксе лутра сак çинђен:
— Тавайăр лавсем! Ан йулăр манран!—
Тет те văл тухаĭ хурал пӳртĕнђен
Ун хыççăн кашах мĕн пур хусахсем
Тухаççĕ хăвăрт—кӳреççĕ лавсем.
Пуху пĕр тапхăр сĕнкет,— шăпăртах.
Ак, Ђакка тăраĭ Паххом вырăнне;
Çĕклет аллине—каласшăн сăмах,
Анђах тытăнаĭ ăш-ђик кӳтнипе.

Й е р и л е:

Ђакка! Йун тăкмах сирĕн йураман,
Çитеђђĕ пăртак хăратнă пулсан;
Куштан та пулсан вĕсем хамрăннах
Улпут-мĕн пулсан йурађђĕ касмах.

Ђ а к к а:

Пĕлсе ес пуплеш:
Ăçта Тĕвенеш?!.
Кала-ха татсах ес—камђђĕ văл саншăн?
Санран та хисеплĕ ĕçђен ђăвашах...
Ак еп те пайан ылханлă таркăн!
Мĕнма, кам пирки пĕтетпĕр каплах?..
Сире ку паллă:
Вĕсем пит ылханлă...

Çавсем-çке, ђунилмĕш кантур йађĕпе
Усал кашкăрсем пек кышлађђĕç пире;
Тире сӳме хатĕр шампа пупсенне
Кушак пек çуллађђĕç алли-урине...
Ан пулђђăр ун пек улпут йыттисем,
Вилме! Вилĕмех тивĕçлĕ вĕсем!..
Мĕн кирлĕ—вăл пулђĕ:
Кам тивĕç—çав курђĕ...
Тек—маншăн, пĕр çыншăн,
Пĕр пĕтнĕ кил-йышшĕн
Хам пек ђухăн çын ан куртăр инкек!
Ахаљ те пĕр ват çын тăкаĭттăр куççуљ,
Çавна-çке çăласшăн çунаттăм вут пек...
Ну... кирлĕ пулсассăн—еп хам аçађуљ!
Калап çак тискер кун:
Ман урлă хĕн-хурлăх ан тивтĕр йала!
Хаљ çеç йухнă йун
Ӈикам пуçне мар вăл—хуплатăр мана!
Таса, таса мар-и ман хĕмлĕ ђĕрем—
Хăйех пĕлсе татĕ тăн-пуçлă етем...

***

Ак çак самантрах ăлăк уçăлаĭ
Кĕрет пĕр хусах,—сасартăк калаĭ:
— Ђасрах тух, Ђакка; кĕтеççĕ сана...
Ђакка тытăнмасĭ—сикет тулалла.
Паххомккă шайкки хайар тимнеле,
Кашни лав çине ик-виççĕн ларса,
Тухаĭ те вĕçет кантур йеннелле.
Пĕђĕк йал йулаĭ хытса, шăп пулса.

***

Пĕр виçĕ кунтан мĕн пур таврана
Сарлаť хăвăртах хаваслă хыпар:
Паххом тĕртнипе,—усал тăшмана—
Тискер кантура тĕп тунă пушар!..
Пурмис та, тийек те кĕређђĕç тĕне,
Анђах, телейе, килте пулайман:
Ĕçпе, уйесри çарпуçĕ патне
Кайайнă вĕсем пĕр-ик кун малтан.
Çаплах, Тĕвенеш те пулман кантурта,—
Уйес хулине ăсатнă ăна.

## XVI. ÇĔРПŸРТ КАССИНЂЕ.

Ака уйăхĕн ађаш кунĕсем.
Çăра çулçăпа тумланђĕ вăрман.
Каллех ак çитрĕç куксем, шăпђăксем—
Хура вăрмана йараççĕ йан-йан!
Кушлавăш таври йем-йешĕл çтена
Кашлаť, ђўхенет çурхи лĕп çилпе,
Хĕлпех сĕм пўртре пăђăхнă сынна
Ђĕнет илĕртсе ђеђен хўтлĕхне.
Уйсем хуп-хурах—унта çураки;
Кашни кĕтесрех хаваслă сассем.
Йухаť йăлкăшса Кушлавăш çырми,
Çырма хысипе—кăвак ђеђексем...
Кунсем ыррипе, ĕçђен арçынсем
Иртен пуçласа каçђен—акара:
Пурте пур унта, пурте йал-йышсем,—
Анђах, пĕр Ђакка курăнмасť уйра.

***

Кушлавăш уйне хыçа хăварса
Çут кăнтăр йенне кун çурă утсан,
Сĕм-тĕттĕм вăрман кăшт таткаланса
Ĕшне-уйсемпе уçăлаť хушран.
Ку уçлăх тăрăх васанлă çыран.
Выртаť йалкăшса мерђен шывĕпе,

Çыран ик йенпе çулăнман кăлкан
Ӱсет ђăшкансах вăрман хӳттипе.
Пĕр уй хĕринђе, хĕвел питне тӳрт,
Мерђенлĕ çыра пат урлă пăхса,
Лараççĕ йĕркен çиђ-сакăр çĕрпӳрт:
Кунта таркăнсем пурнаççĕ хытса.
Паххомккă шайкки хăй каннă тĕлте
Йалан çак хӳтте пытаннă килсе,
Нумай та мар-ха ку çĕнĕ çĕрте,
Пĕр çул йахăн çеç пурнаť вăл сиксех.
Ђакка та ĕнтĕ çемйи-мĕнĕпех,
Пăлхавăр хыççăн пытанђĕ кунта;
Пĕр лапђăк пӳртре, сукмак хĕрринђех,
Пурнаť вăл çунса виç уйăх ытла.
Çĕрпӳрт кассинђен вун çухрăм кайсан,
Пĕђĕкçĕ Кутей—вырăс йаљ лараť;
Кунта хир-мĕн çук, çаплах-ха вăрман,
Кутей вăл хăй те вăрттăн çеç сывлаť.
Кутей—улах йал, таркăнсен йăви,
Паххом хăй унтан туха та пĕлмен.
Йал умĕ ушах,—ун çӳçе-хăви
Хупланă йала йут çын куççенђен.

***

Хусах-таркăнсем çӳренĕ ђухне
Ђакка йаланах йулаť хуралла;
Шăлаť, тасатаť çĕрпӳрт ăшсене,
Хутса ăшăтаť каптак[1]) вутпала.
Тирпейлĕх кӳрен ĕçђен стурăша

[1]) Каптак—каптака, хуçăлса хăрнă йăвăç тункати.



Ун пек ђух йалан инçе, пит инçе.
Тĕнђе хĕрнелле тĕллет вăл куçпа

Хайар хусахсем саваççĕ аван,
Мĕн тупнă йурвар, пур мул тупăша
Валлеççĕ ăна ик-виç тӳпе тан.
Анђах таркăнсем, хăш ђух нимсĕрех,
Хăйсем те выçах килеççĕ киле.
Кун пек ђух Ђакка пӳрте ђĕтретсех
Вăрçаť хăйне-хăй—çĕре... хĕвеле.

***

Пĕрре, çĕрпӳртсем пушанса йулсан,
Хуралçă Ђакка тертленђĕ ђылай.
Çемйи ун выçă. Çиме ним çукран
Лешсем çитессе кĕтет вăл пĕрмай.
Каç пулнă. Ак вăл, çĕрпӳрт умĕнђе
Лараť тĕлкĕшен пăлханђăк пуçпа,
Ун пек ђух йалан инçе, пит инçе
Тĕнђе хĕрнелле тĕллет вăл куçпа.
Ак, халђ те çавах. Умра, ту çинђе
Шыв урлă ăна сĕм хырлăх курнаť.
Ăна хирĕçех, вăрман тĕлĕнђе,
Хушка çут çăлтăр сиксе выљанаť.
Лараť-ха Ђакка. Тайпи çĕрпӳртрех
Çывраť ађипе сĕврек кĕтесре.
Хатар Йатарин—иртнĕ ернерех
Хусах пулккипе кайсађђĕ хире;
Вĕсем улт-çиђ кун калла килменни
Ђакка ђĕрине хускатаť туртсах.
— Çакланђĕç пуљ ку!.. Ай, сехре хăппи,—
Килмеççĕ!.. тесе хăраť вăл хытах.
Хура вăрман тăп... Тĕнђе тĕлĕрет.

Йе шăпђăк анђах йурра ~~тăртат~~,
Йе ак, сĕмлĕхре ӳхĕ ӳхĕрет,
Хăш ђух кăрăпђак хуллен лăрлатат̆.
Аван кунта питçурхи вăхăтра:
Улах!—килес çук тийекпе пурмис;
Анђах та выçă... тата пуç тавра
Нĕрлет те сырнат̆ çĕр пин ӳпре-вис!
Ђакка ђылайђђен ларат̆ йăпанса,
Имлет вăл пуçне каçхи илемпе;
Ăшне пусарма инçете пăхса
Вĕç çук ирĕкре йарнат̆ ђунĕпе...

* * *

Кăвак çут килет. Çĕрпӳртри Тайпи
Сасартăк, темскер, шарри! çихĕрет.
— Ђакка! Ах Ђакка! Ăçта тарам-ши?
Сăхат̆-çке, сăхат̆!.. тесе сĕмĕрлет.
Ђакка ваштăртах ђăмат̆ çĕрпӳртне:
— Мĕн пулђĕ, Тайпи?.. тет вăл хыпăнса.
Çӳçеннĕ Тайпи, кăш! шăлат̆ питне,
— Тĕл-л-лентĕм... терĕ тăн-пуçне пухса.
— Ку тĕлĕк ђăна пĕлтерсен каллех,
Ђакка, тем инкек пулат̆ пуђ сана...
Хăрушă ытла,—хаљ куç умĕнђех!..
Çитсе пек хамăр тин çеç вăрмана:
Леш çул ĕçленĕ сĕмри вырăнтах...
Шăпах, никам çук—иксĕмĕр анђах.
Пуçлатпăр пек ак курăслăх касма,
Тата çавăнтах ђĕренђе çурма...
Анђах ĕçлени ним те ӳсĕнмест,

Çуркам тăрăххи ăнса ђĕлĕнмест.
Ĕçў ăнманран вăрçса, тарăхса,
Шыв ĕçме тесе антăн çырмана.
Кĕтетĕп, кĕтеп—тухмастăн унтан!
Пырап та шырап сана ђылайран.
Курап пек умра, çырма тĕпĕнђе
Çăра хăйахлăх кăштăр хумханаť,
Анап та унта—курăк ăшĕнђе
Ес вил пек выртни курăнах кайаť.
Сехре хăпнипе, мĕн пулђĕ тесе
Сана тăратса лартма пикенеп,
Витсе тăракан çўл курăксене
Уçланкă пулма таптап та çĕмреп.
— Мĕн пулђĕ? тесе тĕпђеп пек санран:
— Çĕлен сăххăрĕ... терĕн ес хуллен.
Ак çак самантрах куратăп—умран,
Тымар айĕнђен тухаť пĕр çĕлен!
Пит пысăк çĕлен—хураскер, шуса
Пыраť ман патах ђаш-ђаш! ђашкăрса...
Çакна курсанах епĕ хăраса
Кăшкăрнă пулас... карăм вăранса
— Усал ку, усал... инкек хуçаť пулђ!
Ахалђ мар, çампах ăйхи те вĕçет;
Леш каç тĕллентĕм—каллех ку куççулђ...
Йатарин йурлаť, ерехе ĕçет...
Ак халђ те темле... килмеççĕ, ара?!
Хăруш!—тет Ђакка кĕрĕкне сарса.
Илемсĕр халап пĕтсе пынă май
Ђакка шăм-шакки çемĕçсе шанаť,

Ӑйхи пуснипе лăпланҫĕ самай,—
Хĕвел тухиҫҫен ҫывăрса кайаҭ.

***

Хĕвел тухайман. Анҫах кăвак ҫут
Сисми шăвăнсах ҫитет тӳпене;
Куккук та ĕнтĕ хĕрсех, ик-виҫ хут
Кукларĕ ҫĕрпӳрт касси тĕлĕнҫе.
Ҫеҫен ҫурхи каҫ ҫаршав аркипе
Ҫĕре варкăшса иртсе кайнă ҫух,
Тӳп-тӳп! ҫупакан сассем илтнипе
Вăранҫĕ Ҫакка. Пăхаҭ—никам ҫук!
Хуйханнă Ҫакка ҫупаҭ тулалла,
Кураҭ—ту ҫинҫен, хура сукмакпа,
Улт-ҫиҫ йуналут анаҭ варалла:
Малта ав Лавруш—ҫӳрен лашапа...
Пурин хыҫĕнҫе килет Йатарин,—
Лаши ун утаҭ такăнкаласа.
Йуланутсенҫен, утнă май, кашнин
Пăлкаҭ шурă пăс пĕлт пек йавăнса.
Лере ав—Тайпи, тĕтре ăшĕнҫе
Мерҫен пек шывпа кĕпе-йĕм ҫӳхет,
Ак вăл та сисет—ҫĕрпӳртсем патне
Хай ҫиҫ йуналут йурттарса ҫитет.
— Лаврушкă!.. Сывă-и?.. Ну, ĕҫсем мĕнле?
Ҫĕнмерĕ ҫасах хумханнă Лавруш,
Сăмах хушшинҫен пăхаҭ хыҫнелле;
Сăн-пиҫ ун шурнă, куҫĕсем хăруш...
— Наҫар пирĕн ĕҫ...—пуҫлаҭ вăл тăрук,—
Пĕр аллă салтак—апшурни камант

Йěрлет вěт пире ниçта тăма çук!..
Айта, лаша кӳл, таратпăр самант...

Ытти таркăнсем:

— Ахвоҥккă, Йашшут, Йемелккă, Алттын
Çакланђěç çěрле пиртен тăват çын.
— Пěтетпěр пурте хура шăналлах...
— Пěтместпěр... анђах тарас хăвăртрах.

Ђакка:

Йепле ку? ăçта?..
Хусахсем:
Хаљ çеç, каçхине, пěр пěђěк йалта.

Ђакка:

Ăçта ыттисем?!—
Йе тарђěç вěсем?..

Лавруш:

Вун çухрăм хыçра, çула картласа,
Сыхлаççě вěсем салтак ушкăнне;
Пире хăвăртрах пур мула пухса
Каларěç тарма Улхаш леш йенне.

Йатарин:

Пěтетпěр, пиђђе, ку ват лашапа:
Ђупмасť... кăштах еп лекеттěм таппа.

Ђакка:

Лăплантăм ěнтě еп саншăн тинех...
Мěнле те пулсан тарас пуљ, пěрлех.

***

Манаççĕ пурте сăмах-йумаха,
Кӳлеççĕ харсах улт-çиӈ лашине:
Мĕскер лайăхрах, мĕскер пит паха —
Тийеççĕ йăлтах лавĕсем çине.

---

## XVII. ХУПТЁРЛЎ.

Çурхи вут хёвел сăнне хёретсе
Хăпарђĕ малти хырлăх хыçĕнђен,
Тађка пĕлĕтсем кахаллăн ишсе
Шăваççĕ сайра çут кăнтăр йенђен.

Çĕрпўрт çыннисем пурте хатĕрех:
Мĕн кирлĕ—ăна тийенĕ йăлтах.
Ак кĕçвĕç, ак халђ хускалас пекех,
Хăшсем лав çине ларнă майлансах;
Сасартăк хыçран, тўр сукмак çинђе,
Çатрак-хăрăка—çатарт! тем çĕмрет.

Кĕç—тўп-тўп! сассем.—Ак, пĕртрĕ тĕнђе!
Шăпăрт таркăнсем,—пĕри те сикмест.

Унђђен те пулмасĭ—ђĕтренђĕ вĕтлем[1])—
Ак тухрĕ... мĕн ку?! Йанккас, кăвак луç!
Вун-вуник йупшер мăн мăйракисем
Пыраççĕ выртса. Ёрхет каçăр пуç...

Ак, ун хыççăнах, çил пек кустарса
Тухаĭ йуналут—Ивашкă хусах,—
— Ђасрах тармалла! Килеççĕ хуса,—
Хĕмлерĕç, ай-вай!—тет вăл кăшкăрсах.

---

[1]) Вĕтлем—вĕтлĕх вăрман, хунав.

Л а в р у ш:

Ăçта ыттисем?..

И в а ш к ă:

Хура вар тăрăх тӳр вĕçрĕç вĕсем...
Хăрушă иккен салтак пуљккисем—
Йĕрсе шăхăрса хăваççĕ хыçран!..
Ех, ырă вăрман,—хӳтлерĕн аван...
Çакна илтсенех тийеннĕ лавсем
Кустарђĕç тăсланк ĕшне хĕррипе;
Ђакка çемйипех... Шикленнĕ çынсем
Пыраççĕ пăхсах хăйсен хыçнелле.
Сĕм-хырлăх, хырлăх... ак ĕшне хĕрри...
Пыраççĕ лавсем хăвăрт кустарса.
Ак çак самантрах ушкăнран пĕри:
— Хăвалаççĕ!—тесе йарат̆ кăшкăрса.
Пăхаççĕ пурте харсах хыçалла,
Кураççĕ: ђăн та, çил пек вĕçтерсе,
Пĕр ушкăн салтак йуланутпала
Килет инçетрен çĕре тĕпретсе.
— Пăрахăр лавсе... вĕçер утланса!—
Васкатрĕ Лавруш. Пĕђђен таркăнсем,
Кашни хăй лавне вăр-вар тăварса
Утланђĕç харăс,—ак ирĕк вĕсем!
— Вĕçер, ну!—тейет Лавруш кăшкăрса—
Сиктерђĕç пурте хунав хушшипе;
— Лавруш, теп! Лавруш!.. тесе çуйăхса
Йулат̆ ак Ђакка ађи-пăђипе.
Ак, Йатарин те ђăтса тăраймаст̆—
Çумри вăрмана кушак пек ђăмат̆.

Ак вӑл хӑвӑртрах, ҫулйӗр мӗнсӗрех,
Тӑмарӗ Ђакка ђӗнсе пӳлӗнсех—
Ҫӑласшӑн ҫапах хавшак ҫемйине;
Ђӑмаӂ лавӗпе сӗм-хыр хушшине.
Нумай та кайман—тул лав пӳлӗнет,—
Унта та кунта кӑмӑр, ҫатрака...
Ђакка ҫывӑрмаӂ, хытса тӗлӗрмест,—
Тапас та сикес, пулмаӂ ку лавпа!..

— Тарар ҫуранах... ан йулӑр манран;
Тавай ађана!.. тейейђӗ Ђакка.
Пӗђӗк Илђуша хӑй алне тытсан,
Ђӑмаӂ ак Ђакка хунав ђӑтлӑха.
Ђӑмаӂ вӑл, ђупаӂ матур луҫӑлла,
Хунав-ђӑтлӑха ик йенне сирсе.

Ҫатрак хулӑсем вӑлђт-валђт сулӑнса
Ҫапаҫҫӗ текех хыҫри Тайпийе.

Ана пӳ йахӑн ђупса пӑшӑхсан
Хуйханнӑ кил-йыш канма ак лараӂ,
Йӗри тавралла ват хырлӑх вӑрман
Каш-каш кашласа темскер канашлаӂ.
— Ах ку, ӑш хыппи, пӗлмермӗр капла:
Пӑхӑр-ха йӗрре—паллах курӑнаӂ.
Тин шӑтнӑ курӑк, ҫемҫе-ҫке ытла,
Ура тивсенех тӗшрӗлсе анаӂ,—
Капла йӗр тӑрӑх тупӗҫ йӗрлесе!..
Ђим-ха пӑртак ҫех итлесе ларар...
Ак ҫак вӑхӑтрах Йатарин ҫитсе
Лараҫҫӗ канса пурте йунашар.
Канаӂ, канашлаӂ хӗн-хурлӑ ҫемйе

Каш-каш кашлакан ват хыр айĕнҫе.
Шаҫарт! тăвайса турат хуҫăлать.
Унтах, инҫе мар, кайри йĕр ҫинҫе
Пĕр-ик хут măр-măр сас măкăртатать
— Йĕрлеҫҫĕ, пиҫҫе!.. терĕ Йатарин
— Шыраҫҫĕ... ҫавсем... тарар!—тет Ҫакка.
Сехри хăпнипе вăй та ҫук Тайпин.
Тăраҫҫĕ вĕсем—тапратрĕҫ ҫупма.
— Сто-о-ей!.. тесе йаҫĕҫ хайар сасăсем.
Ҫавах та Ҫакка, аҫине йăтса,
Хырсем хушшипех тапса пĕрĕхет.
— Ах, Ҫакка!.. терĕ Тайпи йынăшса,
Ак вăл ҫупаймасть—ӳкет вăл, ӳкет!
Тайпи йевĕрлех йăшнă Йатарин
Сехри хăпнипе хăйне хăй пĕлмест.
Хыт шăнăр Ҫакка,—тытаймĕҫ-ҫке тин!
Туналлă луҫлах сиксе ĕрхĕнет.
— Стой! та стой! теҫҫĕ каллех сасăсем.
Ак, пăшал сасси: пăнн! панн! йантратать.
— Вшинн! те вши-инн!—вĕҫеҫ тăхлан пулҫк-
кăсем.
Ҫут сывлăш ҫĕтрет, вăрман йынăшать...
— Мĕн пулĕ капла?!—ҫӳҫенҫĕ Ҫакка,
Ларать вăл ҫасрах măк каски ҫине.
Пăхать кайалла—никам ҫук унта!
— Ех, турă, лекрĕҫ лешсен аллине!..
Вут пек пĕҫерет Ҫакка шăм-шакки,
Ҫан-ҫурăм ҫине вĕри тар тапать...
Шари! те-шари! макрать ун аҫи,—
Ҫасрах вăл аҫин ҫăварне хуплать.

— Капла йурамасҭ... ирĕклех парнас...
Пĕтестĕк пĕтес çемйепе пĕрле...—
Хĕрў шухăшсем çиçĕм пек пит ђас
Иртеç выљанса Ђакка пуçĕнђе.
Ак тăђĕ итлет: ăçта-ха кусем?!.
Вун утăм утаҭ калла итлесе;
— Стой!!! тесе йађĕç тискер сасăсем.
Умри вак хунав кайаҭ ђĕтресе.
Тап! тăђĕ Ђакка, пăхаҭ сас йенне:
Хунав хушшинђен пăшал кăнтарса
Ик вăрăм салтак ђупаç ун патне.
Пĕри çитсенех çапаҭ кăшкăрса,—
Антрарĕ Ђакка—ваштах сулăнаҭ.
— Ут!.. теççĕ ăна. Ђĕнмест ку, утаҭ.

***

Йем-йешĕл ĕшне[1])—хунав пуснăскер...
Унтах лашасем, ик-виç пушă лав,
Пĕр ушкăн салтак, çарпуç—ахвитсер,—
Ĕшне туллийех хаваслă йăслав...
Кунтах Ђакка лавĕ лараҭ пĕр йенђе.
Ун лавĕ тавра çиђ-сакăр салтак;
Тайпи, Йатарин вĕсен хушшинђе
Тăраççĕ сĕнксе,—хавшанă йăлтах.
Пĕђђен ахвитсер—йаштак, вăрăмскер,
Хăрах аллипе хĕç йĕнне тытса,
Теприпе çўхе шĕлепне йăтса,
Тăраҭ усланкăра сивлек те тискер...
Çемçен вĕрекен çурхи ăш çилпе

1) Ĕшне—вăрманти уçланкă, пĕђĕк уй.

Вĕçет ун вăр-вăр кăтра сарă çӳç;
Пăхать хăй йалт-йалт хурђка куçсемпе,
Хистет кĕтӳне—ђурасен кĕтӳç.
Пĕр роттă салтак—патвар салтаксем—
Ёшне тавралла çӳреççĕ çиççе;
Леррех виçĕ çын, ђăваш лавăçсем,
Тăраççĕ пăш-пăш сăмах пĕçерсе.
Ак çак ĕшнене илсе кăларсан,
Ђакка таркăна хăй йышпе пĕрлех
Ахвитсер умне тăратрĕç малтан;
Кунта хайхине пуçлаççĕ çимех.
— Ну-ка, лавăçсем, камсем ку çынсем?
Паххом-и, паллăр?.. терĕ ахвитсер.
— Пĕлместпĕр епир... епир хиртисем...—
Терĕ кусенђен сар сухаллăскер.
— Паххом-и ес, йе?.. Ăçта ыттисем?—
Хайаррăн хĕсет йаштак ахвитсер.
— Çук, еп таркăн мар: пĕлместĕп еп... тем...
Еп Кутей çынни,—тет Ђакка имшер.

Ахвитсер:

Йалу кирлĕ мар!.. Йепле вăл сан шӳт?!
Кала: ăçта пур тата вăрттăн хӳт?

Ђакка:

Ытла та ӕслă ку хура вăрман—
Ун пысăкăшне виçсе илме çук...
Пăлан пек каскăн Паххом-утаман,
Ăçта вăл пайан?—ăна пĕлме çук...

Ахвитсер:

Пĕлетĕн...хаљ çеç вĕçтерђĕç вĕсем...
Айта, тупса пар,—тупмасан пĕтен!

Ђакка:

Таςта вăл ςӳрет—йепле еп пĕлем?
Хусах шайккипе епĕ ςӳремен...

— Ан суй!..—кăшкăрат̆, урат̆ ахвитсер,
Йакăшт! кăларат̆ йĕннинђен хĕςне,—

— Калантăк кала— ђăннине пĕлтер!
Тунатăн пулсан касап ђĕлхӳне!
Ђĕнместне тата? Ак сана! ак! ак!..
Тискер ахвитсер хĕςςи тӳртĕшпе

Ђаккана хыттăн ςапат̆—шак! та-шак!
Тайпи—ах!.. тесе хуплат̆ пит-куςне.
Иљуш мĕкĕрет—ςурат̆ таврана,
Улт-ςиђђĕ ςапсан лӳђ! ӳкет Ђакка.

— Калатăп... ан ςап!..—терĕ вăл аран.
Мĕн пур пек салтак пухăнђĕ унта.
Ак ăна иккĕн ςĕклеςςĕ алран.
Ђакка тăраймаст̆, тытаςςĕ ăна.
Тайпи, Йатарин йĕреςςĕ ӳксех.

— Кала, ну ђасрах, ăςта вăл Паххом?
Хĕсет ахвитсер шăртланса ςитсех.

Ђакка:

— Кайас пат̆ ђылай вăрман-шурлăхпа...
Хĕр шыв лешйенне хаљ тарђĕς вĕсем...
Тупап...—тет Ђакка хурланђăк саспа.

Ђĕтреςςĕ унăн алли-урисем.
— Айта, тупса пар! Халех илсе кай!

Паххом шайккине тытма пулăшсан
Ҭивместĕп сана... пул ес пирĕн май,—
Терĕ ахвитсер çилли çаврăнсан.
— Йурат-çке, илĕрт, ĕненĕп сана,—
Шутларĕ Ђакка пуçне кăшт сĕлтсе;
Анђах çав хушрах урăх сăмахпа:
— Кăтартăп, айтăр...—тет хăй тилмĕрсе.
— Кайатпăр халех...—терĕ ахвитсер,—
Суворăв йевĕр матур пулмалла:
Тăшман тенине ђасрах пусмалла...
Кайар!..—терĕ вăл. Салтаксем имшер.
Вĕсем хавас мар вăрман тĕпнелле:
Сĕм-сĕм йут вăрман вĕсемшĕн—шў-шў!
Анђах, мĕн тăвас?!. Мĕскер темелле?
Улпут мĕн хушаŤ—пултăр килĕшў!
Çарпуçĕ пĕр сий шухăша кайаŤ,
Сасартăк ак вăл хушусем параŤ:
— Ак ку çўп-çаппа леçес кантура...
Пĕр лав, ик салтак: Сквортсов! Ваççилђук!
Ăсатăр халех кусене унта...
Асту, çул çинђе ниçта тартас çук!
Вĕçтерĕр халех...—терĕ ахвитсер
Ђакка йыш çине кăтартса парса.
Ђакка ăш-ђикки вăркарĕ темскер,—
ВăркаŤ вăл паллах, инкеке туйса.
— Вашшĕ плахороŤ!.. çемйене хăтар...
Хама хуŤ тем ту—вĕсене ес йар!
Мĕн пур айăп ман хам ђухăн пирки...
Тата ыларах çын елек пани...—
Ђунран йăлăнаŤ Ђакка çарпуçне.

Анђах ахвитсер ăна итлемест,
Йарат̆ кантурах Ђакка çемйине.
Пĕр ђун пек çемйен тĕвви сӳтĕлет.
— Утланăр харăс!.. Пурте йуртăпа!—
Кăшкăрђĕ хыттăн хĕрӳ ахвитсер.
Камантă сасси йарнат̆ вăрманпа.
Каш! кашлат̆ сĕмлĕх. Ун ăшĕ тискер.

## XVIII. ЂАККА—ТЫТКĂНРА.

Пăђ тĕттĕм. Çĕрле. Шав çамлăх варри[1]).
Вăрман çийĕнђе хура пĕлĕтсем...
Çиçет тек çиçĕм, кĕрлет аслати.
Ђĕтреççĕ тĕпрен катмар йумансем.
Тĕнђе талкишпех йăванса килсе
Хуплаççĕ çĕре тĕтре куписем;
Кĕç çăмăр тăкса йарасса кĕтсе
Ђĕнмеççĕ ўхсем, шăпах шăпђăксем.
Ак çак самантрах мăн вар хĕрринђе,
Лутра, лапсака ђăрăш айĕнђе
Вутхĕм сирпĕтсе кăвайт йалкăшаť,
Кăвайт иќ йенђе ик-виç хуш лараť.
Лăс çапă витнĕ хушсем умĕнђе,
Малта, уйрăмрах—пĕр карнă шалаш:
Çурта çутатаť шалаш ăш-ђикне...
Унта ахвитсер. Темме вăл йăваш!
Лараť ахвитсер каска çийĕнђе,
Ун аллисенђе вăрман ђеђексем.
Шăршлаť ђеђекне вăл. Унтах пуçĕнђе—
Манми хĕр сасси... ун кăвак куççем...
— Пĕлмест-çке-ха ун ђĕр çеçпĕл пек хĕрĕ,
Йепле ку, тискер ђăваш çĕрĕнђе
«Ĕçлет» ак патшашăн кунĕн те çĕрĕн?!.

[1]) Шав çамлăр варри—шавлакан çулçăллă вăрман хушши.

Инçе вăл... инçе,—Украйнă йенҫе
Ҫеҫен сатсенҫе çӳрет-тĕр çиççе...
Ах киҫем, тискер ҫăваш çĕрĕнҫе!.—
Таттисĕр шухăш хуплаŏ тек килсе.
Сасартăк çиçĕм—вутхĕм сирпĕтет!
Тăрук çĕкленет йаштак ахвитсер,—
Пăхаŏ тулалла: кăвайт тĕлкĕшет...
Çил-тăвăл... тĕттĕм—çӳçенҫĕк, тискер!
Шавлаççĕ шав! йуман тăрирсем,
Турат хуçăксем çăваççĕ çӳлтен.
Хушсен хӳттинҫе ларан салтаксем
Хĕрсех сăхсăхаç хайар çиçĕмрен.
— Амроçйĕв!—терĕ ахвитсер хуллен,—
Тавай-ха кунта Ҫакка таркăна...
Пĕр ватă салтак, ку сасса илтсен,
Ҫаккана вăрт-варт кӳртет шалаша.
Ҫакка кĕнĕ ҫух хайар аслати—
Ҫи пуç тӳпинҫех çĕмĕрсе кайаŏ;
Хура пĕлĕтсен хуçălaŏ кашти,
Ҫĕресĕ тӳнет,—çăмăр тăкăнаŏ.
Хайар аслати патрах çапнипе
Мăнаç ахвитсер те илет сăхсăхса,
Ăна вăл патша хăваҫпе виççе
Ҫакка çинелле пăхаŏ шăтарса.
Ҫакка та шутлаŏ: ах, манăн пĕрре
Çав аслати пек пуласҫĕ хăват;—
Çĕмрĕттĕм вара... таптăттăм сире...
Ак, хаљ те йатлаŏ санах вăл—хăйамат!
Ех... кайăк пулса—инçе, айакка
Вĕçейттĕм санран!—шухăшлаŏ Ҫакка.

Тек çиçӗм çиçсе аçа çапнине
Çанталăк маҫҫи ишӗлнӗ пекех;
Вăрманӗ шавлаť, çӗмӗрлет тӗппех.
Хушсем айӗнҫи йӗпе салтаксем
Ҫӗркуççи çинҫен кӗллеççӗ турра;
Асар-писер çил, çӳлти хăватсем
Çăтса йараслах вӗсене йутра!
Кӗçвӗç ак Паххом шайккипе çитçе
Йӗри тавраллах хупласшăн туйăнаť,
Матур ахвитсер илет çӳçенсе,
Анҫах улпута хавшак йурамасť:
— Хурах,—терӗ вăл,—кала ҫăннипех:
Патрах-и, ӗнтӗ, Пахгомккă шайкки?..
Шанатни, есӗ, ăна ушкăнпех
Ыран ир тытса илесси пирки?
Асту, ес, ан суй: суйсан пӗтереп,—
Халех вут çине хурса вӗтелеп!

Ҫакка:

Каларăм сире: виç çухрăм анҫах...
Ыран ирхине тытмашкăн аван.
Ытти ҫух йалан хурал тавраллах.
Ирпе—пыр та тыт!—çывраççӗ пӗр тан.

Ахвитсер:

Кала ҫăннипе: миçе çын вӗсен?

Ҫакка:

Каланҫҫӗ сире—аллă çын ытла.

Ахвитсер:

Хăватлӣ вӗсем хӗçпăшал йенҫен?

Ҫакка:

Ех... ан та кала!..

Ахвитсер:
Мĕн-мĕн пур вĕсен хĕçпăшалсенђен?

Ђакка:
Пĕр вăтăр пăшал... хĕçсем, ухăсем...
Пăшал тавраш не салтак ушкăнђен
Илнĕ çĕмĕрсе Ђĕмпĕр патĕнђе.

Ахвитсер:
Еппин çăмăл мар унта çывхарма?
Çĕнейĕп-и еп пур пек салтакпа?

Ђакка:
Пĕлместĕп, хĕн пуљ... çампа еп сире
Сĕнетĕп ирпе, çывăрнă çĕре...
— Ну суйрăн... çитет!—терĕ ахвитсер;
— Амвроçийĕв!—тет вăл. Ват унттĕр кĕрет.
Хураллăр кăна... асту, ан вĕçер,
Алли-урине çыхсах тĕвĕллет!
Ђеретлĕ хурал икшерĕн тăрат...
Ытти салтаксен вырт сан та йурат,
Анђах хĕçпăшал çумрах пулмалла,—
Тет те ахвитсер, пăхат тулалла.
Тулта ĕнт самай: тăвăл тамалат...
Шавлат-ха çăмăр, кĕрлет аслати;
Анђах кай йенђен уйар курăнат,
Унтах йăлкăшат пăнђ çăлтăр çути.

***

Шĕвек кăвакçут тухат йăпшăнса,
Касхи сĕм-ђаршав майпе усăлат...
Кас-кас сулхăн çил килет вашлатса,
Йуман айсенђе тăмла шăпăркат.

Инçе, мал йенђе—тĕнђе хĕрринђех,
Çиçет тек çиçĕм сиксе йăлтлатса.
Вăрман çийĕпе ăмăртса пекех
Çӳхе пĕлĕтсем ђупаç унталла.
Нӳр сывлăш—уçă: ансат сывлама...
Шыв-шурлăх çинђе тĕтре шуралать.
Çаранлă васан сырнать сывлăмпа
Ђеђек-çеçкерен ыр шăрăш сарлать.

***

Ĕнер кунĕпе ырнă салтаксем
Çывраççĕ вил пек. Çывраĭ ахвитсер.
Анђах ик салтак—Ђакка хуралçсем
Лараççĕ çаплах, сĕнкмеççĕ нимскер.
Çывраĭ-ши Ђакка?—Çук, вăл çывăрмасĭ.
Анђах хăй çавах çывран пек туса
Ват ђăрăш кутне хутланнă выртӑĭ;
Пуçне шухăшпа çавраĭ çунтарса:
— Мĕнле вĕçернес?! Йепле хăтăлас?!
Çук, çук—пулаймасĭ! Ан та ĕмĕтлен!..
Хуралç салтаксен куçĕ хупăнмасĭ...
Ав тул çутăлаĭ— ех, Ђакка, пĕтен!..
Вут-хĕмлĕ, хĕрӳ хайар шухăшсем
Памаççĕ канма Ђакка ăш-ђикне,
Алли-урине тĕвлен кантрасем
Пăваççĕ,—пит хĕн йун тымарсене.
Аптраĭ вăл: хыçа çыхнă алсене
Çыххи каснипе текех турткалаĭ;
Ак, хăй те кĕтмен мĕн пулассине,
Çапла туртăшса çыхха пушатаĭ.

Пушаннă алсем, хăват илнипе,
Ĕçлесшĕн текех—хурал сисмен ђух;
Алсем ун хыçра—ĕçле тек майпа,
Вĕсем тем тусан та салтак курас çук!
Мăшт та мăшт сывлаť çывран пек Ђакка,
Анђах хăй сăнаť хуралçăсене:
Тавра—мĕн çăт-çат, мĕн пурра-çукка
Итлет вăл йăлтах,—манмасť ĕмĕтне...
Шăпăрт пулаť ак пĕр самант хуши.
Ђакка ђăлт уçаť ђĕрĕ куçсене.
Кураť: квайтра пăлкаť вутпуççи;
Унтах ик салтак тӳннĕ ик йенне...
Лăстăр ђĕтренет йуманлăх тăрри;
Пĕр шăпђăк патрах йурра шăратаť...
Аван-çке ирпе ку шăпђăк йурри,—
Йепле вăл çынна ђунран ађашлаť!
Те шăпђăк йурри ађашланăран,
Те ĕнер ытла утса ырнăран
Хурлаç салтаксем шăпах ак, тăпах;
Сикмеççĕ вĕсем,—куçсем те хупах!..

***

Ђакка ђĕрĕлет. Ђасрах, пур вăйпе,
Кăрт-карт! вăл туртаť хыçри алсене—
Алсем ирĕкре!.. Хĕрӳ алсемпе
Салтаť те йараť ури çыххине.
— Ей, турă, хăтар... Пĕр çурă самант...
Тепле сиссенех пĕтеп-çке пушшех!
Ак ђунсăр Ђакка çĕкленђĕ вăшт-вашт,
Кушак пек шăваť хушсем хыçнерех.

Пĕр хуш хыçнелле йăпшăнса çитсен
Сывларĕ вăл—хаш! Ак вĕçрĕ хăвăрт.
Васканă йенне, инкек-çке пĕтмен,
Ури айĕнђе пĕр турат—шăтăрт!..
Унђђен те пулмасŤ ҳуралç салтаксем—
— Сто-о-ой!.. тесе йађĕç вăрмана çурса.
Йăлт! пăхрĕ Ђакка—хăваççĕ вĕсем...
Пĕррех вăл сикет луç пек йарăнса.
Сикет вăл, ђупаŤ ват çам хушшипе
Кĕç пуљккă çитсе çапасса кĕтсе.
ЂупаŤ те хашкаŤ ђĕри сикнипе,
Ак, аран ђăмаŤ вĕтлĕхе çитсе.
Ик-виç хут пăшал кĕрслетрĕ хыçра.
Унтах хайар сас—ахвитсер сасси
Тем-тем йатлаçса йантратрĕ тавра.
Ђакка хăтăлаŤ,—пулмасŤ тытасси.

---

## XIX. КИЛ-ЙЫШНЕ ÇĂЛМА

Çăра çам вăрман. Шултра йумансем
Лараççĕ çилпе хуллен шавласа,
Вĕсем хушшинҫе лашман каскисем
Выртаççĕ шўсе, мăкпа хупланса.
Кунтах пĕр катмар тунката çинҫе
Лараť ак канса хай таркăн Ҫакка;
Çĕнми шухăшсем вĕри пуçĕнҫе
Кансан та канлĕх памаççĕ ăна.
— Кил-йышăм! Кил-йыш ман!.. Мĕскер вăл
тўсет?
Хам пуçăм пĕтсен те çăлам кил-йышне...
Ах ку, хăçан-ха каç пулса çитет,—
Шырап, тупатпах вĕсен тĕрмине...
Нумай, пит нумай шутларĕ Ҫакка.
Анҫах ҫылайҫҫен куçне хупмансker,
Тата пайан та утса ырнăскер,
Шутланă çĕртех кайаť ăйăха.
Ырмасăр?—Пайан вăтăр çухрăма,
Пĕр çулсăр, луç пек тухнă вăл утса!
Çапла килнĕ ҫух çатра та çырма
Хупланă ăна утма хăратса.

***

Ђакка ӑйӑхпа нумай канаймасӑ:
Çуммах пӗр пакша таЂ! сиксе ӳкни
Сасартӑк ӑна вӑратса йараӑ...
Инçех те йулман хӗвел анасси.
Пӗрре хӑй тавра пӑхайса илсен,
Ак вӑл умӗнЂи каскана тӗллет;
Катмар йӑвӑçа касса йанинЂен
Ђакка хӑйне хӑй мансах тӗлӗнет:
«Ай-ай, шеремет, лашман çыннисем
Мӗнле-ши тӳснӗ катӑркӑ ӗçне?!.
Ик-виç çӗр çулхи кӗре йумансем
ТӳЂлетнӗ вӗсен пуртти каснипе!
КалаЂЂӗ-çке-ха Тӗвенеш муЂи—
МакраЂЂӗç, тет Ђас лашман Ђурасем;
Аптратнӑ пуЉ çав ун Ђух та патши.
Паллах, асапран макӑрнӑ вӗсем...
Мӗн Ђухлӗ йуман карап пурама
Турттарнӑ у нЂух Хусан çывӑхне?!
Ак каснӑ кӑна—илсе тухайман...
Ех, ӗмӗр хӗн-хур пирӗн пеккине!—
Пӗр тапхӑр хытсах тӗлӗнсе илсен,
Ђакка ак каллех хӑй çине куçаӑ.
Хӗвел аннӑ Ђух, тӑраӑ вӑл хуллен,
Лашман çулӗпе уй йенне утаӑ.

***

Каç пулнӑ. Тӗттӗм. Тӑпах сӗм-вӑрман.
Пӗр шӑпЂӑк анЂах йанраӑ сӗмлӗхре.
Çанталӑк тӳлек ӑшӑ тӑнӑран
Выç вӑрӑм туна сӗрлет тӗттӗмре.

Ак çак сехетре вăрман тĕпĕнҫен
Тухаť хай Ҫакка Кушлавăш уйне;
Тухаť вăл çулсăр, пĕр сассăр, пĕҫҫен,
Тухаť те лараť, пăхаť йал йенне:
Анҫах савнă йал ăна курăнмасť,—
Малта вăл, хура лапам тĕпĕнҫе.
Çывраť уй—канаť, анҫах шăп тăмасť:
Йе йытă-каҫка ханккаť йал йенҫе,
Йе ак айлăмра, арман хыçĕнҫе,
Шывшур шарлатса сикни илтĕнет;
Унтах шапасем—пĕве хӳринҫе
Асса туй туни тек ťакăљтетет.
Йе тĕттĕм, тӳлек, сикми сывлăшра
Çара çерçи мĕн вĕçет пуç çинҫен.
Анҫах ку сассем каçхи вăхăтра
Пĕр майлă тăлăх, хăватсăр, пĕҫҫен...
Лараť-ха Ҫакка, канаť вăл, итлет,
Таттисĕр шухăш тухмасť ун пуçран;
Нумай та утмасť—пуçне вăл çĕклет,
Илтет ак уç сас—пĕр йурă таçтан.
Ҫакка лараймасť, хавассăн тăраť,—
Таçта, тĕттĕмре тăсакан йурра
Кĕвви-сăввипех тытса вăл çăтаť.

„Шăнкăр-шăнкăр сиксе ай шы-ыв йух-а-аť
Çул çинҫен мар анҫа-а-ах ай ҫу-у-у ул çинҫе-ен;
Кĕске ĕмĕр ирте-ет, кунçу-ул вас-ка-а-аť
Ырлăх-сумлăхпа ма-ар,—хĕн ху-ушшинҫе-ен.
Ураť çилĕ, тулха-аť—вăрма-анҕ кашла-аť
Тата темскеер ха-а-лĕ-ĕ çăва-асси пу-ур,
Хĕсет саккуҕ, хĕсе-ет,—халă-ăх макра-а-ť,
Тата темскер умр-а-а кура-асси пу-ур...

Йурри хурлăскер—йанраť тăплăхра:
Хěрў, авкаланђăк йурă кěввисем
Патри айлăмран шăранса тухса
Йухаççě тавра. Тěттěм кěтессем
Тăнлаççě ăна шăп пулса тăрса.
Ђакка та çаплах тăнларě ăна:
Унта туллийех пурнăçри хěн-хур,
Пуçри хуйăха, ăшри хурлăха
Ак, уншăн пекех шăратрě ку йур.
Ак вăл ђăтаймасť, утаť васкаса
Хай йурă йухса тухан вар йенне.
Кураť—васканра кăвайт йăлкăшса,
Сўни-сўнейми сапаť хěмсене.
Хавассăн утаť Ђакка вут патне.
Çывхарђě. Кураť—ђылай çын мěлки...
Ак йурăç ђарăнаť. Вăйлатрěç вутне.
Ђакка та паллаť: Љарук, ав Мики!..

***

— Ей, хам тăвансем, йурлатпăр хěрсех!..
Лашасемпе пуљ выртатăр кунта?
Аван-и?—терě Ђакка çитсенех.
Хуйханнă çынсем шăп пěр саманта.
— Ђакка-çке!!! Ăçтан? Тарса-и? Мěнле?..
— Шăллу сан çинђен каланђђě йалта...
— Ех, Ђакка, ěнтě тинех пěтмелле...
— Апшурни камант çийет вит кунта!..
Вун-вуник етем,—выртма çыннисем,
Вун тěрлě ђěнсе тěпђеççě унтан.
Ђакка пěлтерет. Ун тип сăмахсем

Кĕске те пулсан тытаççĕ ђунран.
Калаçнă хушрах ĕшеннĕ Ђакка
Ĕçме-çимелли ыйтаҭ кӳршсенђен,
Параççĕ сĕтпе тип çăкăр ăна;
Çийет вăл—тĕпђет хăй йышĕ çинђен.

Љарук:

Йышна пайан ир йађĕç кантура,—
Хаљ ĕнтĕ вĕсем кантур тĕрминђе.
Ађу сан кунтах, хаљ хуњамура;
Вилмест ĕнтĕ вăл таван аллинђе...

Мики:

Сан йышна çеç мар, тата ик çынна—
Кĕслеç Йуксарпа Кĕске Ентрине
Ăсатрĕç пайан салтаксем тытса;
Ирпе, сан йышпах йађĕç вĕсене.

Љарук:

Ай-ну салтаксем—тискер кашкăр май
Ђĕтретрĕç йала шăпах виçĕ кун...
Пĕр çирĕм çынна ислетрĕç ай-ай!
Каллех таврăнсан—йулмасҭ ђĕрĕ ђун!

Ђакка:

Ех мĕскĕн пуçсем... асап вĕсене!..
Парсамђђĕ, Мики, çӳрен лашуна,—
Ђасрах вĕçтерем кантур тĕрмине.
Пурне те çăлма хурап хам ђуна.

Мики:

Йепле ес кайан? Çуктăр сан вăй-хал?
Кайма та унта хăрушă, ай-вай!
Унта вĕт салтак... тен çĕрпех хурал...
Лашишĕн пулсан—утлан та, вĕç-кай...

Ђакка:
Хёвел тухиђђен çитеп-çитетпех:
Йе хам çакланап, йе йăлтах çăлап...
Лексен те лекеп—пĕгетпĕр пĕрлех...
Анђах лашăра мĕнле-ха таврап?!

Мики:
Хам пуç шалккă мар пĕр саншăн пулсан!
Татах ик лаша йулаттăр хама...

Ђакка:
Йураĭ, ырă тус!.. Анђах ђи малтан,
Курасђĕ манăн манми ађама...

Љарук:
Йалтах вăл—куран... кай... пит ан хăра:
Кунти салтаксем хаљ çук-ха, ара...

Ђакка:
Нумайђђи кунта вăл апшур пуçсем?

Сассем:
Пĕр вунă салтак çӳређђĕç вĕсем...

Ђакка:
Кăвак çутăђђен васкасђĕ хаљ ман...
Тен, майлă пулсан, тĕл пулпăр кайран...
Ан манăр!.. тесе васканђĕ Ђакка.
Пĕр-ик самантран лаша ун умра.
Утланђĕ ак вăл çӳрен ут çине,—
Ыр сывлăх сунса, вĕçет йал йенне.

Љарук:
Çак таркăн пирки ĕнтĕ курмалла.
Хăтланђĕç хĕлле... ак хаљ, ђăтмалла!

Мики:

Ђакка-и унта?—Ан аташ, Љђарук!
Саккуњ мур!.. Саккуњ йёркеллĕ пулсан
Ђакка та, ес те нимскер курас çук,
Асаймĕђ йалта нимĕнле пуйан...
Ђăнах ку, Љђарук, çавăн пек саккун:
Кам муллă, пуйан—çавнах пулăшаť,—
Пур пуçлăх, улпут унпала пĕр ђун!
Кам ђухăн, нађар—вăл татах путаť...
Шур йур пек таса, тĕрĕс-хă ес ху—
Таптаť ак сана, сăхаť пуйан çын...
Анђах та ан ђĕн, ан хирĕç, асту,—
Хирĕçсен пĕтен,—ун майлă пур ђын!

***

Выртма çыннисем тавлашрĕç ђылай,
Калаçрĕç ирђђен кашни харпăр май;
Тĕлнеççĕ вĕсем Ђакка ђĕрринђен,
Апшур каманти çĕмĕрни çинђен.
Анђах пĕр Мики нумай калаçмаť,—
Лараť вăл çунан кăвайт патнерех—
Хура куçĕсемпе вутта пăталаť,
Тăсаť хăй йурра хавас кĕвперех.
Хастарлăн йанраť ун йурри-кĕвви,
Унпа сўтĕлет пур хуйăх тĕвви.

## XX. ĂНĂÇСĂР ХĂТАРУ.

Çуркаç тĕлĕсем. Çĕр çийĕ тăпах.
Йăлтраççĕ çӳлте хушка çăлтăрсем.
Лӳ-лӳ! сулхăн çил çапаť тăтăшах.
Çывраççĕ йалсем, уйсем, рашђасем.
Ак çак самантрах рашђа çуммипе
Пыраť пĕр пĕђђен Ђакка йурттарса,
Пыраť вăл çинçе сукмак ĕрешпе
Кантур йалнелле тӳрĕ çул тытса...
Ак хай йал умра—рашђа хыçĕнђех.
Кунта ĕнтĕ вăл лараť çĕн кантур.
Каç хӳтлĕхĕпе, шикленмесĕрех,
Ђакка ку йала çитет пит матур.
Кантур—çĕнĕ çурт, кивви вырăнђех,—
Лараť ĕлĕкхин кăмрăкĕ çинђе.
Хаљ çеç тунăскер—çурђĕ пĕђĕкрех,
Ик-виç хуралт çеç ун таврашĕнђе.
Кантур çывăхне пырса çитсенех
Ђакка кăкараť çӳрен лашине;
Ак пĕђĕк тĕрме—лараť пĕђђенрех!
Ђакка йăпшăнаť ђасрах ун патне.
— Кунта пуљ Йуксар... Ентри... ман кил-йыш.
Çунаť, хыпăнаť ĕшеннĕ Ђакка.
Тăпах-ха, ђĕнмест ăйхăллă картыш,
Туймаст вăл шуса пыран таркăна.
Тăраť ак таркăн тĕрме хыçĕнђе—

Пур пек сас-ђёвве сăнаť тăнланса.
Ак илтрĕ хайхи—тĕрме тĕпĕнђе
Пĕр сасă çинçен кайаť ăнтрашса.
    Тайпи ку!.. Тайпи!.. Мĕнле-ши çăлас?!—
    Хĕрӳллĕн сикет Ђаккан вут ђĕри.
Каллех, ак каллех... йынăшнă пек сас,—
Паллах, ку хупнă çынсем тертленни!
Ђакка ак тĕрме çумпе кускалаť—
Пĕр мăксăр хушăк тупаť вăл аран;
Шаккаť йерипен, шаккаť те тăнлаť:
— Тайпи!.. Йатарин!—тет хай хушăкран.
Нађар, кив тĕрме, ампар майлăскер,
Ђакка сăмахне хирĕç шарламасť;
Ун ăшĕ малтан сас-ђӳ панăскер,
Хаљ ђунсăр пулса лăш та сывламасť!
Улт-çиђĕ ђĕнсен, шалтан аранах:
— Кам-ха вăл Тайпи?—тенĕ сас тухаť.
Ђакка пĕлтерет кĕске сăмахпех.
Шалтан ик-виç сас харăсах пуçлаť:
— Ес ыйтнă çынсем вĕсем кунта мар;
Пулас паť, анђах... путвалта пулас...
Асту ес, хуллен... сас-ђӳ-мĕн ан ňар —
Хуралçă салтак тултахђĕ,—тет сас.
— Ма хупрĕç сире,тăван?—тет Ђакка

Сасă:

Хĕлле, кантура çунтарнă ђухне,
Пире те унта хутшăннă тесе
Вуник арçынна, пĕрин арăмне
Хупрĕç ку йалтан... ларатпăр типсе.

Ђакка:
Май çук-ши сире çăлса кăларма?.
Нумай-и кунта хурал салтаксем?..

Сасă:
Салтакĕ сахал. Çапах та çăлма...
Ниçтан майĕ çук. Сыхă-çке вĕсем.

Ђакка:
Çывраĭ-тăр хурал—ăна еп кăнтам...
Унтан тĕрминне виттине ватам.

Сасă:
Ай, çук, çук!.. Апла çăлнађђен
Ларатпăр тўссе ĕçе тĕплиђђен.
Пирте айăп çук, пире йамалла...
Вĕтсен те вĕтĕç тепрер,—ђăтмалла.

Ђакка:
Апшурнă камант аллине лексен
Каçарĕç тесе ан кĕт, ан ĕнен!..
Тухмастăр еппин... Май килнĕ пек ђух,
Кĕске вăхăта сайа йама çук...—
Ђĕнмерĕ текех Ђакка ку çынна.
Каçаĭ вăл хуллен кантур картышне.
Пăхаĭ, йăпшăнаĭ—курмасĭ никама.
Ак, хăвăрт утсах кĕрет сарайне.
Курнаĭ ак кунта—тăррисĕр пура...
Пура ăшĕнђе—çĕр путвал ани.
Путвал аниййĕ уççине кура
Шăнк хытрĕ Ђакка, сикмерĕ пĕр сий.
Унђђен те пулмасĭ, путвал тĕпĕнђен:
— Ах, кайсам... ан тив!.. тесе йынăшса
Хĕрарăм сасси илтĕнет хуллен.

Ђакка шăм-шакки кайаҭ сăркаса.
Тинех вăл кураҭ путвал çиййĕнђе
Выртаҭ пĕр пăшал тата йĕнлĕ хĕç!..
Ђухларĕ Ђакка ку мĕн иккенне,—
Шăртланђĕ вăл пит, çурлас пек кĕçвĕç.
Çӳхе çут хĕççе йĕнрен кăларса,
Ђакка путвала ӳпĕнсе пăхаҭ:
Пăђ тĕттĕм шăтăк тăраҭ хуралса!..
— Ес-и ку, Тайпи?.. Кам санран кулаҭ?—
Тайпи... тух!—тет вăл путвал тĕпнелле.
Йыт вĕрсе йађĕ крыљтса умнелле.
— Ей, ыр çын!
Çăлсам...
Çăлсам мăшкăлран!—
Тет сас путвалран.
Унђен те пулмасҭ, путвал аниђен
Йалт! çеç курăнаҭ мунтирлĕ салтак.
Ђакка ăна—ласт! сулаҭ мăйĕнђен.
Салтак кăшкăрма хăтланђĕ пăртак.
Анђах çивĕђ хĕç памасҭ кăшкăрма—
Мăн пӳ çинђи пуç лађăр усăнаҭ,
Тађка ӳт—лӳђ! çеç йăмаҭ путвала.
Хапха патĕнђи йыт тăрук харлатаҭ.
— Ну, тухăр ђасрах,—хуралçă тек çук!—
Хайаррăн ђĕнет шăртланнă Ђакка.
Çĕр питне ĕнтĕ çапнă кăвакçут,
Ђасрах тармалла çумри рашђана!
Йалта автансем, ăмăртса пекех,
Автаççĕ шар-шар, вĕçĕ-хĕрсĕрех.
Хуралт çисенђе ђĕвĕл ђĕкеççем

Йурлаççĕ йурра хавассăн, пĕртем.
Ак çак самантрах хура путвалтан
Тухаҫ васкаса хĕрарăм мĕлки:
— Ђакка!.. Ех, Тайпи!—хурланђĕç ђунран.
Шăп пулђĕç пĕр сий ăш кӳтнĕ пирки.

Ђакка:

Ăçта ыттисем?.. Ăçта Йатарин?..

Тайпи:

Вĕлерђĕç персе... тарма тăнă ђух.

Ђакка:

Ох!.. Тайпи!.. Тайпи!.. Хăçан ку, еппин?!.

Тайпи:

Йалтан килнĕ ђух...Ай... хаљ тăнăм çук...

Ђакка:

Айта хăвăртрах! Ђуп ман хыçăмран.

Тайпи:

Вăй-халăм пĕр çук, ах... пулмасҭ манран.

***

Ђакка ак çакаҫ хĕçпе пăшала,
Тарма пикенет ђасрах уйалла.
Лараҫ вăл хӳме çине улăхса,
Çĕклет Тайпине—уйа каçараҫ.
Уйа тухсанах утне утланса
Майланђĕç кăшт çеç,—çӳрен ут йарнаҫ.

***

Рашђа йеннелле сиксех ыткăнса
Васан тĕппеле пыраҫ йуланут;
Çил пек пынă май, хытах такăнса,

Ӳкмех те пуҫлаť ҫакскер пĕр-ик хут.
Анҫах йуналҫи—Ҫакка—ҫирĕпскер,
Айри лашинҫен хăпмасť сухăр пек,—
Умне Тайпине тытса ларнăскер,
Хыҫал йенелле пăхкалаť хăй тек.
Пĕр-ик ана пӳ пыраť вăл кусса;
Рашҫа инҫе мар—умрах тĕмĕсем...
Сасартăк хыҫра—шăлт-та шалт! туса
Йантратрĕҫ уйа пăшал сассисем.
Ҫакка йăлт пăхаť—кураť: йал йенҫен
Улт-ҫиҫĕ салтак пăшалпа персех
Ҫупаҫҫĕ иккен вĕсен хыҫĕнҫен!
— Ак, ак пулҫккăсем шӳлетрĕҫ йĕрсех!..
Ҫакка, хăвăртрах пытанас тесе,
Ҫавраť лашине ҫум ҫырма йенне.
Ак вăл урлатса пыраť сиктерсе,
Инҫех те мар ку ҫырма хĕррине—
— Ши-ӳ-ӳ!.. шăхăрҫĕҫ каллех пулҫккăсем
Йунпа ҫĕр ӳте шыраса вĕҫсе.
Унҫен те пулмасť:—А-ă-ă!.. лекрĕ тем...
Аă-ă!.. терĕ ҫеҫ Тайпи ĕнтрешсе.
Тайпи ăнтрашса йанă хыҫҫăнах,
Ҫырма хĕррине ҫитсе перĕнсен
Палтăрт! ҫикелнет ҫӳрен урхамах,—
Вăрнаť ҫырмана хыса хĕрринҫен;
Ҫакки ун ҫинҫен Тайпи-мĕнĕпех
Вашт ҫеҫ сирпĕнет ҫыран шăтăкне.
— Пĕтерҫĕҫ... ай ту-ур!.. Пĕтерҫĕҫ тинех!..
Пĕлме те хал ҫук мĕскер пулнине!
Минтренĕ Ҫакка ăнланмасăрах

Сикет те тăраҫ ҫасрах васкаса,
Пăхаҫ арăмне: выртаҫ вăл шăпах,
Лĕпки тĕлĕнҫен йун выртаҫ йухса!
Ҫӳрен урхамах унтан ҫӳлерех
Выртаҫ месерле пуҫне тăратса,
Ун сылтăм ури шăп кăкĕнҫенех
Аманнă иккен пуҫккă ҫапăнса!

***

Тăн илнĕ Ҫакка тăмарĕ ҫĕтсех—
Хĕҫне-пăшалне ҫакаҫ хыҫнерех,
Ҫĕклет Тайпине ик хулĕ ҫине ,
Ҫăмаҫ ҫыранри ҫӳҫелĕх ăшне.
Анҫах инҫех те пулмасҫ тарасси:
Пĕр ҫирĕм утăм йарса пуссанах
Илтет вăл—хыҫрах салтаксен сасси.
— Ай!.. мĕскер тăвам?.. Таврам лайăхрах!..
Хĕмленнĕ Ҫакка тăраҫ ҫарăнса,
Хураҫ Тайпине ҫӳҫе тĕм айне.
Тăрук пăшалне илет вăл хывса—
Вăрт-варт авăрлаҫ—сикет мал йенне.
Хăпарҫĕ Ҫакка малти хысана,
Вак шĕшкĕ тĕми хыҫне лăпҫăнса,
Пăхаҫ кай йенне, ак курнаҫ ăна:
Улт-ҫиҫĕ салтак пыраҫ ыткăнса;
Ҫупаҫҫĕ вĕсем тӳрем ҫерempe
Ҫӳҫелĕх ҫатрак ҫырма хĕрнелле;
Ҫакка ҫĕтрекен вĕри алсемпе
Тĕллет пăшалне вĕсем ҫинелле.
Ак, ак салтаксем ҫырма хысинҫе,—

Пăхаççĕ хытсах лаша выртнине,
Ват унттĕр-пуçлăх пурин умĕнҫе,—
Темскер вăл хистет хăй камантине.
— Шаталт!.. тет пăшал малти хысаран.
Унҫҫен те пулмасӑ, ак унттĕр тӳнет.
Ытти салтаксем сехри хăпнăран—
Тӳрех çырмана... çӳçелĕх ҫĕтрет.
Пĕр вăхăт шăпах. Шăп пулаӑ çатрак.
Вилен лаша çех тепле ӳхĕрет.
Йе пуҫкка лекнĕ ват унттĕр-салтак
Имшеррĕн, сиввĕн йынăшса илет.
Ҫакка куçĕсем, кăвар пек çунса,
Малти хысари хунав хушшинҫен
Пăхаççĕ умри çӳçе-çатрана;
Кĕтет вăл салтак—çырма тĕпĕнҫен.
Ак, кĕтмен çĕртен, çырма пуçĕнҫен
Шăлт та шалт! пăшал сасси йанăраӑ.
Кăвак сывлăшра, Ҫакка пуç çинҫен,
Ик-виç хут пуҫккă вĕçсе шăхăраӑ.
Çĕкленҫĕ Ҫакка. Пăхаӑ тăвалла.
Кураӑ вăл: инçе, васан хĕрринҫе,
Шур сĕрĕм тăраӑ пĕр тĕм тавралла.
Анҫах çын мĕлки çук ун патĕнҫе.
— Ех... çырма тĕппе шăвăннă иккен!..
Ҫим, епĕ сире!..—тейеҫҫĕ Ҫакка.
Тĕллет вăл тĕме хунав кăкĕнҫен—
Улт-çиҫĕ хутҫен шăхăртаӑ пуҫкка.
Улт-çиҫҫĕ персен, пĕҫҫен тĕмерен
Вĕлт те вĕлт! вĕçрĕç хайхи салтаксем;
Васан тĕпнелле тапса сикнĕрен,

Текех ђаккана лекмерĕç вĕсем.
Пĕђђен çиђ çынна çĕнтернĕ пирки
Лăштах пек пулаŧ ђаккан вут ђĕри.
Васкаŧ вăл ђасрах умри çатрака:
Анђах—Тайпи вилĕ!.. Лўђ ўкет ђакка.

## XXI. ИНКЕК ÇИНЕ СИНКЕК.

Лараҫ вăл ҫылай Тайпи умĕнҫе
Ун путнă куççем сÿннине пăхса,
Пăтравлă шухăш çавраҫ пуçĕнҫе—
Иртейнĕ çулсем килеççĕ аса:
Умрах, ак умрах аҫалăх кун-çулҫ,—
Тайпи те матур сар хĕрҫҫĕ ун ҫух.
Матур хĕрĕсем татах пулнă пулҫ,
Анҫах Тайпи пек пулмантăр çав... Çук!
Çиҫ-сакăр çултах унпа паллашса
Çерем çисемпе сиксе ҫупнисем;
Вун-вуник çултан пĕр-пĕрне савса
Пĕр-пĕрин йенне ҫĕре туртнисем;
Ĕçре, вăйăра, йе урăх çĕрте
Ҫас-ҫас тĕл пулса сăмах выҫатни;
Ÿссе ар пулсан, иккĕш пĕрлешсе
Умри ĕмĕте тытма хапсăнни,—
Ак пурте, тем те, пулса-иртнисем
Вĕркеççĕ Ҫаккан çунан пуçĕнҫе.
Вĕркеççĕ... ак, ак курнаççĕ вĕсем
Сÿнсе хытакан Тайпи куççенҫе!
...Ҫылай тĕмсĕлсен, тăраҫ хай Ҫакка.
Тайпи виллине хураҫ хÿтлĕхе.

Ывтаҫ пăшалне. Хусах луçăлла,
Сăлтавсăр танккаҫ рашҫа çĕмлĕхне.

***

Йелме рашҫипе ишсе пынă ҫух
Тухаҫ ак Ҫакка пĕҫĕк ĕшнене.
Кунта кайăк çех... никам урăх çук.
Патрах пĕр куккук хирет сассине.
Çĕртен вун хăлаç хăпарнă хĕвел
Ёшнен пĕр йенне çутатнă самай.
Арман пĕвинҫен хускалнă вĕтел
Хыт тикĕлтетсе вĕçет улăх май.
Çерем сывлăмне сăптăрса утса
Ҫакка сулланаҫ ĕшне леш йенне.
Кĕтмен те акă тăраҫ вăл тухса
Кушлавăш çулин ĕрешĕ çине.
Пыраҫ вăл çулпа. Йĕлми-вĕрени—
Ун икĕ йенпе ларaççĕ тăпах.
Нумай та кайман. Ак, темскер купи
Умрах, çул çинҫе курнаҫ сасартăк.
Çывăхарҫĕ Ҫакка. Пăхаҫ—сулăнаҫ...
Кăштах вăл ўкмест. Ҫĕтрет ун ҫĕри.
Хăрушă! Тискер!—Мĕскер вăл кураҫ?
— Йуксар, Йатарин, тĕпĕнҫе Ектри—
Çуркам пек виççĕн выртаççĕ пĕрле!..
Вĕсен кĕпи-йĕм çĕтĕкçатăк, йун...
Тăхлан пек куçĕсем пăхнă пĕлтелле.
Мĕнле асаппа, мĕнле панă ҫун?!
Ҫакка вăй илсе, вăрт-варт хăвăртрах
Çĕклет вилсене. Кураҫ сурансем...

Çаврат̆, хыпашлат̆—суран тавраллах:
Пени анђах мар—штыкпа ђикнисем!
Ахлатрĕ, ларђĕ вăй кайнă Ђакка.
Пĕр тапхăр ђул пек ларат̆ вăл хытса.
Тĕллет куççемпе таçтах айакка,
Тайпи çăмахне илет вăл аса:
«...Вĕлерђĕç персе, тарма тăнă ђух...»—
Каларĕ саспах вăл ку шухăша.
— Пĕтерђĕç-çке, ех!.. Пĕтрĕç!.. Манма çук...
Тĕнђе!.. Ех саккун!..—тет, вĕрет сывлăша.

***

Лармаст̆ те тăмаст̆ минтренĕ етем.
Пуçлат̆ ун çĕтме тертленнĕ тăн-пуç.
Пуçа кӳлĕнмен ырхан урасем
Утаççĕ тĕлсĕр,—ăçта туртат̆ куç.

***

Йĕлме рашђинђен хĕвелтухăçре
Пурнат̆ çĕрхуçи—пĕр Куљтсав улпут.
Сĕвек улăхри тӳрем çеремре
Ларат̆ ун ђăнккас ик хутлă çĕн çурт.
Çуртран инçе мар, курнат̆ вырăс йалђ.
Ку йал çыннисем—улпут ђурисем,
Куçайнă кунта, нумай та мар, халђ—
Вун çул патне çех пурнаççĕ вĕсем.
Улпут йалĕпе кӳршри ђăвашсем
Вун çул иртсе те пĕрле хутшăнман.
Вун çул хушшинђе кăвак муђейсем
Вăл улпут йатне сахал ылханман.

Ђёнмен-çке, кётмен ун пек выç куçа,
Касаҭ те илет ђи лайăх çěре!
Хаљ ёнтě ан пыр,—унта вăл хуçа...
Патри халăха йараҭ хěн-ђире:
Алри халăхне уртса, хěтěртсе,
Йараҭ вěслетсе ђăваш çинелле;
Ђăваш уйсене ватса, тěшěртсе,
Хěсет хăйсене вăрман тěпнелле.
«Куљтсав» йаљ çулпе иртсе çӳрен ђух,
Кирек кам имшер ђăваш етемми,
Пěр куђђенеçсěр нихçан та ан тух:
Вěтеççě тытса пуçна çěклейми!
Ађђа пасарне каймалла пулсан,
Кушлавăш йалсем илеççě сăра.
Сăра çук пулсан—пыл, йе çу аван.
Апла Куљтсавсем тивмеççě вара.
Анђах хăш-пěр ђух, пулăшмасҭ ним ђӳк:
Асса, ахăрсах хěмлеççě çынна.
Лăскаççě çӳçрен, ђышаççě хуҭ ӳк!
Çампа «киремет» теççě Куљтсава.

***

Патрах йытăсем хайаррăн вěрни
Вăратрě вил пек çывран Ђаккана.
Ун пуç вěçěнђи лапсак вěрени
Лăп-лăп! ал çупса хускатрě ăна.
Çěклет вăл пуçне: унтах ик пурсуй
Тăраççě ђăлт-ђалт сиксе харлатса.
Йытсем тěлěпех курăнаҭ тикěс уй,
Унта тăрантас пыраҭ кăрлатса.

Ђакка ăнланмасť—ăçтан, мĕн майпа
Таçти йут çĕре килсе ўкнине.
Анђах астăваť: выçпа хуйăхпа
Пур хал, пур тăн-пуç пĕтсе çитнине...
Унђђен те пулмасť, ђарăнаť тăрантас
Хыçран ун патне вĕçет йуланут.
Тăрук илтĕнет пĕр хулăм, уç сас.
Ђакка тавçăраť: «Пуť Кулђтсав улпут!»
— Опйешђĕк!—тет вăл,—кай-ха, мĕн ку, пĕл
Ав Ромпа Тресор ураççĕ унта
Тен, вăрă пулсан,—тыт, тух уйа—ђĕл!
Уйра сухаççем... йарăп сан пата,—
Тейейђĕ улпут, вĕçет малалла.
Йуланçă сикет йыт вĕрнĕ йенне.
Пыраť вăл, тайлаť, тытаť пăшала:
— Ромккă... туртса тух!—терĕ пĕр йытне.
Унђђен те пулмасť пăру пек мăн йыт
Сикет те хыпаť Ђаккана хулран.
Ђакка карт! сиксе ђышаť ăна хыт.
Йытти ыткăнса çыртаť урараи.
Ђакка йытсемпе тĕрмешнĕ хушра,
Улпут йуланçи çитет ун патне.
— Мĕскершĕн вĕслен?.. Ђар ђас йыттăра!
Кăшкăрђĕ Ђакка улпут çыннине.
Пĕр тапхăр вăрçа çилне сĕвĕртсен,
Опйешђĕк ђараť. Йытсем те шăпах.

Опйешђĕк:

Çўревçĕ тетни?.. Аван ес пуплен.
Анђах тем тесен те есĕ таркăнах...
Улпут ак тĕпђет, пĕлет ес камне.

Йарат̆ кантура вăл, вара сывă пул!
Анђах пуçу шелтĕк, тавай мĕн пурне!
Нумай пуљ сирĕн çаратнă ыр мул...

Ђакка:

Халиђђен мул тытман. Мĕн пурри—пĕр пуç.
Çак пуç та шел мар: кас, тат, ăна хуç!

Опйешђĕк:

'Ђăваш, ес—тĕнсĕр! Ђăваш—етем мар...
Сана хаљ тĕнтсен—пулмаст̆ нимле сут.
Çапах тивем мар. Айта-ха, кайар.
Тĕпђет те майлат̆ сана ак улпут...

Ђакка талпăçат̆ йуналçă умпе.
Пурсуй йытăсем ђупрĕç ыткăнса.
Тухаççĕ уйа. Рашђа çуммипе
Кас-кас çил вашкат̆ тусан хускатса.
Хыçал йеннелле сулăннă хĕвел
Çаплах-ха хĕртет шенкер тӳперен.
Ирпе йанкăшан çатăлти вĕтел
Кăшт̆ çеç сас парат̆ арман пĕвинђен.

***

Опйешђĕк умпех утат̆-ха Ђакка.
Çул икĕ йенпе кашлат̆ кĕр калђи.
Леррех хресђенсем—тăваççĕ ака.
Унтах ав йурлат̆ пĕр сӳре ађи.
Улт-çиђ ана пӳ малта, улăхра
Ларат̆ ђăнкамас ик хутлă çĕн çурт.
Унтах пĕђĕк йал, пахђа—йал тавра...
Ку пурлăх хуçи— Куљтсав, хай улпут.
Ђакка тавралла пăхса пынă ђух,

Ак пыђĕç ђупса хирĕç виç мушик.
— Çак çĕтĕк çех-и?.. Татах-и, йе çук?
Ыйтаť хыпсăнса пĕр тĕксĕм старик.

Опйешђĕк:

Çак çех. Сире кам... улпут йађĕ пуљ?

Мушиксем:

Улпут йађĕ çав, сана пулăшма.
Ăçта халђ улпут килте-и, Коссуљ?
Кайатпăр унта çакна кăтартма.

Коссуљ-мушик:

Çук, вăл килте мар. Алмађђĕн йалне
Вĕçтерђĕ пулас—йулташĕ патне...

Опйешђĕк:

Ă-хă... Çук, апла... Килмест вăл касђен.
Ку çынне ăçта хупас ыранђђен?!.

Коссуљ:

Мĕнле çĕтĕк вăл? Вăрман вăрри-и?
Йе тасти пулмас, сўсленђĕк етем?

Опйешђĕк:

Вăрман вăрри мар, темле, урăххи.
Шанмастăп епĕ—тўр çын-ши ку, тем?!

Мушиксенђен пĕри:

Паххомккăн çынни пуљ тетним, еппин?
Анђах та вĕсем кунтах-ши халђђен?..

Опйешђĕк:

Çавсен пулмалла... Паххомккă шайкки
Çак иртнĕ каç çех кĕнĕ кантура.
Мĕскер тăвас тен? Пăлхатнă такки...
Ик-виç салтака вĕлернĕ, ара.
Йĕрлеççĕ таврах. Анђах та çапах

Усал Паххомккан сехри-мĕн хăпмасť.
Хăй çыннисене çаклатнăшăнах
Ураť ĕнтĕ вăл: тавăрма шутлаť.

Мушиксем (хавасланса):
Н-та-а... хăрамасť! Хăйуллă, матур!..
Леш вилсем çаплах выртаççи кунта?

Опйешђĕк:
Выртаççĕ çаплах... илмеççĕ, тем мур!
Иртсе çӳреме киђем вăл çулпа...

Мушиксем:
Н-та-а!.. çӳçенђĕк. А, кăна мĕнле,
Ăçта усрас тен, улпут килиђђен?

Опйешђĕк:
Улпут хăнаран таксан килмелле?
Йулташĕ патĕнђен килмест вăл касђен...

Коссуљ:
Ђим-ха, Карăпыђ, епир касхине
Кайатпăр выртма малти улăха.
Ерттел пĕђĕк мар, шан ес ман çине.
Кăна ыранђђен сыхлатпăр унта.

Опйешђĕк:
Уйра май килмест. Хупатпăр ăна.
Тартсан, мĕн тусан—çийетĕн пуçна!

Коссуљ:
Хупсан та хурал кирлĕ-çке вара.
Çĕрле арçынсем пурте выртмара.

Ытти мушиксем:
Ђăнах, ђăн, Карппăђ, Коссуљ калани.
Шан, есĕ, пире. Тартмастпăр, ни-ни!

***

Ђылай шавласан, Карппăђ килĕшет.
Коссуђ аллине парат̆ Ђаккана.
Ђакка тавралла халăх хĕвĕшет.
Ӳнтах, ак лартса çыхаççĕ ăна.

## XXII. УЛПУТ ХРЕСЂЕНЁСЕМ ПАТЁНЂЕ.

Çеремлĕ васан. Сайра йăвăçсем.
Васан варринђе пĕр шывлă çыран.
Çыран хĕрринђе—хăва хуллисем.
Унтах тек кĕрлет пĕр йапăх арман.
Çерем çийĕнђе, тĕмсем хушшинђе,
Каçхи тĕттĕмре çиçет вут çути.
Васан кай йенђе, тăвайкки çинђе,
Лараĭ йешĕрсе ват йуман кати.

***

Сиксе çунакан кăвайт вут тавра
Лараççĕ сĕнксе выртма çыннисем.
Тĕмсем хушшинђи çерем курăкра
Хăрт-харт! тулхăраç вĕсен лашисем.
Кусем—Кулђтсавсем, кашни каçхинех
Анаççĕ кунта лаша çитерме.
Çитернĕ ђухне, вутне ђĕртсенех,
Лараççĕ вара, халапа хĕртме.
Кунпех улпутшăн тертленнĕ çынсем
Имшеррĕн, майпе пуплеççĕ вĕсем:
Пуплеççĕ мĕн-мĕн ĕçлени çинђен,
Йара кун ĕçпе ĕшенни çинђен.
Ак халђ те вĕсем, ытти ђух пекех,
Сиксе хĕмленен вут тавра ларса
Пуплеççĕ текех, анђах хĕрӳрех.
Унтах ак Коссулђ лараĭ палкаса.

Коссуђ хыҫĕнђех, ҫерем ҫийĕнђе,
Выртаӗ ал-урне тăллана Ђакка.
Сӳсленнĕ ҫĕтĕк кĕпе ун ҫинђе,
Ҫара пуҫ вĕҫне тĕкĕлет каска.
Выртма ҫыннисем—ватти те вĕтти—
Йумах-халапа ҫаптарнă хушрах,
Тĕллеҫҫĕ куҫпа Ђаккана кашни.

Калаҫу:
— Ку кам-ши, вара? Ай, типнĕ, ырхан!..
— Паххом ҫынни мар-и? Йар ăна, Ҫтоппан!.

Коссуђ (Ҫтоппан):
Йама йурамасӗ!.. илнĕ хам ҫине.
Ыран ак улпут йараӗ кантура.
Тĕпђеҫҫĕ унта вăл кам иккенне.
Хуӗ кам пулсан та кăнтаҫҫĕ вара.

Сассем:
Ех, хăрăк ҫуркам!
Ăҫтисем ес? Кам?..

Ђакка:
Еп—килсĕр етем... Вĕри ђунлă ҫын:
Пур пусмăр-хурра тӳссе тăманскер...
Ак, ҫавăн пирки, пур пуҫлăх, пур ђын
Йĕрлеҫҫĕ мана. Ман пурнăҫ синкер...

Ђаккан йулашки сăмахне илтсен,
Шăпланђĕҫ ҫынсем:—Паххом ҫыннийех!..
Тавай-ха тĕпђер,—теҫҫĕ мушиксем.
Пыраҫҫĕ пурте Ђакка патнерех.
Анђах ак Коссуђ пуҫлаӗ кăшкăрма:
— Калап улпута!—тет ђараӗ калаҫма.

***

Çуркаç тĕлĕсем. Сӳнет тул çути.
Тӳлек те тĕттĕм тĕнҫе хĕррипе.
Тăпах, сикленмест ват йуман кати.
Çĕр пин çăлтăрпа ҫалхăрат тӳпе.
Çурçĕр çитнипе çĕршыв тĕлĕрет.
Çывраççĕ ĕнтĕ выртма çыннисем.
Улт-çиҫĕ çын çех выртман-ха, пуплет.
Темскер, шăппăн çех шутлаççĕ вĕсем.
Ак, кĕç, çĕкленет пĕр çамрăк мушик.
Пырат вăл Ҫакка патне йăпшăнса,
Тĕкет Ҫаккана:—Ей, тус, нимле шик
Ан пултăр санра пиртен хăраса.
Коссуљ халь çыврат хыт ĕшеннĕрен...
Пĕлтерҫҫĕ пире ес хăвăр çинҫен:
Ăçта. халь Паххом? Пĕлетни ăна?

Ҫакка:

Паххом?.. Паххома пĕлеп...
Анҫах мĕн тума вăл кирлĕ сана?

Мушик:

Маттур вăл, паттăр. Ăна хисеплеп.

Ҫакка:

Ес тĕрĕс!.. Пурте Паххом пек пулсан,
Ниçта та, никам ҫура пулас çук...

Мушик:

Ăçта-ши вăл халь, çĕмрен-утаман,
Кулҫсов ҫухăнсем вут пек кĕтнĕ ҫух?
Пĕтетпĕр епир улпут ĕçĕпех.
Ак, çимĕк çитет,—епир акарах!
Кантур таврашне çĕмрекенскерех,
Кулҫсав-улпута ма манҫĕ вăл?.. ах!

Ђакка:
Паххом—аслати, хăватлă тĕрек!
Анђах паллă мар вăл халĕ ăçти.
Ват луç хыçĕнђен арслан хунă пек,
Хăвай халђ ăна апшур каманти.

Мушик:
Кунтах пулђ... Леш каç кантур патĕнђе
Вĕлернĕ вĕсем ик-виç салтака.

Ђакка:
Ăна Паххом мар. Паххом халђ инçе.
Кунти ĕçсене çавраттăр Ђакка.

Мушик:
О, паттăр Ђакка! Вĕсене мĕнл е
Пĕлен ес йăлтах? Йе есĕ пĕрле?

Ђакка:
Еп хам вăл Ђакка...
Выртап ак çапла!

Мушик:
Ой!.. Ђакка ес-и?..
Ђим, йулташсене ман пĕлтерес-и?
Çăласђĕ сана...—тейейђĕ мушик.
Сикет вăл ваштăрт! вут тепĕр йенне.
Унта ларансен çÿçенђĕ ăшђик.
Хускатрĕ мушик йулташĕсене.
Ак пурте шăппăн пĕр сассăр утса,
Лараççĕ пырса Ђакка пуç вĕçне.
Ак хĕрÿ халап кайай пуçланса.
Ђакка пĕлтерет тÿсни-курнине.
— Ей, Фиђа! Колђа! Йокоркка!—тимлер.
Мĕнле те пулсан çăлар Ђаккана...

Коссуђ килĕшсен, тăвар ак мĕскер:
Халех ак салтса йаратпăр кăна.
Ирпе Карппăђа тыттарар çапла:
Çуркаç тĕлĕнђе Паххомккă шайкки
Сасартăк пырса хăтарђĕ вăрра;
Хăрармăр, тейер. Ёненĕ такки?—
Тейет хĕмленсе хай çамрăк мушик.
— Аван, пит аван... пултаран, Иван...
— Аван ăс, Ванђă, терĕ пĕр старик.
Вăрат Коссуле!—терĕç ыттисем.
Хĕрӳллĕ сассем ӳссех пынăран,
Коссуђ ак хăйех вăранђĕ,—киђем.
Коссуђ:
Ну туртрăм пĕр кас тутлă ăйăха
Хаљ ĕнтĕ ирђен ларатăп хурал.
Мушиксем:
Тăрас паť, тăр, тăр! Ăс пар-ха пухха.
Ес майлă пулсан, ĕç тухĕ кал-кал.
— Итле-ха, Коссуђ,—терĕç мушиксем.
Ђакка çинђен ак калаççĕ вĕсем.
Малтан ђиперех тăнлана Коссуђ,
Иван шухăшне илтсе пĕтерсен
Сасартăк ураť:—Ай-вай, аван пуђ!—
Мĕн пулĕ тетĕр улпут хăй пĕлсен?!
Ђĕр пуççăн сĕвет вăл пирĕн тире!
Еп панă сăмах ăна тартмасса!
Ех, ухмах... сире-е-е...
Кăтартăп пĕрре!—
Йуман пек патвар, кĕрнеклĕ мушик
Иван çинелле йунаť, талхăраť.

Иван пиђ çинђе хускалђĕ кăшт шик.
Никам та ђĕнмест. Коссуљ çех йанраť.
Ун йăвăр сасси ђул пек йăванса,
Çĕмрет тӳлекри тĕттĕм улăхра.
Çывран ађасем карах вăранса,
Лараççĕ йăлт-йăлт сикен вут тавра.
Хĕрӳ ђун Иван, ђаппан пĕркенсе,
Ваштăрт тайăнаť çӳçе тĕм çумне.
Коссуљ çинелле аллипе сĕлтсе:
— Тăмпуç!—тет, шăлаť сарă уссине,
Унтах вăл хура тӳпене пăхса,
Тĕллет тинкерсе çут çăлтăрсене.
Çĕр пин çăлтăрсем, siксе вылђанса,
Ђĕнеççĕ хăйсен ытамĕ çине.

***

Тĕнђе аслăхпе йăпаннă Иван,
Ак хăй те туймасť, ђĕри хуйхине
Пуçлаť йухтарма капланнă ăшран,
Пуçлаť вăл хăйĕн савнă йуррине:

— Не шуми, мати зеленная дубровушка,
Не мешай мне, доброму молодцу, думу думати...
Как заутра мне, доброму молодцу, во допрос идти
Перед грозного судью—самого царя.

. . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . .

Йурра пĕр çавра шăратнă тĕле,
Выртма ађисем пĕри те тепри
Тыраççĕ шуса Иван патнелле.
— Айта, Иван, йар!.. Ђĕрлет ун ђĕри.

— Ещё станет меня сам-судья спрашивати:
„Та скажи, скажи, детинушка крестьянский сын...

. . . . . . . . . . . . . . . .

Хресҫен таркӑнсен йуратнӑ йурри
Вӗҫет, йарӑнаҭ хура сывлӑша.
Ват йуман рашҫин сӗм ҫӑтлӑх варри
Ҫӑтаҭ ку йурра,—йараҭ йышӑнса:

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

„—Что умел ты воровать, умел ответ держать;
Я за то тебя, детинушку, пожалую
Среди поля хоромами высокими,
Что двумя-ли столбами с перекладиною...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ак йурӑ пӗтет. Ун вӗҫӗ хуллен,
Вӑлҫ-валҫ авӑнаҭ рашҫа хӗрринҫе.
Ҫӗрлет ҫун-ҫӗре выртма аҫисен;
Хаваслӑх, йӑслав вӗсен хушшинҫе.
— Иван!.. Ей, Иван!.. Пуҫла-ха «Горе»...
— Ҫук, ҫук... ӑна мар, урӑхне йурлар:
«Уж как пал туман на сине море»!..
— Ҫак йурӑ аван...—Ҫим халҫ, ӑна мар...
Анҫах тавлашу пымаҫ нумайа,
Ҫӗнтерҫӗ ҫасах «Горе...» йурласси.
Иван пурне те ҫавраҭ пӗр майа,
Паллах, ак пуҫлаҭ ун уҫӑсасси:

„А и горе, горе, горева-а-аньице!
А и лыком горе подпоя-са-лась,
Мочалами ноги изопу-у-у-таны!
А я от горя в темные леса-а-а...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Вӗҫе-вӗҫ тӑсан йурӑсен кӗвви
Ҫӗм-улӑх тӑрӑх йухаҭ шӑранса;
Йанравлӑ сассен пӗр ҫирӗп тӗвви
Тӗнҫе хӗрринех вӗҫет йарӑнса.

***

Ире хирĕçле. Сĕнкет вут хĕрри.
Кăвайтă вутти сÿнсе кĕлленет.
Хуллен çеç йумах çаптарат̆ пĕри.
Нумайшĕ çывăрат̆, йе тин тĕлĕрет.
Иван çĕкленсе пăхат̆ вут йенне.
Курат̆ вăл—Коссуђ ђунран пикенсе
Туртат̆, пăркăђлат̆ Ђакка ал-урне.
Ђаккийĕ вил пек, выртат̆ кукленсе.
— Ах, анђăк! сухал!..—тейейђĕ Иван,
Хура ђаппанпе пĕркенсе выртса...
Автан алтнисем илтĕнеç йалтан.
Арман йенђе шыв сикет шарлатса.

***

Уйар тÿпене карнат̆ шурăмпуç.
Нÿр улăх тăрăх сарлат̆ шур тĕтре.
Иванăн ђăл-пар уçăлат̆ пит-куç:
— Е-их, кăвакçут çиçет тÿпере!..
Çÿçенђĕ Иван, пăхат̆ таврана:
Коссуђ ÿпĕнсех туртат̆ ăйăха.
Вăл хăй уринђен çыхнă Ђаккана.
— Е... ку çывăрни пире лайăх-ха!—
Шутларĕ Иван хуллен çĕкленсе;
Пырат̆ вăл Ђакка патне йăпшăнса.
— Ђакка!.. хатĕрлен!—тет ăна тĕксе.
Ак вăл пур çыхха пăрахрĕ салтса.
— Вĕçтер ну, ђасрах... Ну, пире ан ман!
Паххом таврăнсан—тÿрех кунталла!
Ну, сыв пул!—терĕ Ђаккана Иван.
Ђакка йăпшăнат̆—ђăмат̆ уйалла.

## XXIII. САЛТАКСЕН ТИСКЕРЛĔХĔ.

Апшур каманти килни тăват кун.
Сиксех вăл шырат Паххом шайккине.
Ку хуш йал-йышсен çук ĕнтĕ ђĕр ђун—
Кĕтеççĕ пурте синкер кунсене.
Кушлавăш йалђ те ђĕтрет çўçенсех,
Кĕтет вăл камант калла пырасса.
Нумайĕш тарђĕç вăрман тĕпнеллех.
Пуйан йышсем çех йулђĕç лăпланса.
Хăш пуйансем те, пайан ирпеле,
Килне питĕрсе мулне тийесех
Вĕçтерђĕç таçта—Хумпуç йеннелле;
Çтенкке, Митраппан... пытанђĕç йышпех.
Апшур каманти каллех çитесрен
Хăраççĕ вĕсем Паххомран ытла:
Халђђен ђăваша курман салтаксен
Пур мăшкăл-кулли ђăтма çук йала!

***

Шăп кăнтăр тĕлеш. Уйар та вĕри.
Кас-кас çил анђах уçат сывлăша.
Вил çын пек, тапмаст Кушлавăш ђĕри.
Путат вăл тĕппĕн салху шухăша.
Ĕççи пек шăпах урам хушшинђе:
Сайра—ђăх-ђĕпсем, йе йыт ђупкалат.
Çак тĕл ак, Текей пури çумĕнђе,

Хуллен мăрлатса ик-виç çын тăрат:
Текей—хăй, Итрен, Хура Йаратав
Тăраççĕ унта тем канашласа.
Вĕсем те киђем. Çук нимле йăслав.
Тепле, автан çех автаĭ шарлатса.
Иртет ак самант. Сасартăк уйра,
Вăрман йеннелле лăркаĭ йыт сасси.
Нумай та иртмест, Вăрманлăх касра
Шăлтăр-р-р! илтĕнет урапа кусси.
— Çитеççĕ пулас!.. Çавсем!.. Салтаксем!..
Мĕйле хăналас?!—хумханђĕ Текей.
Ак, пурте сасса хускалђĕç вĕсем.
Пурин те ђĕри ђĕтрет,—çемçеккей!

***

Акă çитрĕç йала тулли çирĕм лав.
Кашни лав çинђе ик-виçĕ салтак.
Пуçланђĕ йалта сивлек сас-йăслав.
Йал мар, вăрман та йантрарĕ хытах.
Анкана, выçăх лўппер салтаксем
Кашни хапхана ђупаççĕ йуртса:
Лутра та ырхан вĕрлĕк хапхасем
Лăђăр та лађăр ўкеç тайăлса.
Ум хыçлăх пыран лавсем-пушутсем
Капланђĕç çитсе хурал пўрт патне.
Ĕшеннĕ вирйал-ђăваш лавăçсем
Имшеррĕн пăхаç пĕр-пĕрин çине.
Малти лавран ак сикет ахвитсер.
Çĕклет вăл алла:—А ну-ка, сигнал!..
— Тў-тў! тў-тў! тў-тў!..
— Тў-тў-тў! тўўў-тў-тў!..

Мĕкрет йăс тăрпа. Йанрать пушă йал.
Ку виђкĕн йанрав çÿçенђĕк, тискер.
— Тÿ-тÿ! тÿ-тÿ! тÿ-тÿ!..
— Тÿ-тÿ-тÿ! тÿ-ÿÿ-тÿ-тÿ!..
Тÿ-тÿ-тÿ!!!
Нумай та иртмест... ик-виçĕ самант,—
Йăлтах пухăнать арканнă камант.

***

Çырма хĕрринђи пуш пура хыçне,
Хăйуллăх пухма кăшт тăнă виç тус
Хускалнăђђĕ çех салтаксем йенне.
— Çук, Текей пиђђе, пымасп, хуть те пус!..
Хăрап, ырра мар,—терĕ Йаратав.
Текей шăртланать, вăрçса пăрахать:
Патши хамăршăн салтак йарать, ав...
Йурать-и тарма?.. Кам ырă тăвать?!—
Тесе ÿкĕтлет хумханнă Текей.
Анђах, Йаратав ытла çемçеккей!
Текей ÿкĕтне тăмасть тăнласа,
Çырма тĕппеле шăвать тăвалла.
Итрен те хăрать. Çапах та хытса,
Текей хÿттипе утать малалла.

***

Хурал пÿрђ пĕр йен—сип-симĕс çерем.
Ват ђăрăш кашлать çерем варринђе.
Унтах—ĕшеннĕ утсем, лавăçсем;
Пĕр ушкăн салтак лавсем умĕнђе.
Тин çеç пухăннă лÿппер салтаксем

Çтена пек тăђĕç ик ĕрет пулса.
Ик ватă капрал, ђулланнă çынсем,
Кĕтеççĕ приккас, йупа пек хытса.
Хурђка пек каскăн йаштак ахвитсер,
Ырхан йал çине хăйаккăн пăхса,
Çерем çийĕпе уткалаŤ ђипер,
УтаŤ хĕç йĕнне ђăнкăртаттарса.
— Ропеттă!.. тет вăл улпут ђĕлхипе,—
Çӳрермĕр нумай, тӳсетпĕр ђылай.
Çӳрермĕр луçпа упа йĕрсемпе!
Ну, уншăн кунта кантарăп самай.
Халех ку йалта пуху пухтарап.
Сире ваљљи ак, кашни çын йатнех,
Пĕрер пуç така тытса пустарап.
Тĕнсĕр ђăваша вĕрентпĕр тинех!..

***

Хĕрӳ ахвитсер сăмах çапнă ђух,
Текейпа Итрен çитеççĕ утса.
— Вашшĕ плахоро Ť!.. Çпаççипă тем ђул...
Спаççипă... терĕç вĕсем пуççапса.
Улпут тăп ђарнаŤ, тĕллет çаксене:
— Сутник-и, ес... кам!—тет вăл Текейе.
— Та, та, çĕн сутник... ех, тӳссе хĕне!..
Пĕр ырă тумтир йулмарĕ çийе...
Ак кун ашшĕне пăрахрĕç касса...
Ех-хех!.. тет Текей, маларах пырса.
Анђах аҳвитсер тăмасŤ итлесех,
Текей патĕнђен пăрнаŤ тӳртĕнрех.

Ахвитсер:
Ну, çитĕ сутник: халех пуху пух!
А, ес, çамрăкки,
Виç пăт така аш халех тупса тух!
Текей:
Вашшĕ плахоройĕ!.. никам çук йалта...
Пур халăх таçта... шалта—вăрманта.
Ахвитсер:
Суйан!..
Текей:
Суймастăп. Ђунран...
Ахвитсер:
Суйатăн, сысна...
Лекмен-и, сана!..
Текей:
Ђăнах... ђă...ђăнах,
Вашшĕ плахоройĕ (ўксе пуççапаĭ).
Ак, шырăр йăлтах,
Кашни килренех, хăĭ...
Йулсађђĕ вун çын пуљ,—
Вĕсем те халђ çук...
Ахвитсер:
Мĕнма ес йатăн вăл йытăсене.
Текей:
Нимпе ђарма çук... йăлт тарђĕç вĕсем.
Ахвитсер:
Тараççĕ тен, е?..
Вĕрентĕп сире...
Аплатăк, тавай вунă пуç така!
Халех тăрантар мĕн пур салтака.

Текей:
Халех пулаймасӑ: кӗтӳ ҫук уйра.
Таҫта, халӑхпах вӑл тарнӑ ара...

***

Текей вырӑсла пӗли-пӗлменрен,
Ӳнпа каласса йӗрӗннӗ улпут—
Пуҫне—вашт! ывӑтать, пӑрнать Текейрен;
«Паккенпарт» мӑкне шӑлать ик-виҫ хут,
Хывать шӗлепне, утать йарӑнса.
Хӑрах алли ун саплипе вылӑть.
Ак вӑл, пӗр канас утса ҫаврӑнса,
Ӗарӑнать те хайар сасӑпа пуҫлать:
— Рот-та-а-а, ҫмирно-о!
Слушай мойу команту...
Ӗшеннӗ, лӳппер тӑлпан салтаксем
Камант сассипе тӳрленӗӗҫ ӗӑнках.
Вӗсен, улма пек, ӗармака куҫсем
Ахвитсер ҫине тӗллеҫҫӗ харсах.
Хӗрӳ ахвитсер ҫӑвара карать;
Вӑл хӑй камантне, килрен кил кӗрсе,
Йала тӗппипех тустарма хушать.
— Кам лекнӗ алла,—ӑна сӗтӗрсе
Тӳрех ман пата!—тет вӑл кӑшкӑрса.
Выҫвар салтаксем хавас ку сасса.
Пӗр-икӗ самант... мӗн пур пек салтак
Ӗӑл-пар! саланать пуш йал хушшине.
Хӗрӳ ахвитсер, ӗшеннӗ шӑм-шак,
Кӗрет канмалла Алапит килне.

***

Хӗвел каҫ йенҙе. Шенкер тӳпере
Шăваççӗ сайран кăтра пӗлӗтсем.
Вăш-ваш çил вăшкаĭ хӗвеланăçрен.
Патри сӗм-вăрман кашлаĭ тек пӗртем.
Йала тӗппипех тусса пӗтерсен,
Пур пек салтаксем—каллех пӗр çӗре.
Кăвак капралсем ăнман ӗç çинҙен
Параççӗ раппăрт пуç-ахвитсере:
— Ваш высокороĭи!.. Есир хушнипе
Ухтартмăр йала килрен кил ватсах
Анҙах—никам çук... тупмарăмăр çиме...
Пӳртсем, хуралтсем пурин те пушах!
Мӗн тума хушан?— тет ватă капрал.
«Матур» ахвитсер тăмасĭ шутласа,
Пуçлаĭ вăл хуллен:—Тӗп пулӗ ку йал...
Ил вунă салтак. Икшерӗн йарса,
Тивретӗр ăна—харăс пилӗк йенҙен.
Кӗллентӗр тӗппех!—терӗ ахвитсер.
Хыçра тăракан Текейпе Итрен
Тăнларӗç кăна:—«Ах, Итрен, мӗскер?
Йала вут тӗртес темест-и... ей-ей?!
Пӗтетпӗр, ех тур!.. Айта, тилмӗрер,—
Ҙӳхенҙӗ сехри хăпăннă Текей.
Ак пыҙӗç вӗсем ахвитсер умне,
Лараççӗ кăпăрт ҙӗркуççи çине:
— Вашшӗ плахороĭ!..
Хӗрхенӗр пире...
Йалпех çунтарсан та,
Хăвар ик киле!..

(Ӳксе пуççапаççĕ).
Ак сирĕн ваљљи
Пулаĭ çимелли...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Çиллес ахвитсер кăшт сиввĕн кулса,
— Ђăваш та—ђăваш!—тет çех вĕсене.
Итренпе Текей—шарри! çухăрса,
Ађа пек йĕрсе ђупрĕç килсене.

***

Нумай та тăмасĭ, Кушлавăш çинђен—
Унтан та кунтан сăр сĕрĕм пăлкаĭ.
Кĕçех ак—хĕлхем... çулăм пур йенђен,
Йалт-йалт! сикейсе йала вăл хуплаĭ.
Вут çулăм йала хыпса илеђђен,
Каманта шăваĭ кӳрш йал йеннелле.
Хурал пӳрт панђи ват ђăрăш пĕђђен
Кашлаĭ, ђыхăнаĭ йӳç сĕрĕмпеле.

## XXIV. ЂАККА—ЙАЛ-ЙЫШ СУТЁНЂЕ.

Ирхи апат тёлё.
Кушлавăш çинђе
Шăват хура пёлёт.
Кўтет çут тёнђе.
Ак çак самантрах хёмленнё Ђакка
Тухат вашкăртса рашђа хушшинђен.
Курат вăл уйа, курат айакка,
Анђах ак тётём вёçет йал çинђен.
Ђупат йал йенне вăл—хытат, тап тăрат:
Умра ун йал çук!.. шёл кăмрăк та кёл!
Кёл-кăмрăк купи шур сёрём сарат.
Ниçта пёр çын çук! Мёнма ку, ак пёл!?
Васкарё Ђакка хăй килё йенне.
Çитет. Кунта та—кăмрăк, кёл купи!
Кăвак сёрём лађ хуплат кил тёлне.
Çаплах ав çунат пёр аслăк йупи...

***

Кама та пулин курас тенипе,
Тăмарё Ђакка,—каçат йал хыçне.
Унта каççанах, вăрман хёррипе
Курат вăл кас-кас ларан çынсене.
Кусем йал-йышсем. Çеремлёх çинђе
Лараççё вёсем вак-вак ушкăнпа;
Кăшт-кашт пурлăхсем вёсен умёнђе

Вyртаç арканса вĕт-шак купапа.
Ђакка çывхарат̆ хăйуллăн утса.
Паллат̆ вăл унта Амаç Микине
Çемйи умĕнђе йупа пек хытса
Тăрат̆ ку Мики. Унтах Алинке.
— Мики!.. Ей, Мики!—кăшкăрат̆ Ђакка.
Ђупсах вăл пырат̆ Мики патнелле.
Ђаккан уç сасси кайат̆ айакка.
Пăхаççĕ пурте ку сас йеннелле.
— Ђаккаĕç!.. Пурнан?..—тейейђĕ Мики
Ик алне харсах ун йенне тăсса.
— Пурнап та Мики, ну... пурнăç тӳсми!..
Йала..?—тет Ђакка куççене шăлса.
Ăшђик кӳтнипе ђарнат̆ ун сасси.
— Йала салтаксем йађĕç çунтарса...
Ак çуртсăр, выçă... тӳс ĕнт!—тет Мики.

Ђ а к к а:
Çапла пуљ, Мики... ыр тумĕç вĕсем.
Анђах ман пушшех... лашу... ех—хе-хех!.
Хыçран хăвакан хурал салтаксем
Ӳкерђĕç персе Тайпи-мĕнĕпех...

А л и н к е:
Тайпи те вилђи?!.
Ей... ылттăн пĕрђи!..

Ђ а к к а:
Пĕтерђĕç йăлтах... Йуксар, Йатарин,
Кĕске Ентри те çук ĕнтĕ текех:
Кунтан кайнă ђух, канвуй-ђунилли
Вĕлернĕ персе рашђа варринђех.

Сассем:
Вӗлерҫӗҫ пулаҭ!!!
Ех ҫынсем—ҫунсем!.. Епир ним пӗлмен...
Мики:
Ай-ай, ку хуҫаҭ!..
Лаши хуҭ пур ман. Еп уншӑн пӗҭмен...
Сассем:
Аҫу пурнаҭ-ха. Хуҫаму панҫе.
Ҫакка:
Илҫуш ман!.. Ҫав ҫех... Ӑҫта-ши вӗсем?
Сасӑ:
Килмен-ха, вӗсем Хумпус йалӗнҫе...

***

Ик-виҫ самантрах уйри пур етем
Тӑраҭ пухӑнса Ҫакка тавралла.
Унта та кунта ларан кил-йышсем
Пыраҫҫӗ ҫупсах пурте унталла.
Нумай та тӑмасҭ, хускалҫӗ пуху.
Тин ҫитнӗ Итрен халӑха сирсе:
— Ей, халӑх, итле: куратри, кам ку?
Ҫакка!.. Ҫак ҫын-ҫке пӗтерҫӗ пире!
Никам пирки мар, пӗр ҫакӑн пирки,
Тӗп пулҫӗ пур йал... пӗтетпӗр ак халҫ...
Ҫтенкке! Митраппан! Итле ес, Мики!
Ҫакка ӗҫӗсем касмаҫҫӗ ахалҫ!..
Мӗн пур йал-йыша инкек кӳрекен —
Халех вӑл тивӗҫ пур халӑх сутне!
Кушлавӑш никӗс ҫунса пӗтиҫҫен
Хуратпӑр ӑна пайан вут ҫине!..

Çтенкке, Йаратав, Куштан Митраппан,
Вĕлернĕ сутник ывăлђ—Кĕркури
Хускалђĕç харсах хыçри вырăнтан:
— Тытас та—вутта! Пĕттĕр арçури!..
Е-е-е му-ур!!!—çĕмреççĕ çиллес сасăсем.
Ак çак самантрах хăрнă Ђаккана
Тытаççĕ вăйлă, çирĕп алăсем.
Çунан йал йенне туртаççĕ ăна.

***

Пĕђђен Ђаккана туртма тапратсан,
Пĕђĕкçĕ пуху пуçлаť хумханма.
— Ан тивĕр, Итрен!.. Пăрах, Митраппан!
Ахалђ те Ђаккун тирпе шăм анђах...
— Ан тивĕр!!!—терĕç улт-çиђĕ çын харс.
Малтан хыттăнах хирçеймен Мики
Ђакка май сассем пулнăран пулас,
Тăрук ыткăнаť шăртланнă пирки.
— Çтенкке!.. Митраппан!..
Кулатăр есир пĕтнĕ Ђаккаран?!—
Ну, йарăр халех!—тет вăл кăшкăрса.
Хăй çак вăхăтрах çулхаť Итрене.
Итрен талхăраť. Микийе пăвса,
Пĕррех вăл çапаť ăна çĕр çумне.
Итрен Микийе ватса çĕмриђђен,
Ђакак, Ахманей тата ик-виç йаш
Тухаççĕ ђупса пуху хушшинђен.
Ку çамрăк çынсем пурте пĕр канаш.
Тăратрĕç вĕсем малтан Микийе.
Унтан Ђаккана илеççĕ туртса.

Усал Итренпе куштан Çтенккийе
Вирлех лектерсе йађĕç уйăрса.

***

Урат̆, хирĕçет пур куштан шайкки
Çаплах вăл тăрнат̆ пĕр Ђакка çине...
— Ей, халăх,—тесе пуçларĕ Мики,—
Парас-и вара, Ђаккана тивме?..
Ђăнах та вара, Итрен калан пек,
Йал пĕтнĕ пирки айăпли Ђакка?
Çук, ку тĕрĕс мар! Пур тип-шар, инкек
Ăçтан тухнине шутлас пат̆ пуçпа:
Инкек тымарри—кантурпа пупра.
Ăна сирме те май пулнă пулсан,
Каллех те Ђакка айăпли вара?
Çук, çук! ку йăлтах йалти куштанран.
Пире Ђакка мар,—ăна çийенсем —
Йала ĕмекен куштан-пуйансем
Çитерђĕç тĕксе çак кун-çул патне.
Çампах ак халђ тӳс—çак инкексене!..

Митраппан:

Суйу çыпçăнмаст̆! Тархасшăн ан суй!..

Çтенккепе Кĕркури:

Никам илтмест. Ан суй тек пустуй!

***

Ак çак вăхăтрах, çуйхашнă тĕле,
Татах пĕр вун çын пырат̆ пухăнса.
Кусем хушшинђе—Лђарук, Йериле...
Текей те тин çех тăрат̆-ха пырса.

Мики ђаранмаст̆. Хёрет вăл пушшех.
Ларан Ђаккана хăйпе хӳтлесе,
Калат̆ вăл малла пуçлан сăмахнех.
Итрен каманти тăрат̆ йӳçĕхсе.

Мики:

Ђаккан пĕр айăп:—вăл хăй ђухăнни.
Пит ђухăн пирки пуппа пурмисе
Хырçи-марçине татса тăманни.
Ак мĕн Ђаккана хуђĕ пĕтерсе...

Љђарук (кăшкăрса)

Ђиркӳпе кантур —
Пире çийет мур!..
Мĕскершĕн илес çав хырçă-марçа?
Мĕнма туйас мар çак хĕн пурнăçа!..

Мики:

Пурнађђĕ Ђакка... Ăна Алапит
Салтака сутса тĕп турĕ, йал-йыш!.

Итренпе Йаратав:

Ан кар çăварна пит!..

Сассем:

Пар!.. Пар, ăна! Ђыш!..
Çăварĕнђен ђыш!..

Пуху хумханат̆. Итрен, Йаратав—
Хĕрӳ Микийе илеççĕ туртса.
Каллех ак—шăй-шай! Тĕрмешӳ. Пăлхав...
Итрен ушкăнне лартаççĕ ђарса.

Йериле:

Мики калани тĕрĕс вăл, ђăнах...
Мĕскершĕн капла инкек-усала
Ђакка çине çех хумалла йăлтах.

Усал унтан мар,—саккунĕ çапла!..
Ђаккан пĕр кăмăђ хайарри анђах
Хупларĕ пăртак иртнĕ ĕçсенђе...
Саккуђ-самани пулас ăшшăнрах—
Ђаккан та ђĕри пулĕђђĕ çемçе.
Ђăнах, кантурпа ђиркӳ пусмăрне
Йăвашшăн ђăтма нимпе те май çук.
Анђах хирĕçме вăй çитмен йенне,
Тӳсес паť йĕрсех вĕсем пăвнă ђух...
Ђакка тӳсеймест. Пăхрĕ хирĕçме...
Ак çакăн пирки пуçланђĕ хĕн-хур...
Сутник, Алапит—хĕсме те хирме!
Нимскер те урăх пĕлмесђĕç, ик мур...

Йаратав:

Ан... ан елекле!
Ха, ес те йепле!?.

Йериле:

Çынна хĕрхенсе çăлас вăхăтра
Вĕсем, куштанпе, тапранђĕç пушшех.
Леш пуп те, пĕлтĕр çӳренĕ хутра,
Ђакка панђе çех тустарнă тĕппех.
Ун пек никамах хĕсмен вĕт йалта.
Паллах, ун ђухне çав куштансемех
Хĕтĕртнĕ Ђакка çемйине пăвма.

Итренпе Йаратав:

Апла ес, Йерил,—
Влаçа хирĕç тил!..

Йериле:

Сутник, Алапит тăп пулнă пулсан,
Йулађђĕ Ђакка ђылай инкекрен.

Çавсем-çке, путсĕр, ыр йатшăн йалан
Тултарђĕç текех елек ун çинђен.
Аптранă Ђакку ак хўтлĕх шыраť.
Ăна вăл Паххом çумĕнђе тупаť...
Паххомккă шайкки кунта çўрени
Йал-йыш, етсемри, вăл Ђаккаран мар:
Ун çулĕ çапла... çапла самани...
Çампа Ђаккана тивме мар,—сыхлар!

Сассем:

Ђăн- ђăн ес калан, Йериле пиђђе.
Пур айăп кунта куштансем çинђе...

Çтенкке:

Ђакка пек çук çын сахал-и йалта?
Мĕнле-ха вĕсем пурнаççĕ тата?..

Микипе Йериле:

Пуçне хуни те сахал мар, Çтенкке...
Патак çинисем, вилсе выртнисем—
Пĕр сиртен пуçне вăл кашни килте.
Есир ыр çынсем...

Ак сас илтĕнет.

Ку Текей сасси:
Итрен!.. Ей Мики!.. лăпланăр... çитет!
Капла çапăçса пулас çук усси...
Хăçан вăл пĕтет?.. пĕр йал, пĕђĕк йал...
Мĕскершĕн вăрçас, йал-йыш-тăвансем!
Вырăссемшĕн пулсан—епир пĕр усал...
Итрен, йе Мики?—пĕлмеççĕ вĕсем.
Вĕсемшĕн епир пурпĕр—сĕм ђăваш;
Апшурни камант кăтартрĕ кăна
Тавай тăвансем пурнар пĕр канаш...

Çураçăр, Итрен! Каçар Ђаккана...
Ђарăнаť çуйхашу.
Шăпланђĕ пуху.
Мухтаť Текейе Йериле старик.
Параť ăна ал. Тулаť ун ăш-ђик.
Халђђен ним ђĕнмен, тăп ларнă Ђакка
Тухаť малалла:
— Выçпа, асаппа хăрнă шăм-шакка
Еп патăм йала...
Еп килтĕм кунта çаксене кĕтсех.
«Сут тутăр йал-йыш ман айăп пулсан.
Пĕр пуç шалккă мар»—терĕм еп хĕрсех.
Анђах хăтартăр мана айăпран.
Ман пурнăç çине, ман ĕçсем çине
Пит тĕплĕн пăхса сут турăр мана.
Ђухларăр, сисрĕр пуйансен ђунне.
Йалйышăм, уншăн тавтапуç сана!..
Тав сана, Мики! Тавай аллуна!..

(Микине ал параť)

Манми тусăмсем!..
Хам пек ђухăнсем!
Есир хўтлесен те кунта ман май çук
Апшур каманти тусса çўрен ђух,
Тăван çĕршывра пурăнаймăп çав еп.
Хам пуçшăн хыпмасп—сире инкеклеп.
Çампа та халех сирĕлетĕп кунтан.
Те курап, те çук сире еп кайран,
Ăна пĕлме çук... ну, ырлăх сунап!
Йал-йышăм, сывпул... каçару ыйтап...

Сассем:

Ăçта ес кайан?
Аран-çке утан?!.

Ђакка:

Ăçта ирĕк пур—шырап пĕрмайах.

Текей:

Кайни лайăхрах...

Ђакка:

Сире ку аван çав...
Анђах пĕр ђăрмав:
Ăçта-ши мĕскĕн пĕртен-пĕр ађам?
Ăна йулашки хут тытса ыталам!

Сассем:

Тухман-ха, килмен вĕсем—Кулинсем.
Хăраççĕ килме кам хĕр пуррисем.
Усал салтаксем хĕрне анђах мар,
Хăш ђух арăмне те çулхаççĕ вăр-вар...

***

Ак çак вăхăтрах
Малти сăртламра
Курнаŭ тăруках пĕр вун йуналут.
— Каллех салтаксем!—терĕç ик-виç хут.
Пĕђĕкçĕ пуху ђăл-пар арканаŭ:
Итрен те, пур те вăрмана ђăмаŭ.
Пур халăх тараŭ. Ђакка ак, тăпах!
Вут ђул-йупи пек тăраŭ вăл хытса.
— Мики!—терĕ вăл, леш ал парсанах,—
Парсамђђĕ мана кăшт çăкăр касса...
— Айта-ха, Ђаккам, ђасрах пытанар!

Хистерӗ Мики ҫӑкӑрне парса.
— Тармастӑп епӗ... ман пуҫ шеллӗ мар.
Анҫах, Мики тус, йӑлӑнап сана:
Хӳтлеҫҫӗ ес ман пӗр пуҫ аҫама!..
Мики:
Ӑҫта-ши кайан?!.
Асту ҫакланан!..

***

Ал паҫӗҫ ик тус. Ҫуптурӗҫ пӗр хут
Мики вӗҫтерет сӗм вӑрман ӑшне.
Ҫакка—ҫул ҫӗре (ҫук ун хӑрас шут)
Утаҭ йерипен хир ҫулӗ йенне.

***

Кун хыҫҫӑн кунсем шӑваҫҫӗ хуллен
Иртеҫҫӗ аран синкер уйӑхсем.
Апшур каманти тусса ҫӳренрен
Ҫӗтреҫҫӗ сиксех Кушлавӑш йенсем.
Выҫ куҫлӑ камант хӑш-пӗр йалсенҫе
Ернипе тӑрса аптратрӗ йӑлтах:
Вуншар пуҫ така, сурӑх, йе ӗне
Пустарҫӗ тытса пӗр укҫасӑрах.
Ӑҫта ҫит—унта, кашни йал-йышрах
Кӗнерӗҫ тытса вуншар мушике.
Кӗнеҫҫӗ тӳсми кӑшт айӑп тупсах.
Вилни те нумай салтак патакпе.

***

Ҫитет кӗркунне.
Ӑхлан тӗс сапаҭ ҫанталӑк сӑнне.

— Уйсен, улӑхсен илемӗ кайсан,
Вӑрман тӑррисем типсе сарӑхсан,
Тинех ак хӑпат апшурни камант.
Тинех ак ҫитет кӑшт лӑпкӑ самант.
Тискер салтаксем кайнине пӗлсен
Сывлаҫҫӗ лӑшах аманнӑ йалсем.
Кушлавӑш йал-йыш те хӑйат йерипен,
Кӗл-кӑмрӑк купи ђават вӑл киђем.
Хӗле кӗриђђен, кам вӑй пуррисем,
Пураҫҫӗ кӑшт-кашт ӳпле пек пӳртсем.
Лартаҫҫӗ вӗсем ӳпле—пӳртсене
Кив йал тӗлне мар,—вӑрман уйланкне.
Ку йалӑн йатне те—Кушлавӑш йат мар,
Н-кас текен йат хураҫҫӗ пӗр кар.

***

Кӗрхи уҫӑ кун. Хӗвел каҫ йенђе.
Имшеррӗн сӗнкет Н-кас ӗшнере.
Пӗр ђӑнккӑ, нађар ҫӗн пӳрт умӗнђе
Лараҫҫӗ Мики, Ђакак, Йериле.
Лараҫҫӗ вӗсем хуллен пуплесе
Курни-тӳснипе малалли ҫинђен.
Кас-кас сулхӑн ҫил килет кӗрлесе,
Сар ҫулҫӑ сапат вӑрман тӑрринђен.
Ак ҫак самантрах хай ђухӑн пӳртрен
Хыткан Иҭукка тухат Илђушпа.
— Мики, ех ыр ђун, ес хӗрхенмесен
Пӗтеттӗмӗр пулђ... пӳрђ ӑшӗ лӑпах...
Илђуш йуншахлат. Манмасҭ амӑшне...
Ех!—тет Иҭукка, хуллен хашлатса.

Ҳалап çапăнаť Ђакка ĕç çине.
— Çакланђĕ пуљ вăл...—тет Мики татса.
Тăвата çулхи сар пуçлă Илђуш
Кукамăш çинђен ђупаť çул хĕрне.
Ун пĕр аллинђе вăрăм кантра пуш,
Çапаť, вăл хăваť сар çулçăсене.
Нумай та иртмест, ак çывăх уйран
Мăн шăнкрав сасси çитет йанраса.
— Каллех кантуртан, йе пуп ку шуйтан!...—
Тейейђĕç кўршсем киле васкаса.

## XXV. ÇИРĔМ ÇУЛТАН.

Кушлавăш çунни çитет çирĕм çул.
Çитет çирĕм çул ђакка сухални.
Çак çирĕм çулта улшăну тем ђул:
Тем ђул çурални, тем ђухлĕ вилни.
Иртет çирĕм хĕл, иртет çирĕм çу:
Нумай çил вĕрет, нумай шыв йухаť—
Вăрманлăх çĕрне çапаť улшăну.
Кушлавăш уй те сарлаť, çаралаť.
Кив йал вырăнђи кĕл-кăмрăк купи
Çĕрпе танлашса йулаť пус айне;
Ырхан сухапуç, сўри, урапи
Çуллен тикĕслет кив йалăн тĕпне...
Н-кас çитĕнет. Ўсет çĕн йал-йыш.
Çĕн йышшăн—хăйне усал самансем.
Пĕр çирĕм çул çех кайалли кил-йыш—
Текех ĕнтĕ çук. Хаљ çĕнĕ йышсем.
Пĕр çирĕм çул çех—матур кађђăсем
Хаљ пурте ĕнтĕ сухаллă мушик;
Ун ђух вăй-витти мушик пулнисем —
Хаљ пурте вĕсем—ђалланнă старик.
Çулсем иртнипе кивви сирĕлет,
Пулса иртнĕ ĕç йулаť манăça.
Кушлавăш йађĕ те çаплах ак çĕтет,
Тепле, ватсем çех асăнаç ăна.

Ђакка, Алапит, Тĕвенеш йађсем
Н-кас хушшинђе пулђĕç айала;
Иљуш та Йымăљ, ытти çĕн йатсем
Тухаççĕ ĕнтĕ йалта хаљ мала.

***

Пĕр çӳпсĕр, тăлăх йулнă Иљушша
Хаљ ак, вăй-витти арçын шутĕнђе.
Анђах ађаран çĕмĕрнĕ нуша
Пит паллăн курнаť ун сăн сăпатĕнђе.
Хыткан вăл, хавшак, ашшĕнђен лутра,
Ун кăмăљ—имшер, хăравçă, ĕçђен.
Вунултă çултан пуçласа тарçра—
Текей патĕнђе пурăнаť пĕр пĕђђен.
Кукамăш ун çук—вилни вунă çул.
Кулин—хăшкăлаť хăйĕн çемйипе
Микин те çуктăр ăна ваљљи мул.
Çампа та Иљуш ванаť çын ĕçпе.

***

Текейпе Итрен пурнаççĕ пуйан.
Вĕсем Кушлавăш шывĕ çинђе хаљ
Лартаççĕ кашни ик ђуллă арман.
Унтах Йаратав та илет хăйне ваљ.
Апшур каманти йала пĕтерсен,
Пур халăх аптраť. Итренпе Текей
Йусанђĕç ђасах пушар ђирĕнђен.
Пуйанăн ĕçĕ ăнаť-çке, телей!..
Йепле ăнас мар? Çунсан та, вĕсен
Йулсађђĕ кашнин çĕршер вĕлле хурт;

Кĕтўпе выљăх—пĕрин те пĕтмен;
Йулсађђĕ кашнин урам тулли çурт.
Ахаљ те вĕсен йат çĕр те нумай.
Мĕн пур пек çĕрсем—ђипер вырăнта.
Çампа пуйансен тырпул та самай.
Нађар уйсенђе—сўсен-маçăлта!...
Çапла майсемпе Текейпе Итрен
Пушар хыçĕнђен вăй илђĕç ђасах.
Пĕр вунă çултан тўрленђĕç вĕсем.
Тўрленђĕç йал-йыш тертленнĕ хушрах.

***

Пĕрре, çуркунне,
Çур шывĕ сиксе шарлатнă ђухне,
Н-кас уйавлаť мăн калăмкуна.
Шерпет-сăрапа ђысласçĕ ăна.
Текей пўртĕнђе. Хăна йышлах мар:
Креке хушшинђе виç-тăват арçын,
Тĕпел кукринђе—çум-çум йунашар—
Улт-çиђĕ арăм... Мĕн пурĕш—вун çын.
Текей халаплаť креке пуçĕнђе.
Ун çўçĕ-сухаљ шуралнă ђылай
Паллах, вăл ватă, пĕр çитмĕл йенђе.
Кўрш-кўп хăнисем хаваслă самай.
— Итрен,—тет Текей,—каллех еп калап:
Хаљ тупăш курма арман лађтмалла.
Миçе хут сана тимлеп, хăвалап.
Уйпех арман çук... хире каймалла...
Айта-ха кăçал пуçлар ку ĕçе.
Малтанлăх лартар пĕр лаша армаң.

Ђӑнах пӗр ђӑрмав—ђул кӳме инçе!
Ђулне кӳрсенех ӗç кайат аван...
Ака пӗтсен ак, кайар Ђӗмпӗре.
Кӳретпӗр унтан пӗр-ик пустав ђул.
Арманшӗн кантур ђарас çук пире.
Кушлавӑш çинђе, асту çитес çул,
Çак вӑхӑт тӗлне кӗрлетӗр арман!
Йурат-и, Итрен?—тет Текей, тимлет.
— Вара, çӑнӑха ђыхма çех ан ман!
Аван ку, ђӑнах... анђах ал çитмест...
Лартасђӗ... хе-хе!—йӑлкӑшат Итрен,
Хура сухалне шӑлат вӑл вӗçрен.
— Лартасђӗ... лартас, ђӑн ку армана,—
Тимлешрӗç вӗсем сӑмаха татса,
Ӗçеççӗ шалттин тулли куркана.
Унтах хаваспа йађӗç йурласа.
Ак çак вӑхӑтрах сарай умӗнђе
Йаш тарçӑ Илђуш пӑхат выљђӑхсем.
Пур çамрӑк шавлат урам хушшинђе,
Анђах Илђуша туртмаççӗ вӗсем.

***

Çӗртме уйӑхӗн вӗри кунӗсем.
Шур Ђӗмпӗр хули кӗрлет хӑй майпе:
Вӗркет çурран çын, шӑваççӗ лавсем...
Выљђат хула ђуњ Мӑн Атӑл вӑйпе.
Ак Ђӗмпӗр хулин ђи вӑйлӑ касси.
Кунта тӗрлӗ шав... кӗрлет ђан сасси.
Тумланнӑ кӗптек купса-хуçасем,
Катмар çатансем çинђе сарӑлса,

Вĕçеççĕ анђах. Хастар йамшăксем
Пыраççĕ текех хăп-хап! хаплатса.
Ђеђен те ђипер пике-майрасем
Кĕпи аркисене купа пек сарса,
Хур-акăш йевĕр утаççĕ пĕртем;
Утаççĕ вĕсем хуллен йарăнса.
Унтах алăстаç—суту-илӳçсем;
Вĕркет хура халăх... тĕрлĕрен етем.
Тусанлă, тĕркĕш, çинçе урампа
Вăрман пек етем пыраŤ турăшпа
Вăраххăн сĕрлет троппар йурлани;
Йан-йан йанкăшаŤ шăнкрав йантрани.
ШавлаŤ те вĕркет мăн урам касси.
Кунта тĕрлĕ шав. Кĕрлет ђан сасси.

***

Шур Ђĕмпĕр хули... ђул çурт нумай
Йĕри тавраллах йăвăç хуралтсем.
Пӳрђсем ђăнкă та, ик-виç хутлăшар.
Вĕсен пысăк мар çут кантăк куççем
Ултавлăн йăлтраç хĕвел çуттинђе.
Кашни хуçаннах хапхи умĕнђе
ТăраŤ çакăнса алăк пек тур сăнђ.
Улт-çиђ кил сиксех—хупах, трактир...
Вĕсен ăшĕнђе çăрлаŤ хула тăнђ:
Йурлу, çуйхашу—хуŤ каç, хуŤ те ир...
Ак çакăн пек ђух, çапла тĕлĕшре
Пыраççĕ кĕрсе йутран Ђĕмпĕре:
Итрен, ват Текей, ун тарçи Илђуш.
Кусемшĕн—хула тĕлĕнђĕк, хăруш!

***

Ак Атăл хěрри...
Тÿлеккěн йарнан сарлака шыв çи
Ђěлтěрр ђěтренсе тěрлет çил тěрри,
Йе ђÿхет ăна кимěç кěреçи.
Çанталăк уйар. Хěвел пěçертет.
Çут шыв çуммипе çил вăшкани çех
Вěри сывлăша пăртак сěвěртет.
Хăватлă Атăл выртаĭ пěр пекех.
Ак пристăњ—çыран...
Ђăнкă хысаран
Анаĭ унта çул.
Сар тăм кăвак ђул—
Ку пристăњ çулне выртаĭ хупласа.
Сăртра хай Ђěмпěр лараĭ сарăлса.

***

Хула хушшипе ђылай йăпшăнсан,
Пěрре, каçпала, ěçрен пуш ђухне,
Итрен, ват Текей, Иљуш—виçěш тан
Анаççě утса çыран хěррине.
Çыран хěрринђе—шав, йăслав, сассем...
Унта пурлаксем, купса таврашсем,
Тавар турттаран лавпуç мушиксем;
Шыв тăрăх—кимсем, пěђěк паршăсем.
Унтах, ак, парша пушатнă çěртен
Хăр-хар! илтěнет асли хăтăрни.
Таçтан, анатран, çут кăнтăр йенђен
Йан-йан! çěкленет пурлаксен йурри.
Ак çак вăхăтрах икě пысăк ким
Анаççě туран хуллен йарăнса.

Кимсен ик йенпе вуншар çын—пĕр тим
Пыраççĕ харссăн шыва авăсса.
Ак çитрĕç хайхи кĕрнеклĕ кимсем.
Ђарнаççĕ вĕсем. Кимсем тĕпĕнђен
Тухаççĕ майпе купса-хуçасем.
Паллах, ку çынсем таçтан, инçетрен...
Вĕсем хушшинђех курнаŤ ак виç çын.
Кусем купса мар, темле пуçлăхсем.
Вĕсен çийĕнђе çиçет кĕмĕл ђын.
Ак анђĕç çӳлтен кӳмеллĕ лавсем.
Лартаççĕ вĕсем виç ђаплă çынна,
Улхаççĕ сăртри шавлак хулана.

***

Мăн Атăл тӳлек, тулли кăмăлпа
Хавас йышăнаŤ «йут» ђăвашсене;
Çыран тăрăхри хĕрӳллĕ шавпа
ТуртаŤ вĕсене калкал ытамне.
Çанталăк хĕртсе тăнине курах,
Итрен, ват Текей, Илђуш та çаплах
Тăхăннă сăкман, тăла йĕм, шлепкке;
Сăкман айĕнђе—шур, тĕрлĕ кипке.
Кашнин уринђех—çпата, пир тăла;
Ури сыррисем тури вирйалла.
Хула хушшинђи пулмас етемсем
Ђасах витлесе мăшкăл тунăран,
Ђăваш йалĕнђи куштан-пуйансем
Шăп çех, именсе утаççĕ аран.
Илђуш та çавах. Ниçта тухманскер,
ХăраŤ мулкађлах хула хушшинђе.

Лутра çын, ырхан, нађар тумлăскер,
Пыраť вăл йалан Текей хыçĕнђе...
Ак анђĕç вĕсем çыран хĕрнелле.
Хăйулăх çукпа тăраççĕ хытса
Купипе выртан шур ђул çумнелле:
Пăхаççĕ умри шава тăнласа.

***

Пур ђаплă çынсем куçа çинипе
Ђăваш мушиксем курман та малтан.
Ак, Атăл тăрăх çыран хĕррипе
Вĕçе-вĕç паршсем çитеç анатран.
Улт-çиђĕ парша... вĕсем туллирен,
Пурлак ушкăнсем тапсах туртнипе
Йухха хирĕçле шăваççĕ хуллен...
Унтах шыв ђăххи вĕçет кĕтўпе.
Пурлак ушкăнсем хулана кура,
Ђĕре хавалпе тăсаççĕ йурра.
Йантрак йур кĕвви тўрем шыв çипе
Вĕçет тăвалла, хĕрўллĕх хĕмпе.
Ак, тăђĕç çитсе малти парăшсем
Мĕн пур пек пурлак канмашкăн лараť.
Канаççĕ, унтах çийеççĕ вĕсем,—
Кашни çăкăрпа тип пулă ђăмлаť.
— Кайар-ха леррех, курар çавсене,
Пит хĕн пуђ пурнăç ку лаша-çынсен...
Ай-йай!—тет Текей çумри Итрене.
Утаççĕ вĕсем малла, йерипен.

***

Хĕвел хĕртнипе çуннă пурлаксем
Ђыкан пек хура. Вĕсен çийĕнђе—
Тумхахлă, хура, çĕтĕк кĕпесем;
Мелке пуçĕнђе—çӳçпе сухал çеç.
Çыран хĕррипе ерттелĕн ларса
Лĕп Атăл шывпе сыпса çинĕ май,
Ђĕр вăй пуррисем сăмах çаптарса
Пуплеççĕ, кулаç хавас-мĕн самай!
Унтах теприсем, вăй-хал пĕтнĕрен,
Хыт тăм çийĕнђе выртаççĕ шăпах.
Таварлă, тулли паршсем çийĕнђен
Асли кăшкăрни йантрать тăтăшах.
Итрен, ват Текей, Илђуш та пĕрле,
Сăнаççĕ тăрсах умра мĕн пурне.
Кунтах ак, пĕр çын, купса темелле,
Иртсе кайнă май витлет вĕсене...
Ак ку вăхăтрах, шыва пăлхатса,
Тăваттăмĕш парш çитет ак унта.
Ку парш та, çаплах, тăрать ђаранса.
Ăна туртансем тухаççĕ канма.
Парши тăрсанах, унтан ик çынна
Антарђĕç йăтса—хуђĕç çыр хĕрне.
— Сывмар çын çуртне, çӳле, хулана
Леçетĕр йăтса вара вĕсене...
Халђ канăр пăртак!— кăшкăрђĕ асли.
Мĕн пур пек пурлак шăп пулать пĕр си:
Ђарнать çуйхашу—ђĕр пурнăç палли.
Çут шыв тăрăх çеç шыв кайăк сасси.

***

Ђăваш мушиксен куç-пуç ђалхăраť.
Утаççĕ вĕсем паршсем патнерех.
Ак, хай сымарсем: пĕри ахлатаť;
Теприн—сасси çук. Анђах хăй ђĕрех.
— Ай-йай, мĕскĕнсем, вилеççĕ кусем!
Мĕскершĕн çапах пăхакан çын çук?!
Шăна вырăнђех-çке ку ђухăн етем...
Ĕçлен çав... мĕн тес?!—кулђанђĕ Илђуш.
— Нумай ес пĕлен!.. кам унта ахалђ?
Канма вăхăт çук... куран!.. тет Итрен.
Сăмах май ђĕтрет ун алса пек сухалђ.
Пĕр хыт тăм çинђех мĕнле вĕлерен?
Хăйсем те çара!—харкашрĕ Илђуш.
— Кунта килти мар,—тет Текей пўлсе.
Хирçўллĕ сăмах ђарнаť ак пĕр хуш.
Илђуш ăш-ђикки йўçет кўренсе.
Ак çак вăхăтрах пĕр паршă йенђен
Тумтир çĕклесе пыраť ват пурлак.
Илђушпа Итрен сăмах хушшиђен
Çитет вăл, кăнђ-канђ пăхкалаť пăртак.
Унтан вăл сымар йулташĕсене
Кăшт çĕкле-çĕкле сараť ашăксем;
Вĕсен çăмламас пуçĕсем айне
Пуçелĕк йатне хураť тумтирсем.
Ĕçне пĕтерсен, çак çын тўрленет.
Ђăваш мушиксем çине тĕллесе,
Пыр тĕппĕн ђăваш ђĕлхипе ђĕнет:
— Ђуаш булĕ-çке?.. Кăçтан-ха килсе?
Тĕлĕннĕ ђăваш мушиксем харсах:

— Ђăваш-çке, ђăваш... Йухма леш йенсем.
Ес те ђăваш-им?—терĕç йăлкăшсах.
— Çук, ебĕ туттар, Сўве панђисем.
Ак ку, вăт, ђуаш. Вилет ŷĕр, мур-и!
Кăтартрĕ тутар пĕр çынĕ çине.
— Ну!.. сирĕн хушра ђăваш та пур-и?—
Терĕç мушиксем ђĕрĕлнĕ йенне.
— Пулсађђĕ ик çын... ак вилет пĕри.
Калам-ха ăна... тăн пур ун пăртак...
Ав, леш вăт нађар; кун ўђĕ вĕри,—
Тет те пĕшкĕнет ват тутар пурлак.
— Иптеш!.. а, иптеш! Уç халĕ куçна..
Ав Йухма йенçи ђуашсем кунта.
Пăх-ха!—тет тутар шăп выртан çынна.
Ак, ђирлĕ старик хыткан вырăнта,
Аран çаврăнса выртаŷ месерле.
Имшер куççене тип алпа шăлса,
Пăхаŷ вăл шăп çеç çынсем çинелле.
Пĕр тапхăр пурте тăраççĕ хытса.
Ак ку вăхăтрах вĕсем тавраллах
Унтан та кунтан пурлак пуçтарнаŷ.
Çут Атăл тăрăх ум-хыçлăн каллах
Ик-виç тулли парш çитсе ђарăнаŷ.
Кăвак çўç-сухаллă сымар старик
Мĕшĕл хускалса, куççене уçаŷ.
— Ай, ай, ку шăм-шак... ах, хыпаŷ ăш-ђик!..
Аптул, парђђĕ шыв,—тет вăл, ахлатаŷ.
Шывне ĕçнĕ май илет ўсĕрсе.
— Ђăваш-и, есир?.. Ăçти ђăвашсем?..
Терĕ вăл Текей çине тĕллесе.

— Епир инçетри, Йухма леш йенсем.
— Йухма леш йенсем?!. Хумпуç панђи-и?
Кун пек ыйтупа хумханђĕ Текей.



Иптеш! А, итпеш. Уç халĕ куçна
Ав Йухма йенçи ђуашсем кунта.

Итрен те тĕлнет, тăраť сикленми.
— Мĕнле ку пĕлет Хумпуçне... еккей!
Хумпуç панђи çав. Кушлавăш уйсем.

Пĕлетн-и?—терĕ Текей ђĕтренсе.
«Кушлавăш» тесен, хай сымар етем
Хăрах аллипе витет куçсене.
Выртаť вăл пĕр си ăш-ђик хурланса.
Унтан, йерипен:—Текей мар-и ес?!.
Ма килтĕр кунта-а-а?—терĕ уçăлса.
— Текей-çке... епĕ... анђах кам-ха ес?!.
Аптрарĕ Текей, хытаť нимуйла.
Итрен ун хăлхи патне лăпђăнса:
— Ђакка мар-ши ку?.. Ђакка пулмалла.
Ех тур, тамаша!—тет пăшăлтатса.
Илђуш ăнланмасť, тăраť хысалта
Вилес пек старик темле хăватпа
Сикет те лараť:
— Текей!..
Ес—Текей!?.
Мĕнле ку, ара?..
Ес ма хулара?..

Т е к е й:

Текей çав... епех...
Арман ђулĕсем илесђĕ тесех
Килтĕмĕр кунта.
Ак Итрен, тата...

С т а р и к:

Итрен!? Çак хура сухал?..
Хăй ашшĕ пекех выç сăнлă... усал!

Т е к е й:

Ес кам-ши, капла?
Йепле ес паллан?

Старик:
Ђакка еп... çапла...
Леш, сирĕн тăшман.

Текейпе Итрен:
Ей, ну-у-у!.. Пурнатăн-çке ес!
Йалта вĕт вилнех шутлаççĕ сана...
Тахçан вăрçнине хаљ ма асилес?!.
Ман ес иртнине! Кўр, пар аллуна!

Ђакка:
Çук, алă памасп!..
Анђах та ыйтап:
Мĕнле пурнаť йал?..
Ах-х... вăйăм сахал...—
Каллех лап выртса ахлатрĕ старик.
Пăлханђĕ пулас ун ђирлĕ ăшђик.

***

Хускалђĕ Иљуш,—ыйтаť Текейрен:
— Атте-и ку ман?..—Açу çав!—тет леш.
Хăвăрт вăл тухаť çынсем хушшинђе.
— Атте!.. ей атте!.. телейлĕ тĕлеш...
Еп сан ывăлу—сан тăлăх Иљуш.
Ак çирĕм çултан курап сана тин!..
Анђах та пит шел... ес ђирлĕ... хăруш!—
Йанратрĕ Иљуш çăварĕ туллин,
Калађђĕ татах вăл, анђах ăш кўтсе
Ун пыр питĕрнет. Хумханнă Ђакка
Сасартăк каллех пуçлаť çĕкленме.
Анђах йăтаймасť хавшак шăм-шакка.
— Иљуш!.. Иљуш-и?! Ех мĕскĕн, ађам!..
Ăçта ес?.. мĕнле?..
Ах... çук... çук!.. тĕлĕк!.. Ђăн мар ес—такам!

Кай!.. Кай!.. Кай, ес лерелле..—
Кăшкăрҫĕ Ҫакка Илҫуша тĕксе.
Выртаĭ вăл ҫылай, ҫĕнмесĕр тĕнсе.
Йĕри тавралла тăран пурлаксем
Тĕпҫеҫҫĕ хĕрсех Текей—Итренрен.
Вырсла ни пĕли-пĕлми мушиксем
Калаҫҫĕ кĕтмен тамаша ҫинҫен.

***

Хĕвел аннă ҫух...
Ҫанталăк тӳлек.
Тăп Атăл ҫинҫе сас-ҫӳ тавраш ҫук.
Хула йенҫен ҫеҫ илтĕнет кĕрлек.
Сывмар выртакан ик-виҫ пурлака
Ăсатрĕҫ ĕнтĕ шав хула хыҫне.
Илҫуш ыйтнипе пĕр старик Ҫакка
Йулайнă выртса ҫыран хĕррине.
Канма ҫарнакан пурлак травашсем
Ҫыран хĕрринҫе курнаҫҫĕ сайра:
Ҫывраҫҫĕ хăш-пĕр ырса ҫитнисем,
Укҫа пуррисем—трактир-хупахра.
Ҫакка ҫумĕнҫе—Илҫуш, ик пурлак;
Кăштах айакра—Текейпе Итрен
Лараҫҫĕ тĕнсе. Ҫакки ак пăртак
Самай пек туйса, тĕпҫет йал ҫинҫен:
Ыйтаĭ вăл пĕлет йал-йыш мĕнлине,
Ыйтаĭ пурмис-пуп ҫаплах хĕснине;
Тĕпҫет Илҫушран—мĕнле ӳснине,
Пĕлет вăл Текей тарҫи иккенне...

Ђылай тёпђесен хашлатрĕ Ђакка.
— Ех, мĕскĕн, тет вăл,—ес тӳснĕ, ађам!..
Ирех сив тăмпа аманнă папкка,—
Çапах та ӳссе çын пултăн-мĕн, кам!..
Ађам... ху аçу вут ђунлă пирки
Ес тӳсрĕн çакна... анђах ан кӳрен:
Пăлхатрĕ мана тĕрĕслĕх çукки.
Çампах пĕтрĕм еп... ак ес те тӳсен...
Тĕнђи-çке усал...
Пуйан çынна çех
Ку Раççей калкал...
Саккуњ пĕтĕмпех
Хӳтлет пуйана...
Кун çук ђухăна!..

И љ у ш:

Çапла пуљ вăл... ну,
Мĕнле ес, атте, манайрăн мана?..
Çунмасђи ђуну?
Пĕрре хуй̆ пырса пăхас çĕршывна!

Ђ а к к а:

Манман та, ађам...
Сана вилђех пуљ тесеттĕм еп хам.
Йала пыма ман май çукђĕ, апла...
Пур пуçлăх уншăн çийет-çке йала!

И љ у ш:

Калађђĕ, атте, ес мĕнле майпа
Вырнаçнă килсе çак Атăл çине?
Шăлтах тĕлĕнеп: мĕнле хăватпа
Ђĕл пултăн ес хаљ ман куçăм умне?

Ђакка:
Кĕтмен вăхăтрах сана курнипе
Ăсран еп кайап...
Вилеп еп... анђах кун пек телейпе
Вилсен те хыпмасп...
Иљуш, ес пĕлсен, кайăн тĕлĕнсе:
Пурлак ерттелне килсе кĕриђђен
Ђылай çулсем еп çӳрерĕм çĕтсе.
Малтан, Хапăсри Паххом тусĕнђен
Йут паспăрт илсе,
Карăм Ђикмене...
Унтан сулăпа—Ђариђђăн йенне...
Ђариђђăн йенђен—Йаик улăхне...
Унтан, пĕр çултан, Аçтăрхан çĕрне...
Вара, Капкаспа Купаӊ тăрăхне.
Çӳрермĕр ђылай...
Анђах тавраллах
Хĕн-хурлăх пĕрмай.
Ырри çук ниçтах...
Ак халђ—пурлакра, шăп вунпилĕк çул...
Ман çывăх туссем ак Фиљккă, Аптул...
Çӳрерĕм çапла—
Ахвоӊккă йатпа...
Аптул:
Çӳренĕ нумай старикпе, ей-йей!..
Аван çынђђĕ ул Ахвуӊккă пиђей.
Ђариђђăнра еп паллашнă унпа.
Фиљккă Ђикмерех тусланнă пулас...
Пĕр тапхăр каллех сăмах ђарăнат.
Шăпланнă Ђакка аран çех сывлат.

Пĕр виç хăлаçра—Текейпе Итрен,
Темскер çинђен тек мăркаççĕ хуллен.

***

Ђылай вăхăтран Ђакка ак ђĕнет.
Сасси ун аран, имшер илтĕнет:
— Илђушкă—ађам,
Вилеп пуљ ђасах...
Ес ан куљансам:
Капла курнăçни пит ырă çавах.
Анђах та итле:
Йалта ес çунан упа йĕннинђе...
Хура сĕлĕхсен хыт ытамĕнђе
Писен писмелле...
Ан кай кайалла,
Ађам, вăл йала...
Аптул, ак Фиљккă... нумай ман туссем,
Вĕсем пĕтĕмпех аван пурлаксем,—
Пăрахмĕç сана:
Илĕç ушкăна...
Пурлак пурнăç те, ђăн та, çăмăл мар,
Анђах çăмăлне ăçта хаљ тупар?!
Çапах та Атăл уçă вăл—тĕнђе!..
Сан пек етемсем пинпех ун çинђе.
Вĕсен хушшинђе ђунна йăпатан:
Пĕрле канашлан... пĕрле халаплан...
Хĕлле хулара вырнаçăн пĕр-пĕр.
Йална та кайăн... сан пур-ха ĕмĕр...

А п т у л:

Калап ерттеле:
Ахвоњккă ађи тесе илмелле...

Илҫуш:
Атте, еп хавас...
Анҫах ман сана мĕнле хăварас?
Ҫакка:
Ку паршă кунтан тухса кайиҫҫен,
Аҫам еп вилеп... йулан ес пĕҫҫен...
Илҫуш:
Ҫăваш-ҫке-ха еп,
Кулаççĕ пуҫ, теп...
Аптул:
Пурлак хушшинҫе ун пек măшкăл çук:
Ҫăваш-и, вырăс-и,—пурин те пĕр ҫун...
Текей: (çывхарса)...
Ҫакка... пуплесшĕн епир.
Пăрах кĕвĕçме. Хайарлăхна сир!..
Ҫакка:
Ан кил!.. Ан çывхар!
Ман ҫун тухас ҫух ес кунта ан лар!..
Аптранă Текей шарт! çапаť алла. .
Итрен патнелле ҫакаť кайалла.
Каллех ак шăпăрт.
Вăхăтран вăхăт
Ҫакка çех вăрах ҫăсса ăнтрашаť.
Йĕри таврана шĕв тĕттĕм хуплаť.

***

Ирпе...
Хайар çиллĕ кун.
Çанталăк йĕпе.
Шавлаť аслă Атăл, ташлаť çийĕ ун.

Çил май, кăнтăртан, хула çыранне
Хум хыççăн хумсем çупаççĕ пырса.
Тĕнђе тӳпипе таçта, сив йенне,
Хура пĕлĕтсем иртеççĕ шуса.
Ак çак сехетре,
Хула çумĕнђи çăва хĕринђе,
Тӳрем çеремре
Тăрат̆ ак Илђуш. Илђуш умĕнђе
Ун ашшĕ тăпри—виле тĕмески.
Ăна ĕнер çех пытарнă кунта.
Пытарнă ăна пурлаксен пулкки.
Илђуш ирпе ир çитнĕ çакăнта.
Çитсен вăл тӳрех хăй ашшĕ çинђен
Кăклат̆ те перет ђăрăш хĕресе.
Тупат̆ ак мăн ђул хыса хĕрринђен,
Хурат̆ çак ђула хĕрес вырăнне.
Анђах хай Илђуш ларсађђĕ канма
Тĕме çумĕнђи çеремлĕх çине.
Йӳçсе килекен ђунне хытарма
Пăхат̆ вăл шавлан Атăл ташшине.
Унђђен те пулмаст̆, ђăнкă çыранран
Улхат̆ ун патне ĕшеннĕ Аптул:
— Мĕскер ес, шăллăм?.. кайаççĕ—йулан...
Пырантăк—ђасрах, йулантăк—сывпул!..

И л ђ у ш:

Хавас еп пыма...
Анђах та мĕнма
Сирĕн парш хуçи—
Нађар ес, терĕ,—тиркерĕ мана...

Аптул:
Ес пурте саван Ахвуӈккӑ аӆи...
Хуҫа мар, ерттел йышӑнаӑ сана...
Пырантӑк—ӆасрах...
Кайаҫҫӗ веҫ... ах!..

Тӑмарӗ Аптул текех калаҫса:
— Сывпул! тет те вӑл, сулаӑ аллипе,
Шырлак хысаран анаӑ варкӑшса.
Ӆупаӑ хускалан паршӑсем йенне.

Ӑш вӗҫнӗ Илӆуш тӑраӑ ҫӗкленсе.
Ӆи ӆӑнкӑ хыса хӗррине тӑрса
Пӑхаӑ вӑл хумсем ҫине тинкерсе.
Ытамсӑр Атӑл выртаӑ шавласа.
Кураӑ ак Илӆуш: пӗр ҫухрӑм тура,
Улт-ҫиӆӗ парш харсах вӗҫе-вӗҫ, ум-ҫум
Хускалӆӗҫ хуллен... йӑслав, сас-хура!..
Кашлаӑ хайар ҫил. Шавлаӑ, сикет хум.
Шӑваҫҫӗ паршсем Хусан йеннелле.
Кашни парш умпе пӗр ушкӑн пурлак,
Малла ӳпӗнсе мӗнпур вӑйпеле
Туртаӑ каната. Мӑн Атӑл шавлак.
Ҫыран хӗррин ӆе етем йӑслани,
Мӑн Атӑл хумсем сиксе шавлани
Ҫилпе варӑшса пулаҫҫӗ пӗр сас;
Йанраӑ вӑл хӑватлӑн, ирӗклӗн, хавас.
Йӑпан ӆӗ Илӆуш ҫак ирӗк саспа.
Ашшин сӑмахне илет вӑл аса:
Ҫут Атӑл—тӗнӆе... йепле вӑл хапа!
Мӗнма ҫӳрес мар ун тӑрӑх курса?
Йала таврӑнсан—каллех халӆӆенхи:

Куштан-пуйана пуççап та, тек пиç!
Атте калашле: йал—упа йĕнни...
Текей пусмăрне—ан шутла, ан виç!
Вăрман тĕпĕнҫе хĕн-хур тӳсиҫҫен,
Тухам тĕнҫене—çӳрем çаврăнса,—
Шутларĕ Илҫуш, сикет ту çинҫен.
Ҫупаҭ вăл паршсем хыççăн ыткăнса.

***

Хула çум шăпах. Ҫакка тăпри,
Хĕрессĕр тăпра йулаҭ хуралса.
Таçта, айакра кĕрлет аслати.
Патрах Мăн Атăл вырта҃ шавласа.

# ТУПМАЛЛИ.


*стр.*

Автăртан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
I. Кантур—ђунилли . . . . . . . . . . . 5
II. Куланайшăн . . . . . . . . . . . . . . . 10
III. Йунлă мунђа хыççăн . . . . . . . . . . 20
IV. Пĕрре çурхи каç . . . . . . . . . . . 30
V. Пăкађав мĕлки—Паххомккă . . . . . . 36
VI. Çапăçу . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
VII. Тĕшмĕшлĕх . . . . . . . . . . . . . . 53
VIII. Икĕ йунав хушшинђе . . . . . . . . . 58
IX. Алапит ĕçки . . . . . . . . . . . . . . 62
X. Пуппа теђук . . . . . . . . . . . . . . 72
XI. Турă йађĕпе . . . . . . . . . . . . . . 76
XII. Пуçлăхсем пăваççĕ . . . . . . . . . . 84
XIII. Шăннă вăрман хӳттинђе . . . . . . . 93
XIV. Хайар тавăру . . . . . . . . . . . . 98
XV. Пăлхавлă пуху . . . . . . . . . . . . 108
XVI. Çĕрпӳрт кассинђе . . . . . . . . . . 121
XVII. Хуптĕрлӳ . . . . . . . . . . . . . . 130
XVIiI. Ђакка—тыткăнра . . . . . . . . . . 139
XIX. Кил-йышне çăлма . . . . . . . . . . 146
XX. Ăнăçсăр хăтару . . . . . . . . . . . 153
XXI. Инкек çине синкек . . . . . . . . . . 162
XXII. Улпут хресђенĕсем патĕнђе . . . . . 171
XXIII. Салтаксен тискерлĕхĕ . . . . . . . 179
XXIV. Ђакка—йал-йыш сутĕнђе . . . . . . 187
XXV. Çирĕм çултан . . . . . . . . . . . . 200

## СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

**Е. Бывалов**

ПОТЁМКЁН ÇИНЂЕ

45 пус. 72 стр.

**Вл. Маяковский**

ЛЕНИН

60 пус. 107 стр.

**К. Иванов**

НАРСПИ

50 пус. 134 стр.

**Шăпђăк Ç.**

КУЛĂШ КУСТĂРМИ

25 пус. 48 стр.

**Йалавин Ç.**

ТАРĂН ЙĂРАН

30 пус. 48 стр.

1) Москва, центр, Никольская 10. Сектор книгораспространения Центриздата.

2) Самара, Ленинградская 36/38 Ср. Волж. отд. Центриздата.

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

Йăван Муђи.
КОЛХОС ÇУЛНЕ ТУХНĂ ЂУХ
15 пус. 40 стр.

Йалавии Ç.
ИССАЙĔВ МĔТРИ
25 пус. 32 стр.

А. Нухрат
ÇЕÇЕНХИР КАЛАВĔ
35 пус. 96 стр.

Хусанкай П.
СĂВĂСЕМПЕ ПОЕМĂСЕМ
(пиђетленсе тухаť)

Вл. Маяковский
ПĔТĔМ САСĂПА
(пиђетленсе тухаť)

1) Москва, центр, Никольская 10. Сектор книгораспростране-ния Центриздата.
2) Самара, Ленинградская 36/38 Ср. Волж. отд. Центриздат